3605
44-35

А. С. ОТАЧКИН

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

## II ПАЙĔ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар • 1944

А. С. ОТАЧКИН

# ТĂВАН ЧĔЛХЕПЕ ВУЛАМАЛЛИ КĔНЕКЕ

*II пайĕ*

***ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН ИККĔМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ***

*Чăваш АССР Çутĕç халăх комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

ТĂВАТТĂМĔШ ИЗДАНИ

№ 3605

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР • 1944

[illegible] 3902.



## Çуллахи ир.

Хĕрлĕ шурăмпуçĕ
витрĕ пĕлĕте.
Авваскать кĕтӳçĕ
ĕнисем патне.
  Пулăçсем пыраççĕ
  лăпкă шыв хĕрне.

  Вăлтасем яраççĕ
  авăр тĕпнелле.
Халăх хире тухнă,
ĕçлеме васкать.
Ак хĕвел те тухрĕ,
савăнать, кулать.

*Йăлт пăхрăм та юман хыçне пытантăм.*

## Аслатиллĕ çумăр.

Пĕчĕк чухне эпĕ пĕрре вăрмана кăмпа татма кайрăм. Кунтăка кăмпа татса тултартăм та киле таврăнас тесе тăратăп. Сасартăк çанталăк тĕттĕмленсе килчĕ. Çумăр çăва пуçларĕ, аслати авăтма тытăнчĕ. Хăлтăр-халтăр! тăвать.

Эпĕ хăранипе пĕр пысăк юман айне кĕрсе лартăм. Унччен те пулмарĕ, çиçĕм йăлтăр-ялтăр çиççе ячĕ. Чăтаймасăр эпĕ куçа хупса хутăм, ман пуç тăрринче çӳлте темскер шăтăр-шатăр-р! тутарчĕ. Унтан пуçран темскер пырса çапрĕ. Эпĕ ăнсăр пулса ӳкрĕм. Çапла эпĕ сумăр чарăничченех выртнă.

Эпĕ тăна кĕнĕ çĕре йывăççем çинчен шыв тумласа тăрать. Кайăксем юрлаççĕ, хĕвел пăхать.

Ман çумри пысăк юман хуçăлса аннă та тĕтĕм кăларса выртать. Ман тавра юман хăйпăкĕсем выртаççĕ. Хам пĕтĕмпех йĕпенсе пĕтнĕ, тумтир ӳт çумне çыпçăнса ларнă. Пуç пĕр тĕлтен хăпарса тухнă та ыратать. Картуса шыраса тупрăм та, кăмпа кунтăкне илсе, килелле чупсах кайрăм.

Килте никам та çук. Тип çăкăр çикелерĕм те кăмака çине хăпарса выртрăм.

Эпĕ вăраннă çĕре кăмпана ăшаланă, çиме хатĕрленеççĕ. Кăмака çинченех кăшкăртăм: «Мĕншĕн эсир мансăр пуçнех çиетĕр!»—терĕм. Килтисем мана çиме чĕнеççĕ: «Мĕншĕн çывăратăн, кăмпа çиме хăвăртрах кил!»—теççĕ.

**Туппине пĕл.**

*Пĕчĕкскер, хитрескер,*
*çĕр мăкăртса тухнăскер,*
*пурçăн тутăр çыхнăскер.*

## Çумăр хыççăн.

Акă тăвăл чарăнать,
аслати те йăвашрах.
Вăйлă çумăр тек çумасть,
уя тухас хăвăртрах.
Ытла аван, пит тӳлек
çумăр хыççăн пусăра.
Хаяр тăвăл пулман пек,
аслати те аякра...

Пĕлĕт хĕрри сутăлать,
сывлăш уççăн туйăнать.
Пăх, асамат кĕперри—
мĕн пур ун пек чиперри?
Вĕл-вĕл вĕçсе çил килет,
кайăк юрри илтĕнет.
Ыраш пусси хумханать,
çак çумăршăн савăнать.

# Пулăшакансем.

Пионерсем вăрманта, пĕр шыв хĕрринче, лагерьте пурăннă. Колхозниксем лагерь çывăхне утă пуçтарма пынă.

Çумăр килет. Колхозниксем çумăр килсе çитиччен утта пухса пĕтерме васкаççĕ. Анчах çумăрĕ те васкать. Аслати сасси те илтĕнме пуçларĕ.

Кĕç рожок сасси илтĕнсе кайрĕ. Ачасем пĕр самантра пĕр çĕре пухăнчĕç.

— Çумăр килет. Çумăрччен колхоза утă пуçтарса пĕтерме пулăшар,—терĕ вожатый.

Пурте хавас пулчĕç. Васкаса колхозниксем патнелле чупрĕç.

— Сире утă пуçтарма пулăшас тетпĕр. Йышăнатăр-и пире?—тесе ыйтать вожатый.

— Килĕрех, килĕрех, маттурсем. Кĕреплесем тытăр,—тет колхоз бригадирĕ.

Нумай калаçса тăмасăр, ачасем кĕреплесем тытса утă пуçтарма пуçларĕç. Утта пуçтарса пĕчĕк купасем туса хураççĕ.

Колхозниксем, пĕчĕк купасене носилкăпа йăтса, пысăк купасем туса, таптаса купалаççĕ. Пĕр самантра утта пуçтарса пĕтерчĕç.

Халь ĕнтĕ çумăр хăрушă мар. Вăл капанри утта йĕпетеймест, çиелтине анчах йĕпетме пултарать.

Колхозниксем ачасене мухтарĕç, тавтурĕç. Каç пуласпа, ĕнесене сусан, вĕсене ăшă сĕт çиме илсе кайрĕç.

---

Пионерсем ăçта пурăннă?

Колхозниксем лагерь çывăхĕнче мĕн ĕçленĕ?

Лагерьти ачасем колхозниксене мĕн ĕç тума пулăшнă?



## Утă çинче.

Хĕвел тухать хĕрелсе,—
уяр куна палăртать.
Шыв хыçĕнчи вĕтлĕхре
путенийĕ авăтать.

Çырма тăрăх тăршшипех
шурă тĕтре пăсланать.
Колхоз тухнă ушкăнпех —
утă çулма тытăнать.

Çавасене туптаса,
çитрĕç çынсем улăха.
Кăшшин-кашшин хăйраса,
çулаç симĕс курăка.

Хĕрлĕ питлĕ хĕрĕсем
типнĕ утта тураççĕ.
Çине-çине купасем
хыçра ларса пыраççĕ.

## Çулла.

Симĕслен-ха, симĕслен-ха,
манăн ешĕл аслă сад.
Çеçкеленĕр, чечекленĕр,
манăн хĕрлĕ чечексем.

Пиçсе çитĕр, пиçсе çитĕр
эсир, тутлă çырласем.
Ман пата васкаççĕ халĕ
манăн хаклă хăнасем.

Сад пахчи вĕсемшĕн пулĕ:
вĕсем татĕç çырлине,
пухĕç ырă чечекне,
çыхĕç чаплă кăшăлне.

*Ĕçрен ан хăра, вăл хăй
санран хăратăр.*

## Çĕлен.

Пирĕн аттепе пичче утă çулма кайрĕç. Вĕсемпе пĕрле улăха эпĕ те кайрăм. Утă çулакансем çаран тăрăх çулса аяккалла инçе кайрĕç. Эпĕ йытăпа выляса юлтăм. Йытăпа пĕрле халь тин çулса пăрахнă курăк çинче йăваланатпăр. Сасартăк ман алла темĕн сивĕскер перĕнчĕ. Эпĕ шартах сикрĕм. Пĕр пысăк çĕлен курăк айĕнчен тухрĕ те ман паталла шуса пыра пуçларĕ. Хăранипе эпĕ хытса кайрăм. Кăшкăрса та сас тухмасть.

Çав вăхăтра йытă çĕлен çине сиксе ўкрĕ те ăна тулама пуçларĕ. Пĕр самантра çĕлене татăк-татăк туса хучĕ.

Эпĕ те, кăшт сывлăш çавăрса илсен, кăшкăрма тытăнтăм. Утă çулакансем чупса пырса çĕлен татăкĕсене çапа-çапа лапчăтрĕç. Йытă таçта чупса кайрĕ те сухалчĕ. Киле вăл икĕ эрне иртсен тин таврăнчĕ. Çĕлен сăхнисем тўрленнĕ.

## Эпĕ вăрманта аташса çўрени.

Пĕрре, хурăн çырли пиçнĕ вăхăтра, юлташсем ман пата кĕшĕлтетсе пычĕç те мана çырлана чĕнеççĕ. Эпĕ аннерен: „Çырлана каям-и, анне?“ —тесе ыйтрăм. Анне: „Ачам, вĕсем сана пăрахса хăварĕç“,—тет. Эпĕ калатăп: „Анне, эпĕ вĕсенчен пĕр утăм та юлмăп,—тетĕп. Анне мана: „Кайса ыванса çўрех эппин“,—терĕ. Хĕпĕртенипе хăвăртрах тумлантăм та юлташсемпе вăрмана тухса кайрăм.

Вăрман хĕррине çитсен, пĕр çĕре пухăнтăмăр та: „Пурте ретĕн татса кайăпăр“,—тесе канашларăмăр. Вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Çырла татнă хушăра эпĕ асăрхаман та, юлташсенчен уйăрăлса кайса, пĕр пĕчĕк уçланка пырса тухнă. Çырла нумай, вĕçĕ-хĕрри çук. Темĕн тĕрлĕ хĕпĕртенипе, хăвăртрах татма пуçларăм. Çырла нумайран алăсем те çыхланаççĕ: нихăшне татма пĕлместĕп: Çырлисем: „Мана тат, мана тат!“—

тенĕ пекех туйăнать. Нумай пулчĕ-и, сахал пулчĕ-и юлташсен сассисем мана илтĕнми пулчĕç.

Манăн пурак тулма пуçларĕ те эпĕ юлташсене кăшкăрма тытăнтăм. Кăшкăртăм, кăшкăртăм, хирĕç никам та чĕнмест, пĕр вăрман янăраса кайни анчах илтĕнет. Нумайччен кăшкăрсан, малалла утрăм. Утрăм, утрăм, уя тухаймарăм, шалтах ывăнтăм. Ывăннă пулсан та ларма çук; майĕпе те пулин утатăп. „Кашкăр таврашне тĕл пулас марччĕ",—тесе хăраса пыратăп хам. Çапла пĕр уçланка пырса тухрăм.

Уçланкăпа нумай та каяймарăм, мана хирĕç пĕр çын мăк урапипе пырать.

Эпĕ унтан, йĕре-йĕре: „Хыркассине мĕнле каймалла-ши?"—тесе ыйтрăм.—„Эпĕ Хыркасси витĕрех тухса каятăп. Лар, лартса каям",—терĕ вăл мана. Эпĕ ун урапи çине улăхса лартăм та яла çитиччен ларса пытăм.

Киле çитнĕ çĕре çĕрле пулчĕ. Эпĕ пынă çĕре атте мана шырама тухса кайнă. Анне маншăн шалтах хуйăха ÿкнĕ. Эпĕ пÿрте кĕрсенех, вăл, савăннипе, мана ыталаса илчĕ.

Çавăнтан кайран эпĕ вăрмана кайсан юлташсенчен юлми пултăм.

---

Ачасем ăçта кайнă? Пĕр ача юлташĕсенчен епле уйăрăлса юлнă? Вăл килне епле çитнĕ?

**Туппине пĕл.**

*Пăхма хитре, çиме йÿçĕ.*

## Уçă сывлăш, шыв, хĕвел.

Пăчăхса пÿртре лармастпăр
ĕçрен каннă вăхăтра.
Кулленех хĕрсе вылятпăр
таса, уçă сывлăшра.

Çу кунĕнче юрататпăр
хăйăр çинче вылямa.
Ир те, каç та кĕç чупатпăр
шыва кĕрсе çăвăнма.

Сывлăха куллен сыхлатпăр,
физкультура тăватпăр тек.
Çавăнпа ӳсетпĕр паттăр,
сывлăх çирĕп—хурçă пек.

Чирсем пире хăратмаççĕ,
таса тытар ӳт-пĕве.
Пирĕн сывлăха сыхлаççĕ
уçă сывлăш, шыв, хĕвел.

## Авăн уйăхĕ.

Пӳрт хыçĕнче, ăшăра
аçа кушак мăрлатать.
Çӳлте курак ушкăнра
кăраклатса çуйăхать.

Чĕвĕл-чĕвĕл çерçисем
хӳме çине сăрăннă.
Унта-кунта эрешмен
карта тытса çавăрнă.

Авăн çапать машини,
мăн йĕтеме кисретет.
Хурçă трактор кĕрлени
аякранах илтĕнет.

Хĕвел çути йăвашрах,—
çуллахи пек ăшăтмасть.
Вăрманĕ те, ав, шăпах,
кайăк сасси янрамасть.

## Пирĕн çимĕç пахчи.

Çимĕç пахчи пире çăвĕпех тăрантарчĕ. Тата çимĕç пахчинченех хĕлле валли те тĕрлĕ çимĕçсем пухса кĕтĕмĕр. Малтанах эпир, симĕс сухан çулçисене кăваспа, уйранпа çиме пуçларăмăр. Унтан хăяр ӳссе çитрĕ. Хăяра тăварласа, тураса çиме тапратрăмăр. Хăяр яшка çинче те лайăх.

Кĕç çĕрулми те ӳссе çитрĕ. Çĕнĕ улма çиме тытăнтăмăр. Помидор та нумай кĕттермерĕ. Пĕрин хыççăн тепри хĕрелсе пиçе пуçларĕç помидорсем.

Çарăк та, кишĕр те ӳссе çитрĕ.

Кĕркунне çимĕçсене пахчаран пуçтарса кĕтĕмĕр. Хăшне-пĕрне тăварласа хутăмăр. Хăшне чĕрĕллех нӳхрепе, сакайне антарса хутăмăр. Çĕрулмине тата пусă чавса хыврăмăр. Халь ĕнтĕ хĕлле пĕрре те аптăрамастпăр. Тĕрлĕ çимĕçсем нумай. Çисе те ярас çук.

### Туппине пĕл.

*Кĕме-тухма шăтăк çук,*
*пӳртĕнче пин çын пурăнать.*

## Çĕрулми.

Халь эпир çĕрулмие пурте çиетпĕр. Анчах пĕр 300 çул ĕлĕкрех çĕрулми çинчен пирĕн çĕршывра никам та пĕлмен.

Малтанах пĕр помещик çĕрулми вăрлăхне ют çĕршывран кӳнĕ те пахчине лартнă. Çĕрулми çеçки ӳссе шап-шурă чечеке ларнă. Хайхи помещик чечексем нумаййине курать, улма нумай пуласса кĕтет.

„Чечексем шансан, вĕсем вырăнне çеçке тăрринче улмасем чăмăртанĕç“,—тесе шухăшланă вăл.

Хайхи, чăнах та, чечексем вырăнне çеçкесем çинче măйăр пысăкĕш симĕс чăмăр çимĕçсем пула-пула ларнă. Помещик пĕр çĕрулмине тутанса пăхать те: „Пиçеймен-ха“,—тет.

Унтан шухăшласа илет те çав улмасене çупа ăшалама хушать. Хăнасем чĕнет, ют çĕршывран кӳнĕ çимĕçе çитерсе пăхтарасшăн вăл.

Хăнисем пĕрер çимĕçне хыпаççĕ те ниепле те çăтса ярайманççĕ. Çимĕçĕ ытла та йӳçĕ пулнă.

Хайхи помещике намăс пек туйăннă. Вăл çиленнĕ те пахчаран çĕрулмине кăкласа ывăтма хушнă.

Гарçи улма çеçкисене кăкласа вутта пăрахнă. Пăхать—тымарсем çинче чăмăр çимĕçсем пур. Вара вăл пĕр çимĕçне вутран кăларнă та тутанса пăхнă. Çимĕçĕ тутлă пулнă. Ăна вăлваскасах хуçине кайса панă. Хуçи тутанса пăхнă та хăйĕн йăнăшне тин туйса илнĕ.

Халь çĕрулмине пур çĕрте те лартса тăваççĕ. Анчах никам та улма тăррине çимест. Пурте тăпра ăшĕнче ӳсекен çĕрулмине çиеççĕ.

## Çĕрулми çăнăхĕ.

(Сăнав)

Пысăк çĕрулми ил те хуппине шурат. Вара ăна çĕрулми хырмалли шăтăклă тимĕр (тёрка) çумне сăтăрса вĕтет. Унтан çапла вĕтетнĕ улма çине шыв ярса ларт. Пăртак тăратсан, улмине лайăх пăтрат. Вара, улма çăрине аллуна илсе, чăмăртаса аяккалла хур. Шывне тăрăлтар. Шывĕ тăрăлсан, шывне тăк та савăт тĕпне пăх. Унта çĕрулми çăнăхĕ пулса тăнă. Çав çăнăха типĕтсен, унтан кĕсел те пĕçерме пулать, çилĕм те тума пулать.

## Çулçăсем, чечексем тата çимĕçсем.

Пахчара вата улмуççи ӳсет. Çуркунне улмуççи папакĕсем çурăлчĕç те, симĕс çулçăсем сарăлма пуçларĕç. Çулçисем хăйсен тĕсне пăхса савăнаççĕ. „Эпир пĕтĕм йывăçа илем кӳретпĕр“,—теççĕ.

Улмуççи илтрĕ те кăмăллăн çеç: „Пурăнса пăхар-ха, курăпăр“,—терĕ.

Кăшт тăрсан, улмуççи шап-шурă чечеке ларчĕ.

Чечекӗсем тӗсне пахса саванаҫҫӗ. „Эпир пӗтӗм йывӑҫа илем кӳрсе ларатпӑр",—теҫҫӗ.

Улмуҫҫи кӑшт кулса илчӗ те каллех: „Пурӑнса пӑхар-ха, курӑпӑр",—терӗ.

Пӗчӗккӗнех чечексем шанса ларчӗҫ. Тӑкӑнса пӗтрӗҫ. Вӗсем вырӑнне илемсӗр симӗс улмасем чӑмӑртанчӗҫ. Кӗркунне енне улмасем пысӑкланчӗҫ, хӗрелчӗҫ. Ҫынсем улмуҫҫи ҫине пӑхса савӑнаҫҫӗ. Улмуҫҫи, савӑннипе: „Акӑ ман илем, мана пиҫсе ҫитнӗ улмасем илемлетеҫҫӗ, пӗтӗм йывӑҫа илем кӳреҫҫӗ"—тет.

## Отряд уй-хирте.

Ак умра ларать пӗр ял,
чухӑн ялччӗ вӑл авал.
Халь колхоз ӗҫлет унта,
ҫамрӑксем ялан малта.
Комсомолец, пионер—
мӗнпур ҫамрӑкшӑн пример.
Ҫичӗ ушкӑн ҫич тӗлте
ӑмӑртса ҫыхаҫ кӗлте
хурҫӑ жнейка хыҫӗнчен.
Кашниех ӗҫре ӗҫчен.
Комсомолец, пионер—
мӗнпур ҫамрӑкшӑн пример.
Сулхӑн каҫ ҫывхарнӑ май,
ҫӗмел ларчӗ пит нумай.
— Ӗнтӗ айтӑр килелле,
апата халь ҫитмелле.
Пӗтӗм ҫамрӑк хаваспа
килелле утать каҫпа.
Ҫакӑнта вырнаҫнӑ ял,
чухӑн ялччӗ вӑл авал.
Халь колхоз ӗҫлет унта,
ҫамрӑксем ялан малта.

## Пучах пухни.

Паян эпир ир-ирех
ӗҫе тухнӑ.
Пӗр йӑрансӑр уй-хире
вӑя пухнӑ.
Эй, юлташӑм, тух та кур:
епле эпӗр
ӗҫре вӑйлӑн та сатур
кӗрешетпӗр.
— Айтӑр, айтӑр ӑмӑртар,—
кам-ха паттӑр?
— Пултарулӑх хамӑрта,—
ӑмӑртатпӑр.
Тыр пучахне ӑмӑртса
пуҫтаратпӑр.
Кунтӑксене тултарса
пушататпӑр.

*Вӗлле хурчӗ пӗчченех нумай пыл тӑваймӗ.*

# Мичурин пахчинче.

Мичурин питĕ чаплă, питĕ паллă учёный-пахчаç пулнă. Вăл хăйĕн темĕн пысăкăш садĕнче тĕрлĕрен çырла-çимĕç йывăççисем лартса ӳстернĕ. Вăл йывăççем çинче темĕнле çырласем те, тĕрлĕ çимĕçсем те çитĕнеççĕ.



Акă „Бельфлер китайка“ ятлă улма йывăççи улми 340 грамм таран туртать. Çутăрах ылттăн тĕслĕ, вырăнăн-вырăнăн йăм-хĕрлĕ. Кăшт çеç йӳçекрех, çиме пит усă.

Мичурин пахчинче „Техас“ ятлă хăмла çырли пур. Вăл питĕ тутлă, шултăра. „Техас“ хăмла çырли 10 грамм таран туртать. „Техас“ çырли пит ăнса пулать. Пĕр тĕмрен 7 килограмм таран çырла пухса илме пулать.

Мичурин пахчине кĕрсен, эсир таса, шултăра çырласене, çимĕçсене курса, тĕлĕнсе хытсах каятăр. Ун пахчинче 12 грамм туртакан вишня çырлисем пур. Ăшă çĕршывсенче анчах ӳсекен çимĕçсене те вăл сивве хăнăхтарнă. Ун пахчинче иçĕм çырли те ӳсет. Мичурин пурăннă вырăнта вăрăм та хаяр хĕл пулать. Çуркунне июнь уйăхĕччченех ир-ир тăм ӳкет. Çапах та Мичурин 20 тĕслĕ ытла иçĕм çырли çитĕнтернĕ.



Мичурин 60 çул хушшинче 200 тĕслĕ ытла тĕрлĕрен çырла-çимĕç йывăççисем çитĕнтернĕ. Вăл йывăççене тепĕр йышши йывăçпа сыпса тата ытти тĕрлĕ майсемпе çимĕçсен сортне лайăхлатса пынă. Ăшă енче ӳсекен çимĕçсене сивĕ çанталăка та хăнăхтарнă. Мичурин хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрне тутлă

çимĕç паракан тата чăтăмлă çĕнĕ сортсем тăвас ĕçре ирттернĕ.

Партипе Совет правительстви, Мичурин ĕçне пысăк хака хурса, Мичурина вăл 80 çул тултарнă ятпа Ленин орденĕ парса парнеленĕ. Сталин юлташ ăна 80 çул тултарнă ятпа салам янă. Мичурин 1935-мĕш çулта вилнĕ.

Колхозсемпе совхозсем Мичурин ĕçĕсемпе паллашаççĕ. Садсенче Мичурин пек ĕçлеме вĕренсе пыраççĕ.

## Пахча тусĕсемпе тăшманĕсем.

Пахча çимĕçĕсен те, садри йывăççен те тăшманĕсем нумай. Акă кишĕрсемпе юнашар йăран çине мăян шăтса тухнă. Малтанах ăна кишĕртен уйăрса палласа илме те хĕн. Çарăк йăранĕ çине антраçарăк, мăян, пиçен, хурхух шăтса лараççĕ. Вĕсем хăйсен сарлака çулçисемпе акнă çимĕçсене хупласа хĕвелтен пытарасшăн. Ку çумкурăксем пахча çимĕçĕсем çиес апата çисе тăраççĕ, çимĕçсене ӳсме чараççĕ. Хăйсем тата тӳсĕмлĕ: сивĕрен те, шăрăхран та хăрамаççĕ. Çынсем вĕсене кăкласа çумласа тăмасан, çумкурăксем çимĕçсене йăлтах пусмăрласа çитерне пулĕччĕç. Çынсем вĕсене, шăтса тухсанах, тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа пăрахаççĕ.

Анчах çимĕçсен тата урăх тăшмансем те пур. Вĕсем — хурт-кăпшанкăсем. Акă купăста лĕпĕшĕ çамрăк купăста çулçисем çине çăмарта туса хăварнă. Çăмартисенчен хуртсем тухаççĕ. Хуртсем купăста çулçисене çиеççĕ. Вăхăтра сисмесен, вĕсем купăстана пĕтĕмпех пĕтерме пултараççĕ. Çынсем ку хуртсене тытса вĕлереççĕ, эмел сапса пĕтереççĕ.

Садри йывăççен те тăшманĕсем темĕн чухлех. Ав илемлĕ ӳссе ларакан панулмисене хурт çиет, шăтарса пăсать. Улма хурчĕ те лĕпĕшренех пулать. Лĕпĕш çăмарта хурса хăварать те çăмартинчен хурт пулать.

Кĕркунне хурт-кăпшанкăсемпе лĕпĕшсем çăмарта туса хăвараççĕ. Çав çăмартасене вĕсем хӳтĕ вырăна тăваççĕ. Купăста тунисен айне, тымарĕсем хушшине, улмуççисен çулçисем ăшне, картасем çине хурса хăва-

раççĕ. Çавăнпа та, вĕсене пĕтерес тесен, купăста тĕпĕсене йăран çине хĕл каçма хăварас пулмасть. Çуркунне пулсанах, улмуççисене пăхса тухса, унти хурт йăвисене пуçтарса çунтармалла. Йывăççене эмел шывĕпе сирпĕтмелле.

Пахча çимĕççемпе садри йывăççен тусĕсем те пур. Вĕçен кайăксем пахчасене хурт-кăпшанкăсенчен сыхласа тăраççĕ. Вĕсем хурт-кăпшанкăсемпе тăранса пурăнаççĕ. Хурт-кăпшанкăсене пĕтереççĕ.

Шапа та тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене пĕтерет. Илемсĕр çĕр шапине çынсем хăш чухне вĕлереççĕ, вăл алла шыçтарать теççĕ. Çĕр шапи пит усăллă. Вăл кăнтăрла çӳремест. Каçхине вара апат шырама тухать. Вăл каçхи хурт-кăпшанкăсене пĕтерет.

Акă вăл пĕр хурта курать. Кĕç эсир темĕскер шат! тунине илтетĕр. Ку—шапа чĕлхи шатлатать. Вăл, чĕлхипе çапса, хурта хыпса илет. Шапа чĕлхи ытти чĕрчунсен чĕлхи евĕрлĕ мар. Вăл çăвар çумне малти вĕçĕпе çыпăçса тăрать. Пĕр-пĕр хурта курсан, ун чĕлхи шат! туса тăсăлса тухать те хурта çапса çыпăçтарса илет.

Вĕçен кайăксене, шапасене сыхламалла. Вĕсене вĕлерме юрамасть. Вĕсем—пахча тусĕсем.

---

Пахча çимĕçĕсен мĕнле тăшмансем пур? Пахча çимĕçĕсен мĕнле туссем пур?

## Купăста лĕпĕшĕ.

Пĕрре Ванюк анкартинче выляса çӳренĕ вăхăтра шурă лĕпĕш тытнă. Лĕпĕше çуначĕсенчен пӳрне вĕçĕсемпе тытса, вăл ашшĕне кăтартма чупса кайнă.

— Атте, пăх-ха, мĕнле хитре лĕпĕш тытрăм эпĕ,— тет Ванюк.

— Ку питĕ сиенлĕ лĕпĕш. Вĕсем, нумай ĕрчесе кайсан, пирĕн купăстана пĕтереççĕ,—тет ашшĕ.

— Мĕнле ку хитре лĕпĕш сиенлĕ пулать-ха?— килĕшесшĕн мар Ванюк.



— Лĕпĕшĕ хăй мар, унăн хурчĕ питĕ сиенлĕ, — тесе ăнлантарать ашшĕ.—Лĕпĕш вĕтĕ çăмартасем туса тултарать. Çав çăмартасенчен хуртсем тухаççĕ. Çав хурт питĕ çаткăн. Вăл пĕрмаях çиет. Купăстан çамрăк çулçисене пĕтерет. Çапла пĕрмай апат çисе ÿссе çитсен, хурт пĕр-пĕр çĕре сыпăçса чăрканса выртать. Вара вăл нимĕн те çимест, ĕçмест, пĕр хусканмасăр выртать. Выртнă хушăра çак хуртăн çунатсем çитĕнеççĕ, вăл лĕпĕш пулса вĕçме тытăнать. Çапла лĕпĕш çăмартинчен хурт пулать, хурт çитĕнсе çитет те, каллех лĕпĕш пулать. Лĕпĕш каллех çăмарта тăвать.

---

Ванюк мĕнле лĕпĕш тытнă?
Купăста лĕпĕшĕ мĕншĕн сиенлĕ?

## Каюра.

Каюра çĕр ăшĕнче пурăнакан пĕчĕк кайăк.

Каюра пит усăллă. Вăл, çĕре чавса, çĕрти çимĕçсен тымарĕсене çиекен хуртсене, нăрăсене тытса çиет. Çимĕçсене тăшмансенчен хăтарать.



Çынсем каюрана час-часах вĕлереççĕ. Каюра çимĕç тымарне çиет, тесе шутлаççĕ. Çимĕç тымарне каюра

çимест. Тымарсене нăрăсем, тĕрлĕ хуртсем çиеççĕ. Каюра çав нăрăсене, хуртсене çисе пурăнать.

Каюрана вĕлерме юрамасть. Вăл вĕçен кайăксем пекех пахча çимĕçсене, тырăсене тăшмансенчен сыхлать. Каюра—пирĕн тус.

---

Каюра пире мĕнле усă парать?
Каюра мĕн çисе пурăнать?
Каюра пире тус-и, тăшман-и?

## Пире лайăх вĕренме.

Ылттăн тумлăн ялкăшса,
килчĕ тулăх кĕркунне.
Ларса тухнă савăнса,
эпир парта хушшине.

Шкулĕ çутă, тап-таса,
пĕтĕм кăмăл çĕкленет.
Вĕренетпĕр тăрăшса
эпир халĕ кулленех.

Эпир—Сталин ачисем,
Çĕнĕ пурнăç калчисем.
Пире лайăх çитĕнме,
пире лайăх вĕренме.

## Эпĕ пахчара нимĕç пăрçи ӳстерни.

Çуркунне. Хĕвел анса ларчĕ. Çанталăк ăшă, тӳлек.

Аслисем, ĕç пуçтарса пĕтерсе, урама уçăлма тухса ларнă. Эпĕ те урама тухма хатĕрленетĕп.

Пӳртум алăкне такам шак! тутарчĕ. Унччен те пулмарĕ—Мĕкĕтесен Тимахвийĕ кĕчĕ тăчĕ. Кĕрсессĕнех:

— Мĕншĕн урама тухмастăн?—терĕ те ман çумма пырса ларчĕ. Аллинче хăйĕн темĕскер пур: чышкине уçать те кăлт пăхса илет.

— Мĕн ара ку санăн? Кăтарт-ха,—терĕм.

— Нимĕç пăрçи,—терĕ, аллине ман патăма тăсса. Эпĕ унччен нимĕç пăрçине курманччĕ. Шултăра хура кăвак пĕрчĕсене курсан, тĕлĕнсех кайрăм. Тытса пăхрăм та, чул пек хытă хăй.

— Куна эсӗ ăçтан тупрăн? Пирӗн ялта нимӗç пăрçи лартакан никам та çукчӗ-çке,—тетӗп.

— Колхоза агроном килнӗ, çав пачӗ,—терӗ Тимахви.

Нимӗç пăрçи Тимахви аллинче шăкăр-шăкăр тăвать. Тимахви ăна пӗр аллипе кăшт ывăтать те теприпе ярса тытать.

Эпӗ ăна пăхса: „Мана атте пӗлтӗрех йăран пачӗ. Кăçал унта нимӗç пăрçи лартасчӗ“,—тесе шухăшларăм.

— Тимахви, агрономăн нимӗç пăрçи татах та пур-ши?—тетӗп.

— Пур, нумай унăн: вăл пахча-çимӗç вăрри туянтарма килнӗ. Айта, сана валли те ыйтар,—терӗ Тимахви.

Эпир Тимахвипе иккӗн колхоз правленине вӗçтертӗмӗр.

Колхоз правлени çуртне çитсе кӗтӗмӗр. Тимахви тӳрех малалла иртрӗ те агронома ман çинчен каласа тапратрӗ. Эпӗ алăк умӗнче именкелесе тăратăп. Агроном, ман çине пăхса.

— Эсӗ шкулта вӗренетӗн-и?—терӗ.

— Вӗренетӗп,—терӗм.

— Эппин, нимӗç пăрçи сана та парас пулӗ,—терӗ те вăррине хут хутаçран кăларса мана пачӗ.

— Лартма пӗлетӗн-и-ха?—тет.

Унтан нимӗç пăрçине епле лартмаллине каласа кăтартрӗ.

— Нимӗç пăрçине кăçал çех тислӗк тăкнă çӗре лартма юрамасть: вăл хăмăла каять те, хутаççи сахал пулать. Лартнă чухне пӗр пăрçаран тепӗр пăрçа хушшинче 15—20 сантиметр хăвар, çине 4—6 сантиметр хулăнăш тăпра витсе хур,—терӗ.

Хавасланнипе колхоз правленинчен çил пек вӗçсе тухрăм. Киле епле чупса çитнине те сисмерӗм. Çитсессӗнех нимӗç пăрçине шӳтерме хутăм. Тепӗр кунне ирех пахчана йăран тума тухрăм. Унтан, йăранне кӗреплепе сӳресе тикӗслесе хатӗрлесен, хай шӳтернӗ нимӗç пăрçине агроном вӗрентнӗ пек лартрăм. Пăрçасем шăтиччен йăрана ир те, каç та шăварса тăтăм, шăтсан вара каçран каç кăна шăварса пурăнтăм.

Пĕр эрнене яхăн иртсен, ман пăрса шăтса тухрĕ. Вăл кунран кунах сарăлма пуçларĕ. Ирпе тăрсанах, миçе çулçă кăларнă-ха тесе, пахчана чупаттăм. Нимĕç пăрçи ахаль пăрçа пекех явăнса çитĕнет пуль тесе, шăтсанах эпĕ кашни тĕм çумне патаксем лартса тухрăм. Анчах вĕсене кайран, кирлĕ мар пирки, кăларса пăрахмалла пулчĕ. Нимĕç пăрçин туни чăнк тӳрĕ, парка пулчĕ. Хутаççи хулăн, пуклак кăна.

Кĕркуннеччен нимĕç пăрçи пулса та çитрĕ. Эпĕ ăна пуçтарса виçĕ тӳпе турăм: пĕрне килес çул лартма хăвартăм, теприне—çиме, виççĕмĕшне шкула тырпул уявĕ чухнехи выставкăна илсе кайма.

### Туппине пĕл.

*Кукăр-макăр турат,*
*туратти çинче кукăлĕ,*
*кукăлĕ ăшĕнче çăмарти.*

## Улмуççи сыпни.

Пĕрре, кĕркунне, Ваçук ашшĕ вăрмантан пĕчĕк йӳçулма йывăççине кăларса килчĕ.

— Эсĕ, атте, унпа мĕн тăвас тетĕн?—тесе ыйтать Ваçук.

— Пахчана лартас тетĕп,—тет кăна ашшĕ.

— Эпĕ вăрман-улмине пĕрре çисе пăхнăччĕ те, питĕ йӳçĕ-çке вăл, çимелле те мар.

— Йывăççине сыпса, ăна лайăх пăхса ӳстерсен, вăл тутлă улма паракан пулать,—тет ашшĕ.

Ваçук ашшĕ йӳçулма йывăççине пахчана шăтăк чавса лартрĕ. Пĕр çулталăк хушшинче йӳçулма йывăççи лайăхах чĕрĕлсе кайрĕ.

— Ваçук, хайхи вăрман улмуççинчен тутлă улма паракан улмуççи тунине курас килет-и?—тет пĕрре ăна ашшĕ.

— Курас килет,—тет Ваçук.

— Айта эппин манпа пахчана. Акă Михалясем патĕнчен чи тутлă улма пулакан улмуççи туратне касса килтĕм. Унăн пĕр папакне касса илсе, хамăр йывăç çумне сыпатпăр та, вара пирĕн улмуççи те çавнашкалах тутлă улма ÿстерекен пулĕ,—терĕ ашшĕ Ваçука.

Унтан пĕр куçне йывăç хыттипе пĕрлех çивĕч çĕçĕпе касса илчĕ те, улмуççи патне пырса, вулли çине çĕртен пĕр 5—6 сантиметр çÿллĕшĕнче Т саспалли пек чĕрчĕ. Хуппине йывăçĕ çумĕнчен хăйпăтса, касса илнĕ куçне кÿртсе лартрĕ. Хуппине каллех çыпăçтарчĕ те, куçĕ тĕлне хушă хăварса, мунчалапа хĕреслĕ çыхса хучĕ.



— Акă, пулчĕ те! Куртăн-и? Халь ĕнтĕ улми пуласса кăна кĕтĕпĕр.

Ваçук тĕлĕнсе кайсах пăхса тăчĕ. Унтан:

— Атте, капла чиксе хунипе епле улмуççи лайăх улма ÿстерекен пулать-ха вăл?—терĕ.

— Çак чиксе лартнă куçĕ лайăх чĕрĕлсен, улмуççине çакăнтан кăшт çÿлерехрен йăлтах касса пăрахатпăр. Вара çак пĕчĕкçĕ папакран ÿссе, пысăк, лайăх, тутлă улма ÿстерекен йывăç пулать.

— Ун улми час пулать-и?—тет Васук.

— Халĕ эсĕ саккăрта; кĕркунне шкула çÿреме пуçлăн. Лайăх вĕренсен, çичĕ çултан вĕренсе тухатăн. Çав эсĕ вĕренсе тухнă çĕре улми пулать вара.

— Ай-ай, нумай кĕтмелле,—тет Васук, кăмăлсăр пулса.

— Унтан час улма пулмасть çав вăл, ачам! Пахча çимĕçĕсемпе хире акнă тырăсем анчах çулталăкра ĕлкĕреççĕ. Йывăç çимĕçĕсене ĕлкĕрме вăхăт ытларах кирлĕ. Ăна, ачам, нимĕн те тăваймастăн,—тет ашшĕ кулса.

Çулталăкран Васук ашшĕ улмуççие сыпнинчен çÿлерех касса пăрахрĕ, çыхнă мунчаласене те салтса илчĕ. Сыпнă вырăнтан çÿлерех те аяларах та шăтса ÿсме тытăннă туратсене йăлтах иртсе пăрахрĕ. Пĕр сыпнă папакран тухса çÿлелле тÿп-тÿрĕ ÿсекен турата анчах хăварчĕ. Улмуççи айĕнчи тăприне кĕркунне те, çуркунне те кăпăшлантаратчĕ. Хĕле кĕрес умĕн шăшисемпе мулкачсем кăшласран чăрăш турачĕсемпе çыха-çыха лартатчĕ.

Лайăх пăхнипе улмуççи чĕрĕлсе ÿссе кайрĕ. Ашшĕ хисепленĕ пекех, çичĕ çултан—Васук вĕренсе тухнă çĕре—улмуççи те чечеке ларчĕ. Кĕркунне пулсан, Васук хайхи улмуççи çинчен илемлĕ тутлă улмасем тата-тата çирĕ.

## Панулми татса пуçтарни.

Пирĕн пĕчĕк сад пур. Ăна асатте хăй çамрăк чухнех лартса тунă. Вăл унта улмуççи, вишня, хурлăхан йывăççисем лартнă.

Кашни кĕркуннех эпир садран панулмисем татса кĕретпĕр. Кăçал панулмисем питех те ăнса пулчĕç. Хăш йывăççисем çинче, улма ытла нумаййипе, çулçисем те палăрмаççĕ. Ытла усăнса аннă туратсене асаттепе атте аялтан патаксемпе тĕкĕлесе хучĕç. Хăш-хăш туратсене йывăç вулли çумне çыхрĕç.

Улмисем темле тĕсли те пур: хĕрлисем, саррисем, шуррисем. Пахчана илем кӳрсе лараҫҫĕ. Тутлă шăршă сараҫҫĕ.

Акă пĕр кунхине эпир улма татма тытăнтăмăр. Эпĕ мăйран хутаç çакрăм та, улмуççи çине хăпарса, улмасене хăвăрт татма тытăнтăм. Васкаса татнипе улмуççин пĕчĕк турачĕсем улмисемпе пĕрлех татăлса хуçăлса килеççĕ. Атте çавна курчĕ те:

— Улмана турачĕсемпе татма юрамасть. Апла улмуççине сиен пулать, килес çул улма начар пулĕ,—терĕ.



Атте хăй вăрăм пусма çине тăнă та улмасене, пĕр турат хуçмасăр, хуллен тататъ. Эпĕ те атте пек васкамасăр татма тытăнтăм. Улма татса пĕтерсен, эпир улмана уйăра-уйăра хутăмăр. Кĕркунне çиме çемçелнисене хăвартăмăр. Лайăх улмасене йӳçĕтрĕмĕр тата хĕлле валли суйласа илтĕмĕр.

Атте пĕр ещĕке ыраш улăмĕ сарчĕ те хĕлле валли уйăрса хунă улмана çавăнта сарса хутăмăр. Улмасене пĕр-пĕрин çумне перĕнмелле мар вырнаçтартăмăр.

— Пĕр-пĕрин çумне çыпăçса выртсан, улма çĕрме, пăсăлма пултарать,—тет атте.

Çанталăк сивĕте пуçласан, эпир хĕлле валли уйăрса хунă улмана типĕ тăракан нӳхрепе антарса хутăмăр. Унта улма пĕр çĕрмесĕр, шăнмасăр хĕл каçах аван тăрать. Çиес килсен, эпир ăна пĕчĕккĕн илсе кĕрсе çиеттĕмĕр.

## Вĕренепе куршанак.

(Юмах)

Пĕр пахча кĕтессинче яштак çамрăк вĕрене ӳснĕ. Унăн пӳрнеллĕ çулçисем хушшинче çунатлă вăррисем вĕçкелесе тăнă. Вĕренерен аякра мар пĕр куршанак[1] саркаланса ларнă. Унăн вăррисем тӳме пек чăмăртанса тăнă. Вĕрене куршанака юратман. Вăл унпа пĕрмаях çапла ятлаçнă:

— Куршанак, манăн сан вăррусене курас килмест. Сан ачусем ытла илемсĕр. Вĕçсе кайма вĕсен çуначĕсем те, мамăк пекки те çук. Сан ачусене нихăçан та ку вырăнтан тасалса кайнине кураймăп,—тесе мăкăртатнă вĕрене.

— Ан ятлаç-ха, вĕрене тус,—тенĕ куршанак.— Ман вăрăсем те çак пахча кĕтессинех ӳксе шăтса лармĕç. Вĕсем, çунат çук пулин те, аяккалла кайĕç. Акă хура кĕр çиттĕр-ха. Манăн ачасем урăх çĕрелле пурăнма кайнине хăвах курăн.

Кĕр çитрĕ. Вĕрене вăррисем пулса çитсе амăшĕ патĕнчен çилпеле вĕçсе кайрĕç. Кашни кунах тĕрлĕ мамăклă вăрăсем вĕренепе куршанак ӳссе ларакан çĕртен вĕçе-вĕçе иртсе каяççĕ.

— Ăçталла каятăр?—тесе ыйтаççĕ хăш чухне вĕренепе куршанак.

— Çĕнĕ çĕре пурăнма, ирĕк вырăнта шăтса ӳсме,— теççĕ çăмăл мамăклă пĕчĕк вăрăсем.

Куршанак вăррисем çаплах лараççĕ-ха. Вĕрене вĕсем çинелле сивĕ куçпа пăхать.

---

[1] Куршанака хăшпĕр çĕрте куршанкă теççĕ.

Пĕрре, кĕтмен çĕртен, пахчана лăпсăркка йытă якăлт сиксе кĕчĕ. Вăл, шăши шыраса, куршанак патне пычĕ те шăршласа çаврăнкаларĕ.

Вĕрене, пăхса тăнă çĕртех, тĕлĕнсе хытса кайрĕ: куршанак пĕтĕмпе пекех йытă çумне çакланнă. Йытă кăшт хыçкаланчĕ те карта урлă каçса таçта чупрĕ. Куршанаксем çаплах çакăнса кайрĕç.

Куршанак хăй те хĕпĕртесе кайнă.

— Ăсатрăм ачасене ирĕк çĕрте шăтса ӳсме,—тет.

Вĕрене:

— Эпĕ сан ачусем кун пекех кунтан час тасалса тухса каяссине шухăшламан та,—тет.

— Ман ачасен çунат е мамăк вырăнне пĕчĕк çекĕлсем пур. Вĕсем, хăйсем патне кам та пулин пырса сĕртĕнсенех, хытă çаклатса илеççĕ те çыпçăнса каяççĕ. Эпĕ хам та çак çĕршыва шăши çурăмĕ çинче ларса килсе лекрĕм,—тет куршанак.

Вĕрене куршанакпа тек ятлаçма пăрахрĕ. Çулленех çав пахча кĕтессинче пурăнса, вĕсем вăрăсем тăваççĕ. Кашни харпăр хăй майĕпе вăррисене аяккалла салатаççĕ.

## Икĕ тырă пĕрчи.

(Юмах)

I.

Кĕркунне ыраш аксан, икĕ ыраш пĕрчи ана çине юнашар ӳкнĕ.

— Пĕчикĕç, эсĕ-и?—тесе ыйтнă вĕсенчен пĕри.

— Эпĕ, эпĕ, Тĕпренчĕк. Ах, хавас-çке эпĕ, каллех иксĕмĕр пĕрле пултăмăр.

— Ăçта кăларса сапрĕç-ха пире?

— Пĕлейместĕп. Анчах ку вырăна тахçан курнă пек туйăнать.

— Паллатăп, паллатăп! Эпир çак хиртех ӳснĕ вĕт. Астăватăн-и, Тĕпренчĕк, пире пуçтарчĕç те пурне те миххе ячĕç. Кайран вара кĕлете хучĕç.

## II.

Ыраш пĕрчисем çĕр айĕнче выртса йăлăхнă.

— Тĕттĕм, питĕ пăчă-çке кунта,—тенĕ Тĕпренчĕк.

— Шăп вырт. Вăхăт çитсен пурте пулĕ, вара эпир те телейлĕ пурăнăçпа пурăнма тытăнăпăр,—тенĕ Пĕчикĕç хăйĕн юлташне.

— Çук, манăн халех çутта тухас килет: мана кунта тĕттĕм, пăчă.

— Ан кулян! Тухăпăр-ха çӳлелле.

Хай пирĕн пĕрчĕсем, аялалла тымарсем ярса, тăпра витĕр çеçкесем кăларчĕç те савăнса ешерсе кайрĕç. Вара вĕсем пĕтĕм уй-хир симĕс калчапа ешерсе тăнине курчĕç.

— Сывă-и? Сывă-и-ха?—тенĕ вĕсене пур енчен те ыраш калчисем.

— Сывах, юлташсем!

Нумай та тăман—малтанхи юр çунă.

— У-у-ух! сивĕ,—тенĕ Тĕпренчĕк.

— Ман çуммарах кил,—тенĕ ăна Пĕчикĕç.

Калча тăван юлташĕ çумне тĕршĕннĕ те шăпах пулнă. Юр пĕрмай çунă та çунă. Пĕтĕм хире хупласа илнĕ. Акă ĕнтĕ калчасем юр айĕнчен кăшт анчах курăнакан пулнă.

— Ку юр айĕнче эпир шăнса вилсех кайăпăр,—тенĕ калчасем хуйхăрса.

Çак сăмахсене илтсен, çемçе юр:

— Манран ан хăрăр, калчасем. Эпĕ сирĕн тусăр пулатăп-çке! Эпĕ сире хĕрхенетĕп, сивĕ мучирен хăтарас тетĕп. Эпĕ сирĕн çине хулăнтарах витсен, хаяр сив мучи сирĕн пата çитсе сире шăнтаяс çук!—тенĕ.

## III.

Хĕл çитнĕ. Сив мучи хăйĕн пăр çуртĕнчен тухнă. Ватă сив мучи нумай инкек тума ĕлкĕрнĕ. Ачасен сăмсисене, лавăççен хăлхисене тăм илтернĕ. Темĕн чухлĕ вĕçен кайăксене, вĕçнĕ çĕртенех хăйĕн аллипе

тытса ӳкерсе, ҫӗр ҫине пӑрахнӑ. Анчах калчасене вӑл тивеймен. Вӗсем патне ӑна хулӑн юр яман. Тӗпренчӗкпе Пӗчикӗҫ, пӗр-пӗрин ҫумне сыпӑҫса ларса, шӑп пулса, хӗл каҫичченех ҫывӑрнӑ.

## Пӗрчӗ.

Ачасем шкул пахчинче йӑрансем тунӑ. Унта вӗсем тӗрлӗ ҫимӗҫсем лартнӑ. Сӑнамалӑх тулӑпа пӑрҫа та акнӑ. Ҫапла ӗҫленӗ чух вӗсем акӑ мӗн курнӑ.

Кашни пӗрчӗре шӑтса ӳсмелли тӗвӗ пур, ӑна пурӑнӑҫ тӗвви теҫҫӗ. Вӑл типӗ пӗрчӗ ӑшӗнче ҫимесӗр, ӗҫмесӗр тӑрать. Аксассӑн, ҫав пӗрчӗ тӑпрара ӑшӑпа тата нӳрӗпе шӗвет. Пурнӑҫ тӗвви вара вӑранать. Вӑл пӗрчӗн сӗткенне, пӗчӗк ача хӑй амӑшӗн кӑкрине ӗмнӗ пек, ӗмме тытӑнать. Унтан, пӗрчӗн кипкине ҫурса, вӑл апат шырама ҫӗрелле тымар ярать. Ҫӳлелле вӑл ҫеҫке сара пуҫлать. Ҫапла пӗрчӗрен калча шӑтса ӳсет. Ҫитӗнсе ҫитсен, вӑл чечек кӑларса шӑркана ларать. Чечекӗ тӑкӑнса пӗтсен, чечек вырӑнӗнче пӗрчӗсем пула-пула лараҫҫӗ.

---

**Юмах:** Пӗри тӑкать, тепри ӗҫет, виҫҫӗмӗш ӳсет.

## Утар.

Пирӗн асатте вӑрманта колхоз утарӗнче ӗҫлет. Эпӗ асатте патне утара тек-текех кайкалатӑп. Ҫапла пӗрре эпӗ утара пытӑм та вӗллесем хушшинче уткаласа ҫӳретӗп. Хуртсем мана тивмеҫҫӗ, эпӗ унта ерипен ҫӳреме вӗреннӗ. Пӗр вӗлле ҫумӗнчен иртсе пыратӑп, темскер нӑйлатни илтӗнсе кайрӗ. Асатте патне чупса кайрӑм та каласа кӑтартрӑм. Вӑл манпа пӗрле пырса итлерӗ те: „Кӑҫал ку вӗлле пӗрре уйӑрчӗ-ха, ун чух пыл хурчӗсемпе ватӑ ами вӗҫсе тухнӑ, халь кунта тата ҫамрӑк амасем пур. Халь ҫавсем ҫуйлатаҫҫӗ. Ыран ҫамрӑк пыл хурчӗсем вӗҫсе тухаҫҫӗ ак",—терӗ.

Эпĕ асаттерен:—„Амисем мĕнлескерсем?“—тесе ыйтрăм.—„Ыран кил, курăн вара“,—терĕ асатте.

Эпĕ тепĕр кунне асатте патне кайрăм. Утар çуртĕнче икĕ кунтăк хурт çакăнса тăнине куртăм. Асатте мана пыл хурчĕсене пăхмалли питлĕх тăхăнтартрĕ. Унтан хурт тултарнă кунтăксене илчĕ те вĕллесем патнелле йăтса кайрĕ. Унта хурт сасси янăраса çеç тăрать. Эпĕ, хурт амине курас тесе, асатте хыçĕнчен утрăм.



Асатте пушă вĕлле патне пычĕ те унăн умне валак юсаса лартрĕ, вара, кунтăкне уçса, хуртсене валак çине силлерĕ. Хуртсем валак тăрăх вĕллене кĕме пуçларĕç, хăйсем пурте нăйлатаççĕ. Асатте вĕсене мелкепе ерипен хăваласа пырать.

Пĕр кĕске çунатлă вăрăм хурта кăтартса: „Акă хай ами!“—терĕ мана асатте. Кайран асатте, питлĕхе пуçран хывса илчĕ те, мана пўрте илсе кĕчĕ. Унта вăл мана пĕр татăк караслă пыл пачĕ. Эпĕ ăна çинĕ чух хам алсене те, пите те пĕтĕмпех пылласа пĕтертĕм. Киле таврăнсан, анне калать: „Сана аслаçу пыл çитерчĕ пулĕ-ха“,—тет.

— Эпӗ асаттене ӗнер ҫăвăр амаллă вӗлле тупса патăм, вăл мана ҫавăншăн пыл ҫитерчӗ. Паян унпа пыл хурчӗсене ҫӗнӗ вӗллене хупрăмăр,—терӗм эпӗ аннене.

## Пӗрлешӳре вăй.

Ҫур ҫитрӗ. Ҫӗршыв ешӗре пуҫларӗ. Эпир, ачасем, шкултан ярсан, вăрмана ҫӳреме пуҫларăмăр. Кунӗ-кунӗпех вăхăта уҫă сывлăшра ирттеретпӗр. Юрă, кулă, вăйă сасси вăрманта ян янăрать. Хурт-кăпшанкăсем, ҫӗлен-калтасем те вăраннă. Куллен-кун ҫӗнӗрен чечексем шăтса тухаҫҫӗ. Йӗри-тавра пурăнăҫ вылять. Пире савăнтарать. Пурте унта-кунта кускалаҫҫӗ, ҫиме апат шыраҫҫӗ.

Пӗр кăткă йăваран тухрӗ те каллӗ-маллӗ чупкалать, тем шыранăн туйăнать. Ҫул ҫинче ку пӗр сӗлӗ пӗрчи курах кайрӗ. Вăл ăна илсе каясшăн пулчӗ те, вăйӗ ҫитеймерӗ: пӗрчи ытла та пысăк.

Акă вăл пӗр чул ҫине улăхрӗ те йӗри-тавра пăхкаласа илчӗ. Хăйӗн икӗ юлташӗ пынине курчӗ те чупрӗ вӗсене хирӗҫ. Хирӗҫ пулса, вӗсене сăмсипе сӗртӗнсе: „Айтăр часрах, эпӗ пит тутлă япала тупрăм“ — тенӗн туйăнать. Виҫҫӗшӗ вара сӗлӗ пӗрчине сӗтӗрсе кайрӗҫ-кайрӗҫех.



---

Чӗрчунсенчен кам тата пӗрлешсе ӗҫлет?

Вăрмана кайса, кăткă пурăнăҫне сăнаса пăхăр.

## Юманпа шӗшкӗ.

Пӗр ватă юман хăй йӗкелне шӗшкӗ тӗмӗ айне ӳкернӗ. Шӗшкӗ юмана каланă: „Санăн хăвăн турат-

тусем айӗнче вырӑн сахал-и-мӗн? Эсӗ йӗкеллӳсене ирӗк вырӑна ӳкер. Кунта мана хама та тӑвӑр. Эпӗ хам та мӑйӑрӑмсене ҫӗре пӑрахмастӑп, ҫынсене паратӑп",—тенӗ.

Ӑна хирӗҫ юман: „Эпӗ 200 ҫул пурӑнатӑп, ҫак йӗкелтен пулас юман та 200 ҫул пурӑнӗ"—тенӗ.

Шӗшкӗ ҫиленнӗ: „Санӑн ачуна хупласа лартӑп та, вӑл виҫӗ кун та пурӑнаймӗ",—тенӗ вӑл.

Юманӗ нимӗн те чӗнмен, хӑй ывӑлне шӑтса тухса ӳсме хушнӑ. Йӗкелӗ шӳсе ҫитсе ҫурӑлнӑ, ҫӗрелле тымар янӑ, ҫӳлелле ӳсме пуҫланӑ. Шӗшкӗ ӑна хупласа та пӑхнӑ, хӗвел ямасӑр та тӑнӑ, анчах ҫамрӑк юман, шӗшкӗ сулхӑнӗнче куллен-кун вӑй илсе, ҫӳлелле ӳссе хӑпарнӑ.

Ҫӗр ҫул иртнӗ. Шӗшкӗ тахҫанах типсе ларнӑ. Йӗкелтен шӑтнӑ юман таҫта ҫитиех ӳссе хӑпарнӑ. Турачӗсем унӑн чатӑр пек сарӑлса ларнӑ.

**Туппине пӗл.**

*Пӗчӗкҫӗ хуранӑн*
*пӑтти тутлӑ.*

## Чӑрӑш.

Пӗрре ҫӗр ҫулхи чӑрӑш тӑррине тӑмана улӑхса ларнӑ та ҫапла юмахлама тапратнӑ: „Эсӗ, чӑрӑш, ҫав тери илемлӗ, ҫав тери ҫӳллӗ ӳссе хӑпарнӑ. Тураттусем санӑн ҫӗрелле лӑсах усӑнса аннӑ, ҫара йӗппӳсем ӗмӗр-ӗмӗрех симӗссӗн курӑнса лараҫҫӗ. Кала-ха, савнӑ чӑрӑш, эсӗ мӗнле тӑранса пурӑнатӑн?"

„Эпӗ тӑранса пурӑннине пӗлес килет пулсан, ҫӗр ҫине анса пӑх. Ман вулӑран ҫӗр айнелле пысӑк тымарсем йӗри-таврах сапаланса каяҫҫӗ. Ҫав тымарсем аяккалла сарӑлнӑҫемӗн туратланса ҫинҫелсе каяҫҫӗ, чӑн вӗҫӗнче ҫӳҫ пек анчах тӑрса юлаҫҫӗ. Ҫав ҫинҫе

лӑс тымарсем хăйсен тавраш̆енчи çĕре пĕтĕмпех çыхлантарса лартаççĕ. Хăйсем пĕрмаях тăранмалли япаласем шыраççĕ, вĕсене ирĕлтерсе, шывпа пĕрле ĕмсе илеççĕ. Çĕртен ĕмсе илнĕ апат тымарсем тăрăх вулăна улăхать, унтан туратсем тăрăх сарăлать, йĕпсем патне те çитет. Манăн симĕс йĕппĕмсем пĕрмаях сывлаççĕ, вара çав сывлăшпа çĕртен улăхнă апатран тутлă сĕткен хатĕрлеççĕ. Çав тутлă сĕткенпе эпĕ çўлелле те ўсетĕп, сарăласса та сарăлатăп, туратăмсене те ўстеретĕп, симĕс йĕппĕмсене те кăларатăп. Çав сĕткенпе тăрансах чечексем те çурăлаççĕ, йĕкелсем пулса çитсе вăрăсем те аяккалла саланаççĕ. Çапла ĕнтĕ, тăмана тус, мана, çакăн пек паттăр йывăçа, лăс тымарсемпе йĕппĕмсем тăрантарса пурăнаççĕ",—тенĕ.



## Пулă ĕрчетни.

Францире пĕр пĕчĕк ялта Рими ятлă чухăн хресчен пурăннă. Вăл вуă татса, çурса пурăннă, ерçўллĕ вăхăтра пулла çўренĕ. Унăн Жозеф ятлă ывăл ача пулнă. Пĕрре Жозеф пĕчĕк юханшыв урлă каçса пынă чух пулăсем шывра кĕтў-кĕтўпе йăшăлтатнине курнă. Пуллисем пĕр-пĕрне тĕрткеленĕ, чăмпăлтатнă. Ача шывалла тинкерсерех пăхнă. Вăл пĕр пĕчĕк пулă хăй вăлчине сапма пуçланине тата ытти пулăсем сĕт пек шурă чăсăлакан япала юхтарма пуçланине курнă. Çакна курсан, Жозеф пит тĕлĕнсе кайнă, хăвăртрах ашшĕ патне чупса кайса каласа кăтартнă. Ашшĕ ăна: „Унта нимĕн те тĕлĕнмелли çук, ачам! Пулăсем çулленех вăлчисене шыва сапаççĕ",—тенĕ.

—Мĕншĕн вĕсем вăлчисене шыва сапаççĕ?—тенĕ Жозеф.

— Вăлчаран пĕчĕк пулăсем пулаççĕ. Пулăсем вăлчаран ĕрчесе пыман пулсан, пулăсене эпир тахçанах пĕр пулă юлми тытса пĕтерне пулăттăмăр,—тенĕ ашшĕ.

Жозеф, çакна илтсен, чăтаймасăр татах шыв хĕрне чупса кайнă, анчах малтанхи вырăнта пулăсем те, вăлчасем те пулман. Вăл, шыв юхтарса кайнă пулĕ тесе, вăлчасене шыраса, анаталла утса кайнă. Шырасан-шырасан, пĕр пысăк чул çумĕнче, лакăмра, пулă вăлчисене 50—60 пĕрчĕ курнă. Жозеф вĕсене стакана ярса киле илсе кайнă.

Кунĕ-кунĕпе вăл стакан патĕнче ирттернĕ, кăшт стакан патĕнчен кайсанах, унăн стаканта мĕн пулнине пырса пăхасах килнĕ. Стаканĕнче чăнахах та пит тĕлĕнмелле ĕç пулнă. Кашни вăлчаран пулă чĕпписем ўснĕ. Жозеф вĕсене асăрхаса пынă. Пулă чĕпписем хуллен-хулленех ўснĕ. Вăхăт иртнĕ. Акă пĕр чĕппи кăлт-кăлт тапраннă. Жозеф калама çук савăннă. Ĕнтĕ вăл стакан патĕнчен кайма та пĕлмен, текех пырса пăхнă. Пĕрре унăн таçта ĕçпе каймалла пулнă. Çав вăхăтра тахăшĕ унăн стаканне кăларса сапнă.

Çакăнтан кайран нумай вăхăт иртнĕ. Жозеф ўссе çитнĕ, пулăçă ĕçне вĕреннĕ. Анчах çырмасенче пулă сахалланнăçемĕн сахалланнă, вĕсен çырминче уланкăсен тĕсĕ те юлман. Хайхи Жозеф пĕчĕкçĕ чух стаканта пулă ўстернине аса илнĕ. Çавăн пек майпа пулăсене ĕрчетес тесе, Жозеф, витре йăтса, тепĕр çырмана уланкăсене тытма кайнă. Уланкăсене вăл чылай тытнă. Хăш пуллисен вăлчине чăмăртаса кăларнă, теприсенне шурă сĕт пеккине кăларнă. Çаксене пĕрле витрене ярса, хăйсен çырминчи шыва кайса янă.

Жозеф, пĕчĕкçĕ чухнехи пекех, вăхăта çырма хĕрринче ирттернĕ: вăл вăлчаран пулă тухассине пит кĕтнĕ. Çапла тек шыв хĕрринче ларнă, килтисем ăна ятлаçнă, кўршисем—ухмаха ернĕ, тесе мăшкăланă.

Пĕрре вăл, çулталăкран, хăйсен çырминче уланкă чĕппisene курнă. Вăл пит савăннă: тахçанхи ĕмĕчĕ унăн çитнĕ. Уланкă чĕпписем вăл тытса янă вăлчаран тухнă. Çапла вăл хăйсен çырминче пулă ĕрчетсе янă.

Ҫавӑнтан кайран учӗнӑйсем те, хресченсем те, пулӑҫӑсем те пулӑ ӗрчетме вӗреннӗ. Ӗлӗк пулӑ пурӑнман кӳлӗсенче, пӗвесенче, юханшывсенче пулӑ ӗрчетме пуҫланӑ. Халӗ пулӑ вӑлчине таҫти инҫе ҫӗре, темиҫе пин ҫухрӑма яма пулать, таҫта та пулӑ ӗрчетсе усӑ курма пулать.

---

Пулӑ мӗнле ӗрчет?

Юханшывсенче, пӗвесенче пулӑ пӗтсен, вӗсене мӗнле ӗрчетме май пур?

---

# Ӗлӗкхипе хальхи.

## Ӗлӗк.

Сухапуҫне кӳлсе ярса,
хресчен тухнӑ сухана.
Хыткан лаши, пуҫне усса,
Уткаланӑ чух кӑна.
Тырри пулсан, ҫурла тытса,
хресчен тухнӑ уй-хире.

Яра куна тар юхтарса,
авнӑ, хуҫнӑ пилӗкне.
Кӗрхи кунта тӑпачсемпе
ҫапнӑ пур-ҫук тыррине.
Кашни ҫулах хӑй ҫемьипе
выҫӑ ларнӑ ҫуркунне.
Тискер кулак хуҫа пулнӑ,
ӗҫҫыннине хӗн кӳнӗ.

## Халь.

Сухапуҫ тӗсне кураймӑн,
плугпа трактор халь ӗҫлет.
Иӑран шырӑн та тупаймӑн—
анасем пурте пӗрле.



Машинăпа тырра выратпăр,
çапасса та машинăпа.
Пĕрлешӳллĕ халь ĕçлетпĕр—
эртелпе, коллективпа.

Ĕçлесен халь пурнăç тутă,
мĕн ĕçлен,—çавна илен.
Пурнăç лайăх, пурнăç çутă,
ĕçлемешкĕн ан ӳркен.
Иртрĕç тискер вăхăтсем,
хамăр хуçа пурнăçра.

## Ĕлĕкхи пурăнăç.

Петя ашшĕ ялсовет председателĕнче ĕçлет. Вăл чылай хура-шурă курнă çын. Ĕлĕкхи пурăнăçа питĕ тарăхса аса илет. Кулаксене, пупсене шутсăр кураймасть.

Пĕрре Петя ашшĕне калать: „Атте, ĕлĕк пирĕн пек çынсем мĕнле пурăннă? Мана каласа пар-ха“, тет.

Ашшĕ хаçат вуласа ларатчĕ. Хаçатне аяккалла хучĕ те:

— Сире ĕлĕкхи пурăнăç çинчен шкулта тĕплĕрех каласа парĕç, анчах эпĕ те сана кăшт каласа парам,— терĕ.

— Ĕлĕк пирĕн пек хресченсен пурăнăçĕ питĕ начар пулнă. Пирĕн асаттесем помещиксен аллинче

пуранна. Помещиксен тыррине акса, вырса, çапса, кĕлете хурсах панă. Хăйсен ĕçне вĕсем эрнере икв иç кун анчах ĕçлеме пултарнă.

Кайран патша хресченсене помещиксен аллинчен хăтарнă пек тунă. Лайăх çĕрсене помещиксем хăйсен аллине хăварнă. Япăх çĕрсене хресченсене хаклă хака сутнă. Çĕр çитмен пирки, хресченсен каллех помещиксемпе кулаксем патĕнче кĕрĕшсе ĕçлемелле пулнă.

Кулаксемпе помещиксем пуйса пынă, хресчен чухăна тухса пынă. Хресченсене патша влаçĕ йывăр куланай тӳлеттернĕ. Хресченсем помещиксене хирĕç кĕрешнĕ, пăлханса та пăхнă, анчах патша помещиксене пулăшма салтаксем янă. Пăлханакансене пере-пере пăрахнă, çакса вĕлернĕ, тĕрмесенче çĕртнĕ.

Хулари рабочисен те пурăнăçĕ пит йывăр пулнă. Вĕсене фабрикăсемпе, завод хуçисем нумай ĕçлеттернĕ. Укçине выçăллă-тутăллă пурăнмалăх кăна тӳленĕ. Рабочисем питĕ нумай çул хушши капиталистсене хирĕç кĕрешнĕ.

Ленин рабочисен çывăх тусĕ, çывăх юлташĕ пулнă. Вăл рабочи класс ĕçĕшĕн кĕрешнĕ. Владимир Ильич: рабочи класс—ĕççыннисен малта пыракан отрячĕ пулса тăрать, тесе, вăл пусмăрта пурăнакан халăхсене пурне те хăй хыççăн ертсе пырать, тесе вĕрентнĕ. Вăл влаçа рабочи класс аллине илме, пур ĕçхалăхне те ирĕке кăларма кирлĕ тесе вĕрентнĕ. Ленин, рабочи класс ĕçĕшĕн тăракан çынсене пĕрлештерсе, большевиксен партине тунă. Рабочисен партийĕ—большевиксен партийĕ ӳссе çирĕпленсех пынă.

Большевиксем мĕнпур рабочисене, хресченсемпе пĕрлешсе, патша влаçне сирпĕтме чĕннĕ. Рабочисем большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçсе пынă.

Патша жандармĕсем большевиксене хытă хĕстернĕ. Вĕсене тĕрмене тыта-тыта хупнă. Çĕпĕре ссылкăна янă. Çапах та большевиксен партийĕ тата çирĕпрех, вăйлăрах кĕрешсе пынă. Рабочисемпе хресченсем пĕр союз пулса ĕçлеме пуçланă.

---

1917-мĕш çулти февраль уйăхĕнче Российăри рабочисемпе салтаксем патшана сирпĕтрĕç. Унтан ноябрь уйăхĕн 7-мĕш кунĕнче (кивĕ календарьпе — октябрь уйăхĕн 25-мĕш кунĕнче) капиталистсемпе помещиксене те хăваласа ячĕç. Пĕтĕм власть ĕçхалăх хушшинчен суйланă советсен аллине куçрĕ. Фабрикăсем, заводсем, çĕршыв пĕтĕм ĕçхалăх аллине кĕчĕ. Пирĕн çĕршыв тĕнчере пĕртен пĕр социализмлă çĕршыв пулса тăчĕ.

## Чăваш ĕççыннин ĕлĕкхи пурăнăçĕ.

Октябрьти социализмлă революциччен чăваш ĕçхалăхĕн пурăнăçĕ ытла та йывăр пулнă. Çĕр хĕсĕк пулнă. Чăваш хушшинчи лайăх çĕрсене патша влаçĕ помещиксене, пупсене, монастырьсене каса-каса панă. Ытти лайăх çĕрсене кулаксем хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Чухăнпа вăтам хресченсем чи начар çĕрсене сухапуçĕпе ĕçлесе пурăннă.

Чăваш ĕçхалăхне вырăс помещикĕсемпе чиновникĕсем, тата чăваш-хуçасемпе кулаксем пит хытă хĕснĕ. Тĕрлĕ халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтернĕ, вĕсенчен машкăласа кулнă.

Йывăр куланайсем тата ытти тĕрлĕ тӳлевсем тӳлесе пурăннипе, çĕр хĕсĕккипе чăваш ĕççынни çулсерен чухăнланса пынă. Кулаксем, унпа усă курса, вĕсене хăйсемшĕн ĕçлеттерсе пурăннă.

Çав вăхăтрах тĕрлĕ улпутсем, пупсем, кулаксем, нимĕн ĕçлемесĕрех ырă курса, лайăх ĕçсе-çисе пурăннă. Вĕсем чухăнпа вăтам хресченсене тĕрлĕ парăмшăн темĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ.

Ĕççыннисен ачисене вĕренме ирĕк пулман. Нумайăшĕ ялти шкултан та вĕренсе тухайман. Пысăкрах шкулсенче кулаксен, пупсен ачисем анчах вĕренме пултарнă. Шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентмен, пур шкулсенче те вырăс чĕлхипе вĕрентнĕ.

Чухăн пурăннипе культурăллă пурăнма май килменрен чăваш ĕçхресченĕсем хушшинче тĕрлĕ чир-

сем сарăлнă. Вĕсенчен чи хăрушши—трахома. Çав чирсене эмеллеме чăваш хушшинче больницăсем питĕ сахал пулнă.

Октябрьти социализмлă революци пулсан, ытти халăхсемпе пĕрлех чăваш ĕçхалăхĕ те ирĕке тухрĕ. Помещиксене, капиталистсене хăваласа янă. Эксплоататорсен класне пуçĕпех пĕтернĕ.

Хресченсем пурте пекех колхозра. Вĕсем çĕре машинăсемпе ĕçлеççĕ. Çулсеренех çĕртен пысăкрах та пысăкрах тупăш илсе пыраççĕ. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнăçпа пурăнаççĕ. Чăваш республикинче те, пĕтĕм Совет Союзĕнчи пекех, культурăллă революци пулчĕ. Шкул çулне çитнĕ çамрăксем пурте шкулта вĕренеççĕ. Шкул çулне çитнисене пурне те обязательно йĕркепе пуçламĕш образовани парассине пурнăçа кĕртнĕ.

Ирĕке тухнă чăваш ĕçхалăхĕ социализмлă çĕнĕ пурăнăç тăвас ĕçре кунсерен пысăк çитĕнӳсем туса пырать.

## Ванька Жуков.

Тăхăр çулхи Ванька Жуков Аляхин ятлă атăçă патĕнче виçĕ уйăх вĕренсе пурăнать. Сурхури каç вăл çывăрма выртмарĕ. Хуçисемпе аслă тарçисем кĕлле тухса кайсан, хуçа шкапĕнчен чернила кĕленчи, ручка тата тутăхса кайнă перо илчĕ те, умне лучăрканнă хут листи сарса хурса, çырма тапратрĕ. Малтанхи саспаллине çыриччен вăл алăкпа чӳречесем çинелле шикленерех çаврăнса пăхрĕ.



„Савнӑ асатте, Стенки Макарч,—тесе ҫырчӗ вӑл,—сан патна ҫыру ҫыратӑп. Ман аттем те, аннем те ҫук,—пӗр эсӗ анчах юлтӑн“,—терӗ.

Ванькӑн аслашшӗ улпутсем патӗнче ҫӗрлехи хуралҫӑра пурӑннӑ. Вӑл 65 ҫулхи старик пулнӑ; лутра, ырхан, анчах тӗлӗнмелле ҫивӗч, ҫӑмӑл шӑмшаклӑ старик пулнӑ. Унӑн куҫӗсем яланах кулса ҫӳренӗ. Кӑнтӑрла вӑл тарҫӑсен кухнинче ҫывӑрнӑ е апат пӗҫерекен хӗрарӑмсемпе калаҫса ларнӑ. Каҫ пулсан, саплӑклӑ тӑлӑп тӑхӑнса, кил-ҫурт тавра хурал шаккаса ҫӳренӗ. Ун хыҫҫӑн, пуҫӗсене усса, ватӑ Каштанкӑпа Вьюн йытӑсем пынӑ.

„Халӗ асатте лапах хапха умӗнче тӑрать пулӗ. Ҫӑматтисемпе тапкаласа, кил тарҫисемпе калаҫса тӑрать, хурал шаккине пиҫиххи ҫумне ҫакнӑ. Вӑл аллисемпе ҫупкалать, сивӗрен хутланать, ҫинҫе ватӑ сассипе хихиклетсе кулать пулӗ“,—тесе шухӑшласа, малалла ҫырма пуҫланӑ Ванька.

„Ӗнер мана пӗрре хытӑ лекрӗ. Хуҫа ачине сиктернӗ чух сисмесӗр ҫывӑрса кайнӑшӑн хуҫа мана, ҫӳҫрен тытса, тула сӗтӗрсе тухрӗ те чӗн пиҫиххипе хӗнерӗ. Эрне ҫитет пулӗ, хуҫа майри мана пулӑ тасатма хушрӗ. Эпӗ тасатма хӳринчен пуҫларӑм та, ҫавӑншӑн мана хуҫа майри йӑлтах питрен пулӑ сӑмсипе тӗксе пӗтерчӗ. Кӗҫӗн мастерсем манран кулаҫҫӗ, хупаха эрех патне яраҫҫӗ, хуҫа хӑярне вӑрлама хушаҫҫӗ. Хуҫи мӗн алла кӗрет, унпа ҫапать. Ҫимелли нимӗн те ҫук. Ирпе ҫӑкӑр, кӑнтӑрла кӑшт пӑтӑ, каҫпа каллех ҫӑкӑр. Чейне, аш шӳрпи тавраш не хуҫисем хӑйсем кӳпеҫҫӗ. Мана пӳртумӗнче ҫывратаҫҫӗ. Вӗсен ачи макӑрма тапратсан, эпӗ кӑшт та ҫывӑраймастӑп, ҫаплах сӑпка сиктеретӗп.

Юратнӑ асатте, мана кунтан яла илсе кай, ниепле те пурӑнма пулмасть ман. Сана ӳксе пуҫҫапӑп, илсе кай мана кунтан. Кунта манӑн вилес пулать“.

Ванька, вараланнӑ чышкисемпе куҫӗсене сӗркелесе, макӑрма тытӑннӑ.

„Эпӗ сана табак тураса парӑп,—малалла ҫырнӑ вӑл,—

итлемесен, хӗнесе йытӑ вилли ту. Мана ӗҫ тупаймасть тетӗн пулсан, прикащик патне тархасласах атӑ тасатма кӗрӗп, е Хӗветӗр вырӑнне сысна кӗтӳ пӑхма кайӑп. Савнӑ асатте, кунта ман нимӗнле те пурӑнма пулмасть, пӗр вилӗм анчах. Пӗрре ҫуранах яла тарса пырас терӗм, атӑ ҫук пулчӗ, сивӗрен хӑрарӑм. Пысӑклансан, эпӗ никама та сана хӗсӗрлеме памӑп".

Ванька чӗтресе ассӑн сывласа янӑ та каллех чӳрече ҫинелле пӑхма тапратнӑ.

„Савнӑ асатте, кил,—тесе ҫырма пуҫларӗ вӑл каллех.—Илсе кай мана кунтан. Хӗрхен мана, телейсӗр тӑлӑха. Ахалӗн мана кунта питӗ хӗсеҫҫӗ, ҫиес килет, калама ҫук кичем, ҫаплах макӑратӑп. Ӗнер мана хуҫа калӑппа пуҫран ҫапрӗ те, кайсах ӳкрӗм, аран тӑна кӗтӗм.

Сывӑ пул, манӑн пурӑнӑҫ йытӑ пурӑнӑҫӗнчен те усал... Тата Еленӑна салам кала, суккӑр Якура, ямшӑка та салам кала. Ман хуткупӑса никама та ан пар. Санӑн мӑнукку Ванька Жуков. Савнӑ асатте, илме кил".

Ҫырнӑ хутне Ванька тӑваткалласа хуҫлатнӑ та ӗнер пӗр пуса илнӗ конверт ӑшне чикнӗ. Кӑшт шухӑшласан, вӑл перона чернил ӑшне пуҫса илнӗ те: „Асатте ялне", тесе ҫырса хунӑ.

Унтан, пӑртак шухӑшласа илсен, „Стенки Макарча" тесе хушса ҫырса лартнӑ. Ҫыру ҫырма никам та кансӗрлеменшӗн хӗпӗртенипе, вӑл ҫӗлӗк тӑхӑннӑ та, кӗрӗкне тӑхӑнмасӑрах, пӗр кӗпе вӗҫҫӗнех урамалла тухса чупнӑ.

Ӗнер ӑна аш лавки хуҫисем: „Ҫырусене урамри почтӑ ещӗкне яраҫҫӗ, вара унтан вӗсене ямшӑксем, виҫшер лаша кӳлсе, тӗнче тӑрӑх салатса ҫӳреҫҫӗ",—тесе каланӑ.

Ванька малтанхи почта ещӗкӗ тӗлне ҫитсе, хӑйӗн хаклӑ ҫыруне хушӑк витӗр ярса хӑварнӑ.

Тепӗр сехетренех Ванька хытӑ ҫывӑрса кайнӑ. Вӑл тӗлӗк курнӑ... Тӗлӗкре кӑмака курнӑ... Кӑмака

çинче аслашшĕ ларать пек, çара урисене çĕрелле уснă пек. Вăл Ванька çыруне апат пĕçерекен хĕрарăмсене вуласа кăтартать пек... Йытти кăмака патĕнче хÿрине пăтратса çÿрет пек.

---

Ванька çырăвĕ аслашшĕ патне çитнĕ-ши, çитмен-ши?
Ванькăн пурăнăçĕ çинчен каласа парăр.

## Пĕчĕк ача хресчен.

Пĕрре хĕлле, сивĕ чух,
эп вăрмантан тухрăм та
пăхап мала—çул çине.
Ак ерипен ту çине
пĕр пĕчĕк çын лашапа,
вут тиенĕ лавпала
пĕр пĕчченех улăхать.
Чĕлпĕр вĕççĕн лашине
кăртти-картти
турткалать;
йăпăр-йăпăр пускалать,
тем-тем сăмахсем калать.
Лăпăш-лапăш атăпа,
пысăк алса тулĕпе.
Кивĕ шалпар кĕрĕкне
йÿле янă, ярханах.
Хăй тарланă—пиçĕхнĕ,
çамки тăрăх тар юхать.
Пуç тĕлĕнчен тĕтĕм пек
măкăрланса пăс тухать.
— Сывă-и, ачам?—
терĕм те,
—Сан мĕн ĕç пур манпала,
утах хăвăн çулупа,—тет.

— Ай-ай, эсĕ пит хаяр.
Ăçтан турттаран ку вутта?
— Вăрмантан. Атте касать,
эп турттарса тăратăп.
— Сирĕн çемье пысăк-и?
— Çемье пысăк та çавă,
арçын—аттепе эпĕ çех.
— Авă мĕнле иккен вăл.
Эсĕ ху мĕн ятлă-ха?
— Влас ятлă та-ха эп.
— Миçе çулта халĕ эс?
— Эпĕ ĕнтĕ çиччĕре!
Ну-ну, чуманскер! Ут
часрах!—
терĕ хыттăн лашине,
Кăрт-карт туртрĕ
чĕлпĕрне,
йăваланчĕ малалла.

---

Влас миçе çулта пулнă?
Çак сăвăра хăçанхи пурăнăçа кăтартнă?

## Электричество.

Пирĕн яла кăçал электричество кĕртрĕç. Эпир те хамăр пÿрте икĕ лампочка çактартăмăр: пĕрне чă-

лана, теприне сĕтел тĕлне. Пирĕн асатте пурччĕ. Вăл, лампочкăсем çакнине курнă та: çунас çук сирĕн ку хăмпăсем,—тет.

Чăнах та питĕ тĕлĕнмелле япала: краççин та, спичка та кирлĕ мар.

Икĕ лампочкине те çутса ярсан, эпир пурте савăнса кайрăмăр.

Атте калать: „Ак, ачасем, çынсем мĕн тума пултараççĕ: çутти нумай, мăкăрланмасть. Электричество пулсан, вут хутмасан та юрать — кирек мĕнле апат та электричествăпа пиçме пултарать. Уя лашапа сухалама кирлĕ мар — электричествăпа çӳрекен плуг тума пулать, вара вăл хăех çӳрет“,—тет.

Каçпа пирĕн килтисем пурте таçта кайса пĕтрĕç. Манăн тӳсме çук пĕлес килет—çав лампочка ăшĕнчи çинçе хĕлĕх пекки пĕçерет-ши, пĕçермест-ши? Лампочка тĕлне хура пуç туса çыпăçтарнă, пуçĕ çумĕнче пĕчĕк тытмалли пур. Çав тытмаллине сылтăмалла пăртăм та, лампочка çутăлса кайрĕ. Сылтăмаллах тепре пăртăм— сӳнсе ларчĕ.

Тĕлĕнмелле.

Унтан эпĕ лампочкăна пуçĕнчен пăрса кăлартăм. Çутă сӳнчĕ. Эпĕ лампочкăна пăрса лартакан тĕлтен пуçне хыпаласа пăхма тытăнтăм, ман пӳрнесене ярт туртса кайрĕ. Эпĕ хăранипе кăшкăрса ятăм. Пуçĕн çав вырăннех татах пӳрнепе тивертеп, татах туртса каять. Эпĕ тата кăшкăрса яратăп. Атте пӳрте кĕчĕ те: „Мĕн кăшкăратăн эсĕ?“—тесе ыйтрĕ. Эпĕ: „Мана темĕн пӳрнерен тиврĕ“,—тетĕп.

Вара мана атте каларĕ: „Эсĕ çутине сӳнтермесĕрех лампочкăна пăрса кăларнă. Станцирен провод тăрăх электричество токĕ яраççĕ. Сан аллуна çав чĕпĕтнĕ ĕнтĕ. Ӳлĕм мансăр пуçне лампочкăна пăрса ан кăлар, нккек пулма пултарать. Электричество вăйĕ пит хăватлă, унăн токĕ лашана та вĕлерсе пăрахма пултарать“—терĕ.

## Юрăхсăр çĕре тӳрлетни.

Пирĕн ялта пĕр çырма пур. Çав çырма пуçланса кайнине ваттисенчен хăшĕ-пĕри астăваççĕ. Вăл ак çапла пулнă. Пĕр çулне çуркунне шыв питĕ вăйлă кайнă. Çырмасем, пĕвесем тулса çитсен шыв улăхсем тăрăх сарăлса кайнă. Ун чухне шыв темĕн чухлĕ кĕпер çĕмĕрнĕ, картасене юхтарса кайнă.

Çурхи шыв юхса пĕтсен, çĕр типсе çитсен, çынсем ушкăнпа çул юсама тухнă. Çӳрекен çулсене тикĕсленĕ, çулсенчен аяккарах тăракан лупашкасене тĕкĕнмесĕрех пăрахса хăварнă.

Çавăнтан вара çырма пуçланса кайнă. Юсамасăр хăварнă лупашкана çурхи шывпа çумăр шывĕ çулран çул çĕмĕрнĕ, аслăлатса, тарăнлатса пынă. Пурăна-киле пĕчĕк лакăмран мăн шырлан пулса кайнă. Çынсем пăшăрханнă, акакан çĕр çулленех катăлса пынă. Пĕр çуркунне шырлан хĕрринчи вырăнсем акăнмасăрах юлнă та, çавăнтан вара çĕр пăрахăçа тухнă.

1930-мĕш çулта ялта колхоз турĕç. Колхоз çак çĕре юсама шут тытрĕ. Хăшĕ-пĕри: „Ĕçлени сая каять, ан та тивĕр ку çĕре“,—терĕç. Анчах колхозниксем ку сăмаха итлемерĕç. Вĕсем çырмана малашне шыв çурасран çирĕплетме тытăнчĕç. Çуркунне çырма йĕри-тавра йĕркипе йăмра лартса тухрĕç, хĕррисене çапăпа карта тытса çавăрăнчĕç. Тĕллĕн-тĕллĕн чулсем, турпассем тăкса тултарчĕç. Çырмăн айккисем çине кĕркунне улмуççисем лартса хăварчĕç. Çуркунне çитсен, шыва аяккалла уçса ярса тăчĕç. Çырмана урăх çĕмĕрме памарĕç.

Халь çырма пĕтĕмпех çеремленсе ларнă. Çулла унта курăк çӳллĕ çитĕнет. Курăкне çулса утă тăваççĕ. Панулми йывăççисем чылай ӳснĕ. Часах ак улма та пулма пуçлĕ.

## Сĕм вăрманти завод.

Ĕлĕк кунта вĕçĕ-хĕррисĕр сĕм вăрман ӳссе ларнă. Вăрман чăтлăхĕнче тĕрлĕ тискер кайăксем пурăннă.

Унта кашкӑрӗ те, упи те, хӑравҫӑ мулкачи те, чее тилли те пурӑннӑ. Йывӑҫсем ҫине, йывӑҫ хӑвӑлӗсем ӑшне тӗрлӗ вӗҫен кайӑксем йӑва ҫавӑрнӑ.

Вӑрман—пысӑк пуянлӑх. Ҫак вӑрман уссине ытларах курмашкӑн, совет влаҫӗ вӑрманваррине питӗ пысӑк заводсем туса лартрӗ. Халь эсир ҫак вӑрманпа иртсе пырас пулсан, кашни кунах завод трубисем кӑшкӑртнине илтетӗр. Завод кӑшкӑртсан, темиҫе ҫӗр рабочи завода ӗҫлеме утать.

Ҫакӑнти заводсем йывӑҫран темӗн тӗрлӗ хатӗр туса кӑлараҫҫӗ: урапасем, сӗтел-пукансем, шкапсем, урай сармалли хӑмасем, вагон хӑмисем тӑваҫҫӗ; тата юман йывӑҫҫинчен хура тир тумалли имҫам—экстракт тӑваҫҫӗ.

Заводсем пӗрмаях ӳссе сарӑлса пыраҫҫӗ. Унта темиҫе пин рабочи ӗҫлет. Рабочисене пурӑнма пысӑк ҫуртсем лартнӑ. Ӗлӗк чӑтлӑх вӑрман ӳссе ларнӑ ҫӗрте халь хула пулса ларнӑ. Ӑна Ҫӗмӗрле хули теҫҫӗ. Ҫӗмӗрлери заводсем пирӗн Чӑваш республикинчи пысӑк заводсенчен пӗрисем. Унта пӗрлешсе апатланмалли столовӑйсем, клубсем, тӗрлӗ шкулсем, ача площадкисем пур. Больница та ҫавӑнтах. Кунти заводсенче рабочисем ӗҫленӗ чухне электричество вӑйӗпе усӑ кураҫҫӗ. Ҫуртсене электричествӑпа ҫутаҫҫӗ.

## Торф шурлӑхӗсем ҫинчи электростанци.

Мускавран 135 километрта Ленин ячӗпе хисепленекен Шатура ятлӑ пысӑк электростанци ларать. Вӑл пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чаплӑ столицине—Мускава электричество вӑйӗ парса тӑрать.

Халь Шатура электростанцийӗ ларакан вырӑнта авал этем иртсе ҫӳремелле мар мӑк шурлӑхӗсем пулнӑ.

Темиҫе пин гектар таран путлӑхлӑ шурлӑх сарӑлса выртнӑ, начаркка лутра ӳсекен вӑрман пулнӑ.

Хăшпĕр çĕрте, шурлăхсем хушшинчи утравсем çинче, чухăн ялсем ларкаланă.

Шурлăхсем пирки хресченсем çук пурăнăçпа, чирчĕрсемпе аптăраса пурăннă. Çав хушăрах вăл шурлăхсенче пысăк пуянлăх—тем чухлĕ торф запасĕ выртнă.

---

1917 çулта Октябрьте социализмлă революци пулнă. Рабочисем влаçа хăйсен аллине илнĕ. Шуррисене хирĕç юнлă çапăçу пуçланса кайнă. Çĕркăмрăк, нефть кăларакан вырăнсене генералсем хăйсен аллине ярса илнĕ. Промышленноçлă Мускав районĕ хутмалли япаласăр тăрса юлнă.



Хутмалли çук пирки заводсем сӳне-сӳне ларнă. Çуртсенче хутмасăр пурăннă. Электричество лампочкисем тĕксĕммĕн çеç çутатнă.

Кирек мĕнле пулсан та хутмалли япала тупмаллах пулнă.

Çавăн чух вара Шатура шурлăхĕсем çинчен астуса илнĕ.

В. И. Ленин çавăнтах вăл шурлăхран торф кăларма

тытăнма хушнă. Ĕç вĕреме тапратнă. Рабочисем канавсем чава-чава шурлăхри шыва аяккалла юхтарса янă, торф касса кăларма пуçланă.

Чугун çул тăрăх вара çав торф Мускава тата ытти промышленноçлă центрсене кайнă.

Шатура шурлăхĕнче торф нумайрах та нумайрах кăларма пуçланă. Анчах торфа чугун çулпа турттарса çӳрени тупăшлă мар—ун валли вагон ытла нумай кирлĕ.

Вара çапла шухăш тухса тăнă: çав шурлăхра пысăк электричество станцийĕ лартас та пралуксем тăрăх токне кирлĕ çĕре ямалла тăвас, тенĕ.

Темиçе çул иртнĕ. Шатура шурлăхĕнче вара электростанци ӳссе ларнă. Вăл—торфпа ĕçлекен станцисенчен тĕнчере чи пысăкки.

## Пирĕн çĕршыв.

Пирĕн çĕршыв Совет Союзĕ ятлă. Вăл пĕтĕм тĕнчере чи пысăк çĕршыв. Совет Союзĕн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çуран утса тухас тесен—тăватă çул утмалла.

Ку çĕршывра пурăнакан халăхсенчен радио тăрăх: „Сирĕн халь ир-и, кăнтăрла-и?"—тесе ыйтăр-ха. Пĕрисем: „Пирĕн ир",—тейĕç. Теприсем: „Пирĕн кăнтăрла",—тейĕç. Хăшĕсем: „Пирĕн каç пулать",—тейĕç.

„Сирĕн халь çулталăк хушши мĕнле"—тесен, пĕрисем: „Çуркунне",—тейĕç. Теприсем: „Хĕлле",—тейĕç.

„Эсир мĕнпе пуян?—тесе ыйтсан, пĕрисем: „Тырăпа, теприсем—„Çĕрмамăкĕпе", хăшĕсем—„Çĕркăмрăкĕпе, нефтьпе, пулăпа пуян",—тейĕç.

Пирĕн çĕршыв питĕ пысăк, пит аслă. Çĕршывра 70 тĕслĕ ытла халăх пурăнать. Вырăс, чăваш, тутар, мари, мăкшă, узбек, пушкăрт, грузин, казах, латыш, туркмен, якут тата ытти халăхсем те пур.

Çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенче пурăнакансем тĕрлĕ

ĕçпеле пурăнаççĕ. Пĕрисем тырă нумай тăваççĕ, теприсем фабрикăсем, заводсем валли çĕрмамăкĕ акса тăваççĕ, нефть, çĕркăмрăкĕ кăлараççĕ, пулă тытаççĕ. Фабрикăсенче, заводсенче рабочисем государствăра кирлĕ япаласене тăваççĕ.

Тырă акман çĕре — тырă тăратмалла. Пулă çук çĕре—пулă ямалла. Çĕркăмрăк, нефть кăларман çĕре—вĕсене тăратмалла. Фабрикăсенче, заводсенче тăвакан япаласене—кирлĕ вырăнсене—хуласене, ялсене ямалла. Çавăнпа пирĕн çĕршывра çулсем лайăх пулмалла. Çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсем пĕр-пĕринпе яланах çыхăнса тăмалла.

## Ĕлĕкхипе хальхи çулсем.

Ĕлĕк çул çӳреме питĕ йывăр пулнă. Чул сарса тунă çулсем сахал пулнă. Урапапа çӳремелли çулсем тикĕс пулман.

Иĕпе çанталăкра çул çинче урапасем пута-пута ларнă.

Чугун çулсем пулман, инçе çула е урапапа, е юланутпа çӳренĕ.

Каярахпа этем пăс вăйĕпе çӳрекен машинăсем шухăшласа кăларнă. Типĕ çĕр тăрăх çӳреме чугун çулсем, поездсем тунă, шыв тăрăх çӳреме пароходсем тунă.

Анчах этем кунпа чарăнса тăман. Вăл сывлăшра вĕçмелли майсем шыранă. Малтанах пысăк шар ăшне ăшăтнă сывлăш тултарса вĕçсе пăхнă. Ăшăтнă сывлăш, сиввинчен çăмăлтарах пирки, шара çӳлелле хăпартнă. Аяла анас пулсан, вĕри сывлăша кăларса ярса аннă. Каярахпа аэроплансем тума та вĕреннĕ.

Халь çул çӳреме нитех те аван. Поездпа, пароходпа е аэропланпа темĕнле инçе çĕре те часах çитме пулать.

Урапапа е автобуспа çӳреме тикĕслесе юсанă, чул сарнă çулсем аван. Вĕсемпе темĕнле çанталăкра та

çӳреме пулать. Хуларан яла, колхоза тĕрлĕ таварсем куçарма, ялтан хулана тырă, тĕрлĕ çимĕç турттарма çăмăл. Лайăх çулсем хулапа ял çыхăнăвне çирĕплетсе пыраççĕ.

Рабочисем, колхозниксем лайăх, культурăллă çулсем тăвас ĕçре хастарлă ĕçлеççĕ. Мĕнпур ĕçхалăхĕ лайăх çулйĕршĕн кĕрешет.



## Автобуспа.

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
çил пек вĕçтеретпĕр.
Сывă пултăр
Шупашкарĕ,
кĕç каллех килетпĕр.

Хула юлчĕ хыçала,
сăрт хыçне пытанчĕ.
Ларса куртăм кăçалах,
ларасса шанманччĕ.

Чуп, автобус, хытă
чуп—
эпир пит васкатпăр.
Сăпкари пек, пынă чух
канлĕн ярăнатпăр.

Çип пек тӳрĕ çулĕпе
эпир вĕçтеретпĕр.
Акă Канаш хулине
кĕрлесе кĕретпĕр.

## Канашран Шупашкара.

Ĕлĕк Канашран Шупашкар хулине, 80 километр хушши, лашапа çӳренĕ. Çулсем питĕ начар пулнă пирки Канашран Шупашкара икĕ талăка яхăн каймалла пулнă. Çуркунне, çул татăлсан, Канашран Шупашкара çитме май та пулман.

Совет влаçĕ Канашпа Шупашкар хушшинче ав-

тобус çулĕ хыврĕ. Çула тăршшĕпех чул сарса тухнă. Çулăн икĕ айккипе йывăçсем лартса тултарнă. Çак çул тăрăх автобуссем темĕнле çанталăкра та пĕр чăрмавсăр çÿреççĕ. Çăмăл автомобильсем Канашран Шупашкара е Шупашкартан Канаша сехет çурăра çитеççĕ. Автобуссем виçĕ сехет хушшинче çитеççĕ.

Халĕ тата Канашран Шупашкара чугун çул хывнă. Канашпа Шупашкар хушшинче поездсем çÿреççĕ.

Чăваш республикинче чугун çул туни республикăн хуçалăхĕпе культурине вăйлатса ярас ĕçре пысăк майсем уçса пачĕ. Республикăн тĕп хулине районсемпе çыхăнтарчĕ. Чăваш халăхне, уйрăмах колхозниксене, колхозла-советла суту-илĕве вăйлатма май пачĕ.

Чăваш республики Совет Союзĕнчи ытти хуласемпе лайăхрах çыхăнать.

Пирĕн республикăра чугун çул туни партин Центральный Комитечĕ, Сталин юлташ тата совет правительстви пирĕншĕн тăрăшнине тата тепĕр хут кăтартса парать.

## Турксиб.

Çĕрмамăкĕ кăнтăр енче, ăшă çĕрте ÿсет. Кăнтăр енче çĕрмамăкĕ акма юрăхлă ăшă çанталăклă çĕршывсем питĕ нумай. Çĕрмамăкне Кавказра та, Туркестанра та, Казах республикинче те акса тăваççĕ. Анчах çĕрмамăкне ăшă çеç мар, шыв та кирлĕ.

Кăнтăр енче, çав вырăнсенче, шыв нумай мар. Çумăр та сайра çăвать. Шыв сахал пирки çĕрмамăкне те çителĕклĕ ÿстерме çук. Çумăр çуман пирки вĕсене шывпа шăвараççĕ.

Туркестанран аякра Çĕпĕр çĕршывĕ сарăлса выртать. Çĕпĕр пысăк. Унта тусем те пур, вăрман та

нумай, хирсем те питĕ аслă. Çĕпĕрте çĕрмамăкĕ ӳсмест, анчах тырă пит аван пулать.

Туркестанра талккăшпех çĕрмамăкĕ акса тусан, тыррине Туркестана Çĕпĕртен кӳрсен пит аван пул-



малла. Апла тума Çĕпĕртен Туркестана чугун çул хывмалла. Хушши вĕсен сахал мар, шăпах 1500 километр.

Анчах большевиксем тума пултарайман ĕç çук. Чугун çула тума шутланă та, тунă та. Вăл çула Турксиб теççĕ.

Халь Туркестанра талккăшпех çĕрмамăкĕ акса тăваççĕ. Тырра Çĕпĕртен кӳреççĕ. Çĕпĕртенех çурт тумалли хатĕрсене турттараççĕ. Пирĕн социализмлă хуçалăх çапла планпа малалла кайса пырать.

## Поезд.

Рельссем янăраççĕ,
рельссем чăнкăртатаççĕ.
Поезд çил пек ыткăнать,
поезд малаллахваскать.

Станцине ак çывхаратпăр,
станцине çитсе тăратпăр.
Анăр, камăн анмалла,
пирĕн инçе каймалла.

Вĕç эс, поезд, вĕç эс
вирлĕ,—
пысăк хăвăртлăх халь
кирлĕ.
Вĕç-ха, вĕç эс хăвăртрах,
час-час-час, çитер часрах.

Ак уй-хир, вăрман, ак
хăйăр.
Чуп-ха, чуп эс, хурçă
айăр,
çиллĕн-тăвăллăн вĕçтер!
Час-час-час, часрах çитер!

Поездпа эпир пыратпăр,
пит васкатпăр, пит васкатпăр.
Поезд, çиçĕм пек вĕçтер!
Эй, пире часрах çитер!

## Канаш станцинче.

Пирĕн ялтан инçех мар чугун çул иртсе каять. Çавах та эпĕ поезда патĕнчен курманчĕ. Пĕрре, ыраш вырнă вăхăтра, вăрман уçланкинче поезд кăшкăртса çăра тĕтĕм кăларса иртсе кайнине çех курнăччĕ.

Пĕрре атте Канаш станцине кайма хатĕрленет. Кутаранччен эпĕ аттене, станцине илсе кай-ха тесе, темиçе те аптăратнă. Халь вăл эпĕ ыйтичченех: „Ыран ирех станцине каятăп,—пыратăн пулсан, иртерех вырт, çывăрса юлăн“,—терĕ.

Тепĕр кунне эпĕ кăвак çутă киле пуçласанах вăрантăм. Хăпăл-хапăл сиксе тăратăп та: „Атте, час каятпăр-и?“—тетĕп. „Час каятпăр. Амăшĕ, сан апат хатĕр-и? Апат çикелес те, ирхи сулхăнпа уттарас“,—терĕ атте.

Икĕ километра яхăн вăрманпа кайрăмăр. Вăрмантан тухсан пĕр кĕпер курăнса кайрĕ. Чугун çул тĕлне çитрĕмĕр. Чугун çулăн икĕ айккипе те канав чавса тухнă. Кĕпер урлă чугун çул тепĕр енне каçрăмăр та сулахаялла пăрăнтăмăр. Чугун çулĕ, станцине çывхарнăçемĕн, йўпленсе уйăрăла-уйăрăла каять.

— Акă тавар станцине çывхаратпăр, кунта эсĕ курман япаласем пулĕç-ха,—терĕ атте. Чăнах та, пирĕнтен инçех те мар пĕр хĕрлĕ сăрпа сăрланă завод

труби пек çурт ларать: çурт тесен—çурт мар, силос башни тесен—силос башни мар.

— Ку—поезд валли шыв хăпартмалли. Шывне вăл Çавалтан илет. Шывĕ çĕр айĕпе чугун труба тăрăх килет. Акă çул çинче вагонсем лараççĕ. Вĕсене паровоз туртса çӳрет. Авă хашлатнă сасă илтĕнет. Часах поезд килет,—терĕ атте.

Мана чугун çултан хĕвелтухăç енче тавар станципе юнашарах пуçланса каякан пысăк çуртсемлĕ хула сарăлса ларни тĕлĕнтерчĕ. Эпĕ аттерен: „Çакă-и ĕнтĕ Канаш хули?“—тесе ыйтрăм. Мана атте: „Ку—çĕнĕ Канаш. Кунта нумай пулмасть вагонсем юсакан пысăк завод туса лартрĕç. Пысăк çуртсем—вĕсем завод çурчĕсем. Унта вагонсем юсаççĕ. Икшер хутлă пĕр пек çуртсенче заводра ĕçлекен рабочисемпе служащисем пурăнаççĕ“,—терĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, хайхи поезд тавар станцине хашлатса та çитрĕ. Пĕр хура тĕслĕ паровоз пĕчченех темиçе вагон туртса пырать. Тавар станцинче поезд кăшт çеç тăчĕ те тепĕр станцине пырса чарăнчĕ. Эпир те станцине çитсе тăтăмăр. Станцире çынсем темĕн чухлĕ, чупкаласа çӳреççĕ. Пĕрисем поезд çинчен аннă та хуланалла утаççĕ. Теприсем вагон çине лараççĕ.

Станци çурчĕ çумĕнче пĕр чан çакăнса тăрать. Çак чана пĕр хура тумтирлĕ çын иккĕ танлаттарчĕ. Çынсем васкаса вагонсем ăшне кĕрсе ларчĕç. Çавăнтах пĕри шăхличпе ши-ик! шăхăртрĕ. Поезд станцине кĕнĕ чухнехи пекех хыттăн çухăрса ячĕ те тапранса кайрĕ.

Эпир больницăна кĕрсе тухрăмăр тата кооператива кĕрсе таварсем илтĕмĕр те килелле кайрăмăр.

## Сигнал.

Пĕрре чугун çул çинчи сторож Çемен вăрманпа пырать. Хĕвел анса ларма пуçланă. Шăп. Пĕр сасчĕвĕ те илтĕнмест. Акă Çемен чугун çул патне çыв-

харса пырать. Сасартăк вăл тимĕре тимĕрпе шакканă сасса илтет.

Вăрман уçланкине тухрĕ те чугун çул çине пăхать. Чугун çул çинче пĕр çын тăра парать. Акă çав çын рельсăна лумпа хирчĕ те пăрса пăрахрĕ. Çемен çын патнелле васкаса чупать. Кăшкăрас тет—сасси тухмасть. Рельсăна лумпа хирекен çынĕ вăрманалла пĕрех тапса сикрĕ.

Çав вăхăтра Çемен аякран пассажир поезчĕ килнине курчĕ. Мĕн тăвас? Рельса çара алăпа кăна выранне лартма çук. Поезд çывхарсах пырать. Акă



вăл шăхăртнă сасă та илтĕнчĕ. Пĕр-икĕ минутăран поезд килсе те çитмелле.

Çемен, ним тума аптăраса, пăрса хунă рельс патне чупса пычĕ. Рельс патĕнче патаксем выртаççĕ. Пĕр патакне ярса тытрĕ те поезда хирĕç чупа пуçларĕ. Акă ĕнтĕ, поезд çывхарнипе, рельссем те чĕтренме пуçларĕç. Çеменĕн урăх чупма вăйĕ те пĕтсе çитрĕ. Мĕн тăвас?

Сасартăк Çемен пуçне пĕр шухăш пырса кĕчĕ. Вăл çĕлĕкне хыврĕ, кĕсъинчен сăмса тутри туртса

кăларчĕ. Унтан çĕçĕ кăларчĕ те хăйне сулахай хулĕнчен çĕçĕпе чикрĕ. Юн сирпĕнсе тухрĕ, вĕри юн алă тăрăх юхма пуçларĕ. Çемен тутăра хăй юнĕпе йĕпетрĕ те юнпа хĕрелнĕ тутăра патак çумне çыхрĕ.

Çемен чугун çул хĕрринче хĕрлĕ тутăрпа сулласа тăрать. Поезд çывхарса пырать.

Çеменĕн çĕçĕпе каснă хулĕнчен юн çаплах юхать. Çемен хулне аякки çумне пăчăртать. Юнне юхма чарасшăн, анчах чараймасть. Хăй шухăшлать: „Тўссе тăраймастăп, ялава ўкеретĕп пулĕ“,—тет. Акă унăн куçĕ хуралса килчĕ те, вăл ялавне çĕре ўкерчĕ. Анчах машинист Çеменĕн ялавне курма ĕлкĕрчĕ.

Поезд чарăнчĕ. Вагонсенчен çынсем чупса тухрĕç. Çемен патне кĕпĕрленсе пычĕç. Пăхаççĕ—çын выртать, ун çумĕнче патак çине çыхнă юнлă тутăр.

## Абросимов пионер.

Пĕрре Абросимов пионер, хăй ялĕнчен тепĕр яла шкула кайнă чухне, рельс татăлса кайнине курнă. Çав вăхăтра унтан ытла аякрах та мар поезд пынă пулнă. Абросимов нумай шухăшласа тăман, мăйĕнчи хĕрлĕ галстукне салтса илнĕ те патак çумне çыхнă. Унтан çак хĕрлĕ галстукран тунă ялавпа вăл поезда сигнал панă.

Поезд чарăннă.

Поезд çинчен рабочисем аннă та чугун çула юсанă.

Çапла Абросимов пионер поезда çĕмĕрлесрен хăтарнă.

## Почтăпа журнал килни.

Митюк ялта пурăнать. Акă вăл халь çеç шкултан таврăнчĕ. Вăл сăхманне хывма та ĕлкĕреймерĕ, алăк уçăлса кайрĕ те пўрте почта салатса çўрекен пырса кĕчĕ.

— Касаткин Митюк кунта пурӑнать-и?—тесе ыйтать.

Митюк амӑшӗ хӑраса кайрӗ.

— Ёнтӗ Митюк каллех темӗн тунӑ пулмалла,—тет.

— Нимӗн те туман,—сӑмах хушрӗ почта салатакан,—акӑ ун ячӗпе журнал килнӗ.

— Митюк ячӗпе-и? Ӑна мар пуль?

— Митюк ячӗпех. Акӑ ҫырнӑ: Комсомол урамӗ, 7-мӗш ҫурт, Касаткин Митюкне.

Почта салатакан тухса кайрӗ. Митюк журнала ярса тытрӗ те вулама, картинӑсене пӑхма тытӑнчӗ. Хӑй шухӑшлать: „Мана Мускавра мӗнле пӗлеҫҫӗ-ха вара",—тет.

Апат ҫинӗ чухне Митюк чӑтса тӑраймарӗ, ашшӗнчен ыйтрӗ:

— Атте, мана Мускавра пӗлеҫҫӗ-им?—терӗ.

— Пӗлмесӗр, сан ҫинчен ҫеҫ шухӑшлаҫҫӗ унта,—терӗ ашшӗ кулкаласа.

— Мускавра ман адреса мӗнле пӗлнӗ-ха?

— Пӗлместӗп, ачам. Кам та пулин сан адреса ҫырса панӑ пулмалла. Унсӑрӑн почта журнала илсе килмӗччӗ.

— Мускавран мӗнле илсе килеҫҫӗ-ха ӑна?

— Чугун ҫулпа илсе килеҫҫӗ.

— Чугун ҫул мана ӑҫтан пӗлет-ха?

— Чугун ҫул сана пӗлмест. Мускавра журнал ҫине адрес ҫырса ҫыпӑҫтараҫҫӗ. Вара журналсене почтӑна кайса параҫҫӗ. Почтӑра кашни журнал ӑҫта каяссине пӑхаҫҫӗ те, суйла-суйла, чугун ҫул тӑрӑх тӗрлӗ енне салатаҫҫӗ. Акӑ сан адреспа та илсе килчӗҫ. Анчах адреса яланах тӗрӗс ҫырмалла. Тӗрӗс ҫырмасан, хаҫат-журнал та, ҫыру та ҫитеймест,—терӗ ашшӗ.

Тепӗр кунне Митюк Хӗрлӗ Ҫарта тӑракан пиччӗшӗнчен ҫыру илнӗ. Пиччӗшӗ Митюка: сан валли журнал ҫырӑнса ятӑм,—тесе ҫырать.

## Почтальон.

Пар лашапала
шăнкăравпала
сикки сиктерсе,
çил пек вĕçтерсе,
почтальон килет,
хаçатсем кӳрет.
Ман атте валли
çыру та пур, тет,
аслă пиччерен—
пограничникрен.

## Çак çыру çитет-и?

Мĕкĕте çыру çырчĕ те, ăна конверт ăшне чиксе, çапла адрес çырчĕ:

*Шыв хĕрринчи яла, кивĕ пӳрте — Йăкăнат мучие.*

**Туппине пĕл.**

*Таса уя хура вăрлăх*
*йĕрлесе акса пырăп.*

## Радио юратакан.

Йăкăнат мучин Петĕрĕ шкултан хашкаса чупса çитрĕ те:—Атте, итле-ха, эпир паян шкулта радио çинчен вуларăмăр, радиона ăна килте те лартма пулать, иккен,—тет.

— Пирĕн ялта радио йышăнакан аппарат пур. Аптăрамастпăр. Пӳртре ларнă çĕртех Мускаври хыпарсене итлесе ларăпăр. Кирлĕ хатĕрсене илме анчах кăшт укçа кирлĕ. Хатĕрсем пирĕн вĕрентекенĕн пур. Майлаштарса лартма анчах пĕлмелле. Ăна эпĕ халĕ хам та тума пултаратăп. Эпир паян радиоприемник çинчен çырнă кĕнекене вуларăмăр. Унта пĕтĕмпех каланă. Ăнланмалла каланă,—тет Петĕр.

Петĕр ахаль ларма юратмасть, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Ун аллинче пур ĕç те выляса анчах тăрать. Мĕн ĕçе тытнă, ăна тăвать. Тытăнчĕ ку радио лартма:

пăрипе те шăтарать, мăлатукĕпе те шаккать. Ăна Санюк юлташĕ пыра-пыра пулăшать. Васкаççĕ, хăйсен ĕçне часрах пĕтересшĕн.

— Пăрах, Петĕр, мăлатукна, вăхăта усăсăр ан ирттер. Мĕн аппаланан çав пĕлмен ĕçпе,—тет ашшĕ.

Петĕр ашшĕпе килĕшмест.

— Атте, эпĕ пионер вĕт. Пуçланă ĕçе вĕçне çитересех пулать. Пĕр тытăннă ĕçе пĕтермесен, ачасем те кулĕç хамран, çын кулли пулас марччĕ... Туса пăхман япалана кĕнеке çине те çырас çук, пĕр пуçланă ĕçе туса пĕтересех ĕнтĕ,—тет Петĕр ашшĕне, мăн çын пек çыпăçуллăн.

Хайхи канмалли кун ирхине Петĕрсен пӳрчĕ тăрринче пралук хĕвелпе йăлтăртатать, çилпе хумханать. Кăнтăрла та çитрĕ. Ним сас-чĕвĕ те илтĕнмест. Петĕр хуйăха ӳкрĕ. Мĕнле-ха ку, йăнăш пулчĕ-ши-мĕн? Хăй кĕнеке çине пăхса илет. Тĕрĕсех лартнă-çке. Мĕншĕн илтĕнмест-ха тата?

Кил-йыш апата ларсан, килтисем Петĕртен тăрăхласа кулса та илчĕç.

— Мĕн пулчĕ?—Петĕр сиксе тăчĕ. Куçĕ-пуçĕ шăрçа пек вылянать.

— Чим-ха, чим кăшт сик-ха! Анне, анне, итле-ха!—тет Петĕр, аллинчи кашăка пăрахса.

Ашшĕ, илтсе тĕлĕнсе кайнипе, çиме чарăнчĕ; ывăлĕ лартнă трубкăран сăмахсем илтĕнме пуçларĕç.

## Вĕçекен карапсем.

Карап тесен, пире тинĕсре ишсе çӳрекен карап аса килет. Анчах сывлăшра вĕçекен карапсем те пур. Вĕсене дирижабль теççĕ. Дирижабль çӳлтен вĕçсе иртсе кайнине курнă çынсем халĕ те сахал мар ĕнтĕ.

Çынсем ĕлĕкрех çăмăл сывлăш тултарнă шарпа—аэростатпа çӳле çĕкленме вĕреннĕ. Дирижабль те аэростат йышши япалах, анчах унăн хӳре тытса пымалли тата моторсем те пур. Унпа çĕкленсе, ăçталла каяс тенĕ унталла вĕçме пулать.

Дирижабль пит инçе вĕçме пултарать. Дирижабль питĕ йывăр япаласене вырăнтан вырăна куçарса кайма пултарать.

Дирижабльсемпе наукăшăн кирлĕ сăнавлă вĕçевсем те тунă.

Дирижабльсемсĕр пуçне халĕ сывлăшра вĕçекен урăх йышши карапсем—пит те вăйлă пысăк само-




лётсем пур. Вĕсем тăватшар моторлă, 8—10 тонна таранччен япала тиесе сывлăша çĕкленсе вĕçме пултараççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче вĕсем çарсене, вăрçă хатĕрĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ. Çарпа пĕрле тем пысăкĕш танксене тиесе кайса çĕр çине антарса хăвараççĕ.

Юлашки вăхăтра пирĕнпе союзлă Америка çарĕнче «вĕçекен крепость» текен пысăк самолётсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем çинче тупăсем, пулемётсем, бомба пăрахмалли хатĕрсем пур. Самолётне пуля час шăтарса кĕмелле мар броньăпа витнĕ.

## Трахома çинчен мĕн пĕлмелле.

### Трахома—ерекен чир.

Трахома—ерекен чир.

Трахома ерсен, куç хупаххисене шал енчен шатра тухать. Куç шывланакан, пўрленекен, хĕре-

лекен пулать. Куç хупаххисем тăртанаççĕ, кĕçĕтеççĕ.

Трахомăллă çыннăн аллисем куç пўрĕпе вараланаççĕ. Çав вараланчăк алăпа тытнă япаласем урлă трахома тепĕр сывă çынна ерме пултарать.

Пĕрмай юхакан пўрлĕ куççулĕпе трахомăллă çын алшăллисене, çытар-минтер пичĕсене варалать. Трахомăллă çынпа пĕр алшăллипе пит-куçа шăлса, пĕр çытар-минтер çинче выртса тăрсăн, сывă çын хăй куçне трахома ертет.

Трахома пурне те ерме пултарать.

Çамрăка та, ваттине те вăл тиркемест.

## Куçа эмеллесен—трахома пĕтет.

Трахома ернине сиссенех, куçа эмеллеме тытăнмалла. Куç хупаххисене шатра тухнă пулсан, çав шатрасене пĕтерме тăрăшмалла. Эрнере ик-виçĕ хут ешĕл сенкерпе сĕртерме больницăна çўрес пулать. Ялсенче трахомăпа кĕрешекен пунктсем пур. Унта вăл ĕçе вĕреннĕ сестра ĕçлет. Трахома ерсен, унта çўремелле.

## Трахома ересрен сыхланса пурăн.

Куç—этемĕн кунçулĕ. Куçа кирек хăçан та таса тытма тăрăш.

Куçна никама та ан тĕкĕнтер, ан сĕртĕнтер.

Пит-куçа, алсене час-часах çуса, таса тытмалла.

Кашни çыннăн уйрăм алшăлли пулмалла.

Пит-куçа çăвара шыв хыпса çума юрамасть.

Уйрăм çытар-минтер çинче выртса тăмалла. Çытар-минтер пичĕсем яланах таса пулччĕр.

Мунчара шыва уйрăм савăт çине илсе çăвăнмалла.

Куçа çўпĕ кĕрсен, чĕлхепе çуллаттарса кăларма юрамасть,—таса, çемçе тутăрпа шăлса кăлармалла. Çўпĕ кĕнипе куç ыратсан, ăна больницăна кайса кăтартмалла.

Куçа çара алăпа шăлмалла мар. Куçа ăнсăртран шăлмалла пулсан, аллăн тӳнтер енĕпе кăна тĕкĕнсе илмелле.

Куç пăсăлнине сиссенех, вăхăта ирттермесĕр, больницăна кайса кăтарт. Чирлĕ куçа эмеллеме ан ӳркен.

## Земски начальникпе паллашни.

Унеççи хăйĕн упăшки патша вăрçинче вилни çинчен хыпар илнĕ. Нумай макăрчĕ Унеççи хăйĕн упăшкишĕн. Унтан шухăшларĕ: „Патшапа турăшăн вилнĕ теççĕ, апла пулсан, мана патшан пулăшмалла".

Анчах, пулăшас вырăнне, куланай тӳлеменшĕн Унеççин юлашки икĕ сурăхне илсе кайрĕç. Унеççи хăйĕн 5 çулхи ачине, Ваççана, çавăтрĕ те вулăса кайрĕ. „Хуть, тăлăха хĕрхенсе, сурăхсене каялла парĕç-и, ашшĕ патшапа турăшăн пуçне хунă вĕт"—тесе шухăшласа пырать Унеççи çул тăршшĕпе.

Вулăс кантурне пырса кĕчĕ. Сĕтел хушшинче темле этем ларать. Кăкăрĕ çинче ылттăн хĕрес. Тиекпе старшина ылттăн хĕреслĕ этем умĕнче кĕтесре тăраççĕ.

— Кам ку?—тесе ыйтать Унеççи сторожран.

— Земски начальник,—тет лешĕ.

„Килни лайăх пулчĕ иккен",—тесе шухăшлать Унеççи. Хăй Ваççине малалла тĕртет.

— Мĕн кирлĕ?—терĕ земски начальник вырăсла. Унеççи вырăсла пĕлмест, анчах начальник хăйпе калаçнăран хĕпĕртерĕ, ачи çине кăтартса тем мăкăртатма пуçларĕ.

— Ачун çĕлĕкне хыв!—тет начальник. Каллех ăнланаймарĕ Унеççи, анчах курать: леш тем çиленме пуçларĕ.

— Çĕлĕкне хыв, çĕлĕкне,—тет сторожĕ, чăвашла. Ăнланмасть мĕн каланине Унеççи, хăйĕннех перет.

— Патшашăн, турăшăн вилчĕ вĕт упăшка,—тет.

— Калаççĕ сана, çĕлĕкне хыв тесе!—урса кайрĕ земски начальник.—Курмастăн-и-мĕн ху умăнта кам иккенне!—тесе çапрĕ кăкăрĕнчен хăйне хăй.

Старшина, хăвăртрах ун çĕлĕкне хывас тесе, Унеççи ачи патне, ывтăнчĕ. Хăй ачине тем тăвасран хăраса, Унеççи старшинана тĕксе ячĕ.

— Хупса лартас пĕр тавлăка!—тискер сасăпа кăшкăрса ячĕ земски начальник. Старшинапа тиекĕ Унеççие аларан тытса çавăтса кайрĕç. Пĕр пĕчĕк вите пекскерне кĕртрĕç те, алăкне питĕрсе хăварчĕç. Çав вăхăтрах килкартинче Ваçça макăрни илтĕнчĕ. Унеççи тўсеймесĕр алăка шаккама, чўрече решеткисене турткалама тытăнчĕ.

Алăк тăруках уçăлса кайрĕ. Алăк умĕнче земски начальникпе урядник тăраççĕ. Унеççи, çав тери хăрушă эteme курсанах, алăк патнелле ыткăнчĕ, анчах урядникĕ тытса чарчĕ. Земски начальникĕ темскер каларĕ те тухса кайрĕ. Урядник Унеççие хăйĕн нухайккипе темиçе хут çапса илчĕ. Витине каллех питĕрсе хăварчĕ.

Çапла паллашрĕ Унеççи патша чиновникĕпе—земски начальникпе. Анчах Унеççин ăна тепре курмалла пулчĕ. Революци хыççăн вулăса Хĕрлĕ гварди отрячĕ килнĕччĕ. Унеççи, вулăса ĕçпе пынăскер, земски начальнике тытса кайнине курса юлчĕ.

## Ёлкăна чĕнни.

Вăйă-кулă пулĕ тулăх,
уççăн янрĕç юрăсем.
Чаплă пултăр пирĕн ёлка,
пурте, пурте килĕрсем.

Вăрăм чăрăш, ешĕл чăрăш
тĕлĕнмелле çутăлать.
Мĕнешкел вăл çĕклентерчĕ
пирĕн çамрăк кăмăла.

Юрлама та, ташлама та
маçтăр эпир, ачасем.
Чаплă пултăр пирĕн ёлка.
пурте, пурте килĕрсем.

# Владимир Ильич Ленин.

Октябрьти социализмлӑ революци пулнине уявламалли кунсем ҫывхараҫҫӗ. Урокра учительница ачасене Владимир Ильич рабочисене кӗрешӗве епле ертсе кайни ҫинчен калама пуҫларӗ те ыйтрӗ:

— Сире килте Ленин ҫинчен мӗн те пулин каласа панӑ-и?—терӗ.

Оля аллине ҫӗклерӗ те калать:

— Мана атте Ленин ҫинчен нумай каласа панӑ. Вӑл хӑй Ленина курнӑ.

— Каласа пар-ха эппин, мӗн илтнӗ эсӗ.

Оля калама пуҫларӗ те, пит ӑнланмаллах калаймасть. Пӗчӗккӗ-ха вӑл, йывӑр ӑна.

Учительница калать:

— Акӑ эпир сан аҫуна пирӗн пата вечера килме ыйтӑпӑр, вӑл каланине пурте итлесе юлччӑр. Эсӗ мӗнле шутлатӑн, килӗ-ши вӑл?

— Килет, килет. Вӑл хирӗҫ пулмӗ,—тет Оля.

---



Оля ашшӗ вечера чӑнах та пычӗ. Вӑл пӗр аллӑ ҫула ҫитнӗ рабочи, ҫӳҫӗсем шуралма тытӑннӑ, сӑран пиншакпа. Вӑл ачасем умне тухса тӑчӗ те калама пуҫларӗ:

— Ну, Советлӑ Республикӑн ҫамрӑк гражданӗсем, итлес терӗр пулсан—итлӗр ӗнтӗ.

Ку ӗҫ ӗлӗк, пӗр вӑтӑр ҫул ӗлӗкрех пулнӑ. Эпӗ ун чухне ҫамрӑкрах ача, механически заводра ӗҫлеттӗм. Аттем ҫукчӗ: ӑна заводра машина амантса вӗлернӗ. Манпа пӗрле анне йӑмӑк тата пӗчӗк шӑллӑм пурӑнатчӗҫ.

Пурăнасса питĕ хĕсĕк пурăнаттăмăр: çемьипех пĕр пÿлĕмре, подвалта. Стенасем нÿрĕччĕ, чÿречесем пĕчĕк çеçчĕ. Пирĕн пÿлĕме хĕвел нихăçан та кĕместчĕ. Тĕттĕм, пăчă çĕрте пурăнаттăмăр.

Кашни кун, ир-ирех, тул çутăличченех, гудок вăрăммăн янратчĕ, рабочисене завода чĕнетчĕ. Эпир вара часрах, куçа сăтăркаласа, сиксе тăраттăмăр. Анне эпир тăричченех ура çинчеччĕ, васкаса самовар лартатчĕ, кăмакана апат лартатчĕ. Ыраш çăкăрĕпе, сахăрсăрах, чей ĕçеттĕмĕр те часрах ĕçе утаттăмăр. Ĕç питĕ йывăрччĕ, кунне вуншар сехет ĕçлеттĕмĕр. Ĕçленĕшĕн пире пуссемпе кăна тÿлетчĕç. Пире—пуссем, хуçана—усламсем.

---

Пĕрре пирĕн заводра рабочисем хусканса кайрĕç. Хуçаран ĕç укçине хăпартма ыйтма пуçларĕç. Ăçта унта! Хуçа итлесшĕн те мар. Эпир фабрика картишне пухăва пуçтарăнтăмăр. Пĕр рабочи тухрĕ те калать:

— Ĕç укçине хушса памасăр ĕçе тухмастпăр!—тет.

Эпир итлетпĕр, унпа килĕшетпĕр, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕссине калать. Сасартăк кăшкăрса ячĕç:

— Казаксем! Казаксем!

Юланутлă казаксем вĕçтерсе çитрĕç те пире нухайккăсемпе çаптарма тытăнчĕç. Мана çурăмран икĕ хутчен тăсса илчĕç. Нухайккапа çапнă тĕлтен кĕпе çĕçĕпе каснă пек çурăлса кайрĕ, ÿт çиңе юнлă çĕвĕсем пулса юлчĕç. Халăх ăçта килнĕ унта тарса саланчĕ. Пĕр çирĕм çынна казаксем тытса тĕрмене хупрĕç... Çапла пулнă пирĕн пурăнăç.

---

Пĕррехинче мана манăн аслă юлташ чĕнчĕ.

— Каçалапа ман пата пыр,—тет.

Кайрăм эпĕ ун патне. Унта пĕр вунпилĕк çын пухăннă. Пуринчен ытла рабочисем. Вĕсем хушшинче пĕр пысăк çамкаллă, çивĕч куçлă çын ларать. Вăл пирĕнпе калаçма тытăнчĕ:

— Эсир чухăн, мĕншĕн тесен сирĕн ĕçпе хуçа пуйса пырать. Хуçасене хăваласа яриччен сирĕн пурăнăç çăмăлланмасть. Хуçасене сирпĕтĕр! Хăвăра валли

ĕçлĕр, килĕшсе, пĕрлешсе, алла-аллăн тытăнса ĕçлĕр,—тет.

Эпир ăна калатпăр:

— Ку питĕ тĕрĕс! Анчах хуçасене епле хăваласа ямалла-ха? Полици вĕсем майлă. Патша хăй те вĕсем майлă,—тетпĕр.

Вăл пире ответ парать:

— Малтан патшана хăваласа ямалла. Апла тумашкăн рабочисен пĕрлешсе хăйсен партине тумалла. Пĕтĕм рабочисем сиксе тăрсан, патша вĕсемпе нимĕнех те тăваймĕ,—тет.

Итлетĕп те: „Тĕрĕс калать вăл"—тесе шухăшлатăп хам ăшăмра.

Кайран тин пĕлтĕм вара—çав çын Ленин пулнă иккен. Çапла эпĕ пĕрремĕш хут Ленина куртăм.

---

Çакăн хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Германипе вăрçă пуçланчĕ. Нумай халăха вăрçа ячĕç. Вăрçăран каялла хăшĕ алăсăр, хăшĕ урасăр таврăнаççĕ. Нумайĕшне çĕр айне те чикнĕ.

Ун чухне мана та салтака илчĕç. Мĕншĕн çапăçнă-ха? Патшашăн, помещиксемшĕн, фабрика хуçисемшĕн.

Акă пирĕн хушăра аларан алла листовкăсем çӳре пуçларĕç. Вĕсем çинче: „Вăрçă кирлĕ мар! Пуянсене хирĕç кĕрешĕр!"—тесе çырнă.

Çав листовкăсене Ленин ярса тăнă.

Вăл ун чухне ют çĕршывра пурăннă, унтанах пире вĕрентсе тăнă.

---

Виçĕ çул хушши çапăçрĕç. Юлашкинчен тӳсме çук пулса çитрĕ. Рабочисем тапранчĕç, салтаксем тапранчĕç. Ленин пире мĕнле вĕрентнĕ, çавăн пекех турĕç.

Патшана хăваласа ячĕç, анчах власть тӳрех рабочисен аллине кĕреймерĕ. Ун чухне Вăхăтлăх правительство сиксе тухрĕ. Вăл ĕççыннисене усă кӳмерĕ: вăл капиталистсем майлă тăчĕ. Акă хирĕçӳ-тавлашу тухса кайрĕ: хăшĕ-пĕри Вăхăтлăх правительствăшăн тăрать, хăшĕ-пĕри ăна хирĕç.

Куратăп—мĕнпур рабочисем пĕр çын пек кар тăрса тухмасан, ĕç тухас çук. Вара большевиксен партине çырăнтăм. Партире ĕç питĕ нумайччĕ. Мĕнпур фабрикăсенче, заводсенче пухусем пухса, эпир рабочисене: „Пĕрлешĕр, юлташсем! Хăвăрăн рабочисен партийĕ тавра чăмăртанăр! Кĕрешӳ тин пуçланать-ха“—тесе ăнлантараттăмăр.

Кăшт пурăнсан, илтетпĕр: „Ленин ют патшалăхран таврăнать“.

Ăна хирĕç тухса илме эпир вокзала кайрăмăр. Площаде пĕтĕмпех рабочисемпе салтаксем тулнă. Пыратпăр, хамăрăн чĕресем хыттăн тапаççĕ.

Акă эпир кĕтнĕ поезд та çитрĕ. Халăх хусканма, шавлама пуçларĕ.

Сасартăк куратăп: броньăллă автомобиль çине тахăшĕ улăхса тăчĕ.

Таврари çынсем пурте ала çупса ячĕç. Пăхатăп— Ленин.

Нумай çул иртнĕ пулин те, эпĕ ăна тӳрех палларăм.

Вăл пире сăмах калама пуçларĕ:

— Вăхăтлăх правительствăна ан ĕненĕр. Вăл пуянсем майлă. Влаçа хăвăр алла илĕр.

Пĕтĕм влаçа—советсен аллине! Ĕççынни тăшманĕсене хирĕç, помещиксене, хуçасене, буржуйсене хирĕç çапăçмалла,—тет.

Эпĕ хам ăшра шухăшлатăп: „Ну, халь пирĕн ĕç тухать. Пирĕнпе пĕрле—пирĕн çулпуçĕ“,—тетĕп.

Çапла пулчĕ те. Тата темиçе уйăхран рабочи халăх Вăхăтлăх правительствăна хăваласа ячĕ. Помещиксен çĕрĕсене туртса илчĕç. Заводсем, çĕр совет государстви аллине куçрĕç. Хуçасене заводсенчен хăваласа ячĕç.

Ленин пире çĕнĕ влаçа йĕркеллĕ тытса пыма вĕрентрĕ. Çавăнтанпа пирĕн çĕршывра ĕççыннисен совечĕсем власть пулса тăраççĕ.

Çавăнтанпа эпир хуçасем валли ĕçлеместпĕр. Халь никам та тепĕр çын ĕçĕпе пуйса пымасть, кашниех мĕнпур ĕçхалăхшĕн ĕçлет.

Кам ĕçлесшĕн мар, ăна валли пирĕн çĕршывра вырăн çук.

— Çакна мĕн пурне Ленин епле пĕччен тума пултарнă?—тесе ыйтрĕç ачасем.

Рабочи ответ пачĕ:

— Çакна мĕн пурне Ленин пĕччен туман. Ăна вăл рабочи класа тата пĕтĕм ĕççыннисене ертсе пыракан партипе пĕрле тунă. Ленин çул кăтартса пачĕ, Ленин пирĕн куççене уçрĕ. Пире вĕрентрĕ, сире те, пĕчĕк ачасене, хушса хăварчĕ: вĕренмелле, вĕренмелле тата вĕренмелле. Эсир—пирĕн смена.

## Çулпуçне ăсатни.

Владимир Ильич Ленин 1924 çулти январĕн 21-мĕшĕнче Мускав çывăхĕнчи Горки текен вырăнта вилнĕ. Унăн ӳтне Мускава илсе пынă.

Ун чухне питĕ хаяр сивĕсем тăнă. Урамсенче вут хурса тăнă. Вут хунă çĕре сивĕпе шăннă çынсем пыра-пыра ăшăннă.

Хула варнелле тĕрлĕ урамсенчен халăх питĕ йышлăн утнă. Вĕсем вăрăм лентăсем евĕрлĕ тăсăлса черетленсе тăнă.

Союзсен çурчĕн пысăк залĕнче тупăкра Владимир Ильич Ленин выртнă.

Музыка сасси илтĕннĕ—хурлăхлăн пытару маршне каланă. Рабочисем, мĕнпур ĕççыннисем хăйсен вилнĕ çулпуçне юлашки хут курса юлмашкăн пынă.

Пилĕк кун хушши выртнă Владимир Ильич ӳчĕ Союзсен çуртĕнче.

Январĕн 27-мĕшĕнче Владимир Ильич ӳтне Хĕрлĕ площаде йăтса пынă та, кăнтăрла иртсен, шăп 4 сехетре пытарнă.

Çав самантра пĕтĕм çĕршывра фабрикăсен, заводсен, паровозсен гудокĕсем кăшкăртса янă. Гудоксем тăрăх пурте çав вăхăтра Владимир Ильича пытарнине пĕлнĕ.

## Ленин мавзолейĕнче.

Хуркайăк пек карталанса,
черет кĕтсе тăтăмăр.
Черет çитрĕ. Салют
парса,
шăп малалла утрăмăр.

Хуллен-хуллен шăватпăр,
çамрăк чĕре
кăрт! сикет.
Акă çитрĕмĕр, пăхатпăр,
Ленин атте çывăрать...

Кантăк тупăк ăшĕнче,
выртать унта курăнса.
Электричество çутипе
çамки тăрать çутăлса.

Ах, вăл питĕ лăпкă
выртать,
тăрас пекех туйăнать...
Çук, тăмарĕ... Ĕмĕрлĕхех
куçне хупнă курăнать...

Ерипен утса иртрĕмĕр
Ленин тупăкĕ тĕлĕнчен.
Хуллен-хулленех
тухрăмăр
Ленин мавзолейĕнчен.

Çапла āслă Ленина
ĕнтĕ куртăм пĕр хутчен.
Ĕмĕр манмăп. Вăл каяс çук
манăн куçăм умĕнчен!

## Ленин буржуйсен сыщикĕсенчен епле пытанса пурăннă.

Ленина тытса тĕрмене хупма буржуйсем хăйсен чи шанчăклă сыщикĕсене хушнă тата шыракан йытăсене кăларса янă.

Мана юлташсем Ленина чикĕ леш енне каçарса яма хушрĕç.

Ленин вăл вăхăтра Петроград хули (халĕ Ленинград) çывăхĕнче пытанса пурăннă.

Пĕр ача Ленин пытанса пурăннă вырăна пĕлнĕ. Эпир, çав ачапа, кимĕ çине ларса, шыв леш енне каçрăмăр.

Çĕр лăпкă, уйăх çути çап-çутă.

Эпир çыран хĕррине тухрăмăр та сукмакпа шурлăх тăрăх утрăмăр.

Пĕр вунă минутăран утă капанĕ тĕлне пырса тухрăмăр.

Ача шăхăрчĕ те, утă капанĕ айĕнчен пĕр çын тухрĕ. Эпĕ Ильича паллаймарăм. Вăл сухалне хырнă пулнă. Куçĕсем кăна кăмăллăн пăхаççĕ.

Çĕр кăшт сивĕрехчĕ, çавăнпа эпир Ильичпа пĕрле капан ăшне кĕтĕмĕр. Унта унăн выртмалли вырăн пулнă. Эпир, ăшă пальтопа витĕнсе, çĕрĕпех чикĕ леш енне мĕнле майпа лайăхрах каçса каясси çинчен шухăшласа выртрăмăр.

Акă чикĕ леш енне каçса кайма майлă кун килсе тухрĕ.

Пирĕн станцине çитиччен 10 километр каймалла пулчĕ. Станцинчен вара эпĕ Ленина паровоз çине хамăн паллакан машинист патне кочегар вырăнне лартса яма шутласа хутăм.

---

Каç пуласпа, поезд килес умĕн, эпир Ленинпа станцине çитрĕмĕр.

Аяккарах кайса тăтăмăр та поезда кĕтетпĕр.

Акă поезд çывхарать... паровоз çинче хай паллакан машинистăн кĕлетки курăнчĕ.

Поезд çитсе чарăнчĕ. Ильича алă патăм та паровоз çине ларма пулăшрăм.

Ленин, паровоз çине улăхнă-улăхманах, çаннисене тавăрчĕ те, чăн-чăн кочегар пекех, кăмакана вутă пăрахма тытăнчĕ.

Акă поезд чикĕ патне пырса тăчĕ.

Чикĕре сыщиксем вагонсем тăрăх документсем тĕрĕслесе çӳреççĕ.

Машинист вĕсенчен чеерех пулчĕ. Вăл паровоза вагонсенчен вĕçертрĕ те водокачка патне илсе кайрĕ. Виççĕмĕш звонок пулас умĕн кăна вăл, паровоз çумне поезда çаклатса, чикĕ урлă каçарса ячĕ.

Çапла эпĕ хама хушнă ĕçе пурăнăçа кĕртрĕм.

## Иосиф Виссарионович Сталин.

Сталин 1879-мĕш çулта Тбилиси кĕпĕрнинче Гори ятлă хулара çуралнă. Вăл—грузин, рабочи ывăлĕ.

Сталин вунсаккăртах мĕнпур вăйпа рабочисемпе хресченсене ирĕке кăларассишĕн ĕçлеме тапратнă. 1901-мĕш çултан пуçласа, Сталин революциллĕ ĕç-сене вăрттăн ĕçлеме тытăннă, мĕншĕн тесен патша йыттисем—жандармсем,—Сталина пĕлсе çитсе, ăна хытă хĕсĕрлеме тытăннă. Çапла вара, вăрттăн ĕçле-кен революционер пулса кайса, Сталин 1917-мĕш çулччен пытанса ĕçленĕ. Сталин юлташ рабочи-сене пĕрлештерсе кружоксем тунă, çав кружоксем вăрттăн пухăнса ĕçленĕ. Сталин патшапа хуçасене хи-рĕç мĕнле кĕрешмеллине вĕрентнĕ. Вăл хăй те рабочисен забастовкисене пĕрре кăна мар ертсе пынă.



Патша полицийĕнчен пытанас тесе, вăл час-часах тĕрлĕ ятпа ĕçленĕ. Унăн паллă-рах вăрттăн ячĕсем: „Коба", „Сосо" пулнă. Юлашки ячĕ унăн Сталин пулнă. Çак ятпа вăл пĕтĕм тĕнчере паллă çын пулчĕ.

Сталин юлташ темиçе хутчен полици аллине лекнĕ. Вăл революциллĕ ĕçсемшĕн тĕрмере те нумай ларнă. Ăна хаяр та сивĕ Çĕпĕре тата аякри тĕттĕм кĕтессене ссылка янă. Анчах ссылкăна ярсан та, вăл, унтан тарса, каллех урăх ятпа ĕçлеме тытăннă. Вăл ссылкăран темиçе хут та тарнă, патша жандармĕсене нумай чăрмантарнă.

Октябрьти социализмлă аслă революци вăхăтĕнче тата малалла та Сталин Ленинăн хастарлă пулăшса тăракан чи çывăх юлташĕсенчен пĕри пулнă.

Сталин Ленинпа пĕрле партие, пĕтĕм ĕçсынnисене çĕнĕ социализмлă пурăнăç тăвас ĕçре ертсе пынă. Вăл, Ленин вĕрентнине çирĕп асра тытса, партие, ĕççын-нисене пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерессе çинчен вĕрентнĕ. Вăл чăнах та çаплах пулчĕ. Халь пирĕн

Совет Союзӗнче социализмлӑ пурӑнӑҫ ҫӗнтерчӗ. Октябрь революцийӗ пулнӑранпа ку тарана ҫити тунӑ ҫитӗнӳсене Совет Союзӗн ӗҫхалӑхӗ ҫӗнӗ Конституцине ҫырса хучӗ. Ҫак ҫӗнӗ Конституцине—социализмлӑ пурӑнӑҫӑн тӗп законне—Сталин юлташ пуҫарнипе тунӑ. 1936-мӗш ҫулхи декабрӗн 5-мӗш кунӗнче ҫӗнӗ Конституцине ҫирӗплетнӗ.

Ленин вилнӗ хыҫҫӑн коммунистсен партине Сталин нит ҫирӗппӗн, тӗрӗс ертсе пырать. Сталин—коммунистсенчен чи ҫирӗппи, чи хастарли. Вӑл Ленин каласа хӑварнисене тӗрӗс пӗлсе тӑрать. Пур ӗҫе те Ленин каласа хӑварнӑ пек туса пырать. Совет ҫӗршывне тӗрӗс ҫулпа ертсе пырать.

Сталин ӗҫхалӑхӗн—рабочисен, колхозниксен, красноармеецсен—чи ҫывӑх тусӗ, чи аслӑ ҫулпуҫӗ. Сталинпа коммунистсен партийӗ ертсе пынипе эпир хамӑр ҫӗршывӑн ирӗклӗхне сыхлатпӑр, фашистла ирсӗрсене ҫапса ҫӗмӗрсе пыратпӑр.

Сталина мӗнпур рабочисем, колхозниксем, красноармеецсем юратса хисеплеҫҫӗ. Сталина пӗлмен ҫын ҫук. Ӑна пӗтӗм тӑван ҫӗршыв, пӗтӗм тӗнче пӗлсе тӑрать. Совет ҫӗршывӗн Оборона Халӑх Комиссарне, Совет Союзӗн маршалне Сталин юлташа пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ юратса саламлать.

---

Совет Союзӗнчи савӑнӑҫлӑ, пуян пурӑнӑҫа рабочисемпе хресченсем мӗнле парти ертсе пынипе туса хунӑ?

Юратнӑ Сталин юлташ пурӑнӑҫӗ ҫинчен каласа парӑр.

## Сталин ятне савса.

Ҫӳллӗ тусем ҫинче ахах пӗрчи,
ахах пӗрчи тавра хурӑн ҫырли.
Хурӑн ҫырли тути, ай, мӗн тути!
Сталин сӑмахӗсем, ай, пыл тути!

Шурӑмпуҫпе пӗрле шӑпчӑк юрлать,
ик ҫунатне ҫапса кӗвӗ хурать.

Шăпчăкранах эпир ăста пулар,
Сталин ятне савса юрă юрлар.

Ахаҫсемех хаклă, мерчен хаклă,
вĕсенчен те хаклă, ай, мĕн хаклă?
Сталин сăмахĕсем, вĕрентнисем
сӳнми ҫунса тăраççĕ—ҫав хаклă!

## Надежда Константиновна Крупская.

Крупская ятне пĕлмен ҫын пирĕн ҫĕршывра ҫук. Надежда Константиновна Ленинăн чи ҫывăх юлташĕ, ăна пулăшаканĕ пулнă.

Вăл 1869-мĕш ҫулта Петербург хулинче (халь Ленинград) ҫуралнă. Пит ҫамрăклах вăл революци ĕҫне хутшăннă. Вăл студентсен революциллĕ кружокĕсене ертсе пынă, рабочисем хушшинче революциллĕ шухăшсем сарнă.



1896-мĕш ҫулта, Петербургри рабочисем забастовка тунă хыççăн, патша правительстви Крупскаяна арестленĕ, ҫичĕ уйăх хушши тĕрмере тытнă, унтан ссылкăна янă. Ҫав вăхăтра В. И. Ленин Ҫĕпĕрте Шушенское ялĕнче ссылкăра пураннă. Крупская хăйне те ссылкăна Шушенское ялне яма ыйтнă.

Ссылкăра пураннă вăхăтра Крупская Ленина унăн революциллĕ ĕҫĕнче кунсерен пулăшса тăнă.

Ссылка хыççăн Крупская Ленинпа пĕрле ют патшалăхра пураннă. Унта вăл „Искра" ятлă революциллĕ хаҫата кăларас тĕлĕшпе нумай ĕҫленĕ.

1905-мĕш ҫулта Ленинпа Крупская Российăна та-

вӑрӑннӑ. 1905-мӗш ҫулхи революцине патша ҫарӗсем пусарнӑ хыҫҫӑн, Ленинпа Крупскаяна темиҫе хутчен ют патшалӑхсенче пурӑнма тивнӗ.

Патшана сирпӗтнӗ хыҫҫӑн вӗсем Российӑна таврӑннӑ, Октябрь революцине хатӗрленес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫленӗ.

Совет влаҫӗ пулнӑ хыҫҫӑн, Крупская пӗр таттисӗр Ҫутӗҫ халӑх комиссариатӗнче ӗҫленӗ.

Крупская пирӗн тӑван ҫӗршывра социализм тӑвас ӗҫре питӗ тӑрӑшса ӗҫленӗ. Вӑл халӑха ҫутта кӑларас тӗлӗшпе питӗ нумай ӗҫленине хисепе илсе, правительство ӑна Ленин орденӗ тата Хӗрлӗ Ӗҫ Ялавӗ орденӗ панӑ. Крупская партин Центральный Комитечӗн членӗ, СССР Верховный Совет Президиумӗн членӗ пулнӑ. Вӑл хӑйӗн пӗтӗм пурӑнӑҫне, пӗтӗм вӑйне революци ӗҫӗшӗн, ӗҫхалӑхӗн телейӗшӗн, коммунизмшӑн панӑ.

Надежда Константиновна Крупская ячӗ пӗтӗм ӗҫ-ҫыннисемшӗн ӗмӗр манми ят.

---

Крупскаяна мӗншӗн арестленӗ, мӗншӗн ссылкӑна янӑ? Мӗнле ӗҫсенче вӑл Ленина пулӑшса пынӑ?

## Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар вӑл—ирӗклӗ ӗҫхалӑхӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗ. Хӗрлӗ Ҫара Ленинпа Сталин хӑйсем пӑхса, хӑйсем вӗрентсе ҫитӗнтернӗ. Вӑл 1918-мӗш ҫулта ҫамрӑк совет влаҫӗ умӗнче вилӗмле хӑрушлӑх тӑнӑ вӑхӑтра ҫуралнӑ. Ун чухне пирӗн ҫӗршыв ҫине 14 патшалӑх тапӑнса килнӗ. Анчах та эпир пуҫа усса хуйхӑрман, хӑраса ӳкмен. Вӑрҫӑ вучӗ айӗнчех ун чух эпир Хӗрлӗ Ҫара тунӑ, ҫӗршыва ҫар лагерӗ туса хунӑ. Пирӗн ҫамрӑк Хӗрлӗ Ҫар капиталистла патшалӑхсен ҫарӗсене ҫӗмӗрсе пирӗн ҫӗршывран хӑваласа кӑларнӑ.

Пӗрремӗш, иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш пятилеткӑсем хушшинче пирӗн Хӗрлӗ Ҫар хамӑр ҫӗршыври заводсенче

тăвакан чи лайăх самолётсемпе, танксемпе, тупăсемпе тата ытти хĕçпăшал тавращĕпе пуянланчĕ.

Халь пирĕн Хĕрлĕ Çар Гитлер самолĕчĕсене хирĕç самолётсем, танксене хирĕç танксем, миномётсене хирĕ миномёт кăларса тăратать.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăйсен тăван çĕршывне тата хăйсене ертсе пыракан аслă çулпуçа Сталин юлташа чĕререн юратаççĕ. Алăри хĕçпăшала çирĕппĕн тытса, вĕсем тăшманăн кирек мĕнле вăйĕсем çине те хăюллăн тапăнаççĕ, çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне малалла ыткăнаççĕ. Пирĕн боецсемпе командирсем, пĕчченшерĕн те, темиçе тăшмана пĕтерсе тăкса, тĕлĕнмелле ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем, хăйсене шеллемесĕр çапăçса, Хĕрлĕ Çар ятне те, тăван çĕршыв ятне те мухтава кăларса пыраççĕ. Совет Союзĕн геройĕсен ĕçĕсемпе ячĕсем пĕтĕм тĕнчене сарăлаççĕ.

Аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăксене шăмми-шакки юлмиччен çĕмĕрсе тăкĕ. Тăван çĕршыва гитлерла ирсĕрсенчен пĕтĕмпех тасататпăр.

## Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ.

Аслă Союзри миллионшар ĕççыннисемпе пĕрле мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретĕнче пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те фашистла çынçиенсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ.

Элĕк районĕнчи, Пичĕш-касси ялĕнче çуралса ӳснĕ Яков Игнатьевич Игнатьев нимĕçсем пирĕн çине тапăннă вăхăтра Хĕрлĕ Çар ретĕнче чикĕ хĕрринче тăнă.

Игнатьев юлташ ертсе пыракан пограничниксен группи вăрçăн малтанхи кунĕсенчех нимĕç вăрă-хурахĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Пĕррехинче пирĕн командовани Игнатьев юлташăн группине боевой задани панă. Вĕсене тăшман хыçне çĕмĕрсе кĕме, тăшманăн тупăсенчен перекен

салтакĕсене арпаштарса ярса, хамăр пехотăна тăшмана тапăнма май туса пама хушнă.

— Тăван çĕршывшăн! Аслă Сталиншăн!—тесе, Игнатьев группи çапăçăва кĕнĕ.



Темиçе сехет хушши хаяр çапăçу пынă. Шиксĕр пограничниксем командовани хушнине чыслăн пурнăça кĕртнĕ. Вăл çапăçура Игнатьев командир хăй пĕччен нимĕçсен 35 салтакне, 5 автоматчикне тата 2 офицерне пĕтерсе тăкнă.

Совет правительстви Игнатьев юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă.

## Тискер кайăк йĕрĕсем.

Эпир тискер кайăк йĕрĕсем тăрăх пыратпăр. Акă ял. Кунта фашистсем вуникĕ кун хушши хуçаланса пурăннă. Пирвайхи куннех нимĕç вăрă-хурахĕсем магазинсене çĕмĕрсе тăкнă, çаратнă. Çаратса илнĕ япаласене вĕсем хăйсем патне, Германие, ăсатнă. Ашă



тумтирсене вĕсем хресченсем çийĕнчен урамрах хыва-хыва илнĕ.

Эпир пĕр ачана, Алексеев Коляна, тĕл пултăмăр. Вăл пуçне çĕлĕк вырăнне хĕрарăм шлепки тăхăнса янă. Эпир унтан вăл мĕншĕн хĕрарăм шлепки тăхăнса яни çинчен ыйтрăмăр.

— Нимĕç çĕлĕке туртса илчĕ,—терĕ вăл пире.

Нимĕç вăрă-хурахĕсем пĕр Коляна анчах çаратман. Вĕсем ялта пурăнакан çынсене пурне те çаратса пĕтернĕ, вара хресченсене ачи-пăчисемпе пĕрлех урама хăваласа кăларнă. Нимĕçсем шкула, библиотекăна, клуба çаратса çĕмĕрсе пĕтернĕ.

## Улттăн хĕрĕхе хирĕç.

Ухин юлташăн отделенийĕнчи ултă боец разведкăна кайнă. Тăшман йышăнса тăракан вырăна кĕрсен,

вĕсем тăшмансен пытанса ларнă ушкăнĕ патне пырса тухнă. Пирĕн ултă боец çине фашистсем хĕрĕхĕн ытла тапăннă.

Ултă красноармеец хăраса ӳкмен. Фашистсем çине вĕсем гранатăсем ывăтма тытăннă. Нимĕçсем, вунă çынна яхăн çухатса, вăрманалла чакса кĕнĕ. Вара пирĕн разведчиксем тăшмансем çине сиксе ӳкнĕ те, штыкпа çапăçса, хăйсене валли çул уçнă. Çапла пирĕн ултă боец нимĕçсен хĕрĕх салтакне парăнтарнă.

## Климент Ефремович Ворошилов.

Ку ĕç Сталинград хули çывăхĕнче пулса иртнĕ. (Ун чухне ку хула Царицын ятлă пулнă).

Шуррисен çарĕсем хула патне пырса тăнă.

Хула çумĕнчи ял хыçĕнче вĕсен туппискем тăнă.



Ир ирех шуррисен туппискем тăнă çĕре пĕр салтак генерала кĕтсе илме хушнă приказпа пынă.

Генерал килнĕ хыççăн шуррисем хула çине тапăнма тытăнмалла пулнă.

Генерала хирĕç тухса рапорт пама пĕр юланутлă салтака янă, ăна генерал автомобилĕ курăнсанах шурă çарсене алăпа паллă пама хушнă.

Акă аякран пĕр автомобиль тусан кăларса килет. Пĕр самантлăха автомобиль çул çинче чарăнчĕ те, унтан çавăрăнса, тӳрех тупăсем патнелле çул тытрĕ.

Юланутлă шурă салтак аллине çӳлелле çĕклерĕ те, машина умне тухма пикенсе, хирĕç вĕçтерчĕ.

— Виççĕн... Çар çыннисем... Паллах, генерал, урăх кам пулма пултарать!—шухăшласа илчĕ юланутлă салтак.

Вăл, сиккипе пынă çĕртен лашине сасартăк чарса, аллипе меллĕн честь парса, рапорт пама çăварне уçрĕ те кăшт кăна йĕнер çинчен персе анмарĕ... Автомо-

биль ҫинче ларакан ҫынсен картусĕсем ҫинче вăл хĕрлĕ ҫăлтăрсем курчĕ.

Ҫав вăхăтра пăшал сасси илтĕнчĕ. Юланутлă салтак тӳрех ҫĕре персе анчĕ, унăн лаши ҫеҫенхир тăрăх сиккипе вĕҫтерсе кайрĕ.

Тупăсем патĕнче тăракан шурă салтаксем мĕн пулҫа иртнине пĕтĕмпех курса тăнă. Пĕр вунă юланутлă салтак машина патнелле сиккипе вĕҫтерчĕҫ.

— Пулемёт! Пулемёт парăр! Часрах! Машинăна тĕллесе перĕр!—кăшкăрнă шурă офицерсем.

Симĕс автомобиль ҫав вăхăтра хир тăрăх ҫиҫĕм пек вĕҫтерсе пынă. Ун ҫине тĕллесе пеме те май килмен, мĕншĕн тесен машинăпа пулемётсем хушшинче шурă салтаксем пулнă.

Вара шурă салтаксем автомобиле юланутпа хăвалама тытăннă, анчах часах машинăран кая юлса пыма пуҫланă: машина ҫинчен вĕсем ҫине тĕлех тивертсе пенĕ. Пĕр юланутлă салтак тӳрех ҫĕре персе аннă, иккĕмĕшне аманнă лаши ҫĕмĕрсе хунă, виҫҫĕмĕшĕ—йĕнер ҫинчен ӳкнĕ... Ыттисем, хăраса, лашисене чарма пуҫланă. Автомобиль часах вĕҫекен тусан ăшĕнче куҫран ҫухалнă.

Сăрт хыҫне тухсан, машина чарăннă. Хĕрлĕ боецсем машина ҫинчен аннă.

— Ну, хăтăлтăмăр-и?—терĕ асли.

— Хăтăлтăмăр, Климент Ефремович,—харăссăн ответ пачĕҫ ăна юлташĕсем.—Анчах, командир юлташ, сирĕншĕн шикленсе пытăмăр.

---

Ку ĕҫ ăҫта пулнă?
Ворошиловăн хăюллăхĕ ҫинчен кĕскен каласа парăр.

## Казбек.

Казбек ятлă лаша Буденный аллине шуррисемпе ҫапăҫнă чухне лекнĕ. Казбек Дон шывĕ ҫывăхĕнче ӳссе ҫитĕннĕ рысак пулнă.

Унăн пуҫĕ питĕ илемлĕ, куҫĕсем ҫивчĕ, урисем хулăн мар, хӳри ҫинҫе пулнă. Тĕсĕ унăн сарăрах пулнă.

Казбек Буденныя пит кăмăла килнĕ. Буденный ун патне пынă та ăна мăйĕнчен лăпкаса илнĕ. Казбек палламан çынтан пăрăнма пикеннĕ. Çав вăхăтра Буденный кĕсъинче сахăр пуррине аса илнĕ, вăл ăна кăларса, Казбек еннелле тăснă. Казбек пуçне силлесе илнĕ те сахăра хыпнă, унтан Буденныя малти урине тăсса панă. Çапла вĕсем пĕр-пĕринпе туслашнă.

Нумай километр вĕçсе тухнă Буденный, Казбек çинче ларса. Хăватлă лаша яланах унăн çывăх юлташĕ пулнă. Казбек канавсем урлă, çӳллĕ хӳмесем урлă сиксе каçнă, юханшывсем урлă ишсе каçнă. Буденный яланах ăна шаннă.



Пирĕн çар чаçĕнче Казбека кам пĕлмен пулĕ? Ăна палламанни никам та пулман.

Пĕррехинче, хĕрӳллĕ çапăçу хыççăн, тĕттĕм пулса çитнĕ вăхăтра, Буденный шуррисен чакса пыракан утлă çарĕ çине пырса тăрăннă.

— Мĕнле çар ку?—тесе ыйтнă Буденный хĕрринчи казакран.

— Шкуро генералăн сотни,—тенĕ те çавăрăнса кайнă шурă салтак. Вăл Буденныя палламан. Буденный казак çĕлĕкне тăхăннă пулнă, тĕттĕм пирки çĕлĕк çинчи хĕрлĕ çăлтăр палăрман. Анчах çывăхри казаксем ун-кун пăхса пăшăлтатма тытăннă. Вăхăта тăсса тăма юраман. Мĕнпур шанчăка Буденный Казбек çине хунă. Шуррисенчен хăтарайĕ-ши, çук-ши?

Буденный, Казбека тăруках аяккалла пăрса, хăй çарĕ патнелле вĕçтернĕ. Темиçе казак ун хыççăн сиктерме тытăннă. Пăшал сассисем кĕрленĕ. Анчах Казбек çеçенхир тăрăх кайăк пек вĕçтерсе пынă. Шурă казаксем нимсĕрех тăрса юлнă.

Хӗрлӗ Ҫар Ростов хулине тытса илнӗ вӑхӑтра хула урамӗсенче хӗрӳллӗ ҫапӑҫу пынӑ. Буденныйпа Ворошилов чи малти ретре пулнӑ, ҫапӑҫава ертсе пынӑ. Сасартӑк тӑшман пульки Казбек пуҫне пырса лекнӗ. Лаша малти урисем ҫине персе аннӑ та хӑрӑлтатма тытӑннӑ.

Буденный Казбека ҫав тери хытӑ юратнӑ. Хӑйӗн юлташӗ асапланнине курса тӑма ӑна питӗ йывӑр пулнӑ, ҫавӑнпа та вӑл лашана персе вӗлерме шутланӑ. Анчах пемешкӗн алли ҫӗкленеймен. Вӑл, Ворошилов енне ҫаврӑнса пӑхнӑ та:

— Пеме шел. Пултараймастӑп. Тен, чӗртӗпӗр,— тенӗ.

Аманнӑ Казбека ҫапӑҫу пӗтнӗ хыҫҫӑн выльӑх лазаретне турттарса кайнӑ Красноармеецсем пурте Казбек аманнине пӗлнӗ, ӑна шелленӗ. Буденный ун патне лазарета кашни кунах ҫӳренӗ. Пилӗк кун иртсен, Казбек тӳрленме тытӑннӑ. Вунпилӗк кунтан Буденный, каллех ун ҫинче ларса, боецсем умӗнче вӗҫтерсе пынӑ.

---

Кам вӑл Буденный?

1918—1921 ҫулсенче шуррисене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ чухне вӑл кам пулса ӗҫленӗ?

## Винокуров юлташа.

Эс пултӑн чыслӑ паттӑр,
ҫӗршывшӑн кӗрешсе.
Мухтавлӑ юрӑсем
сан ятупа юрлатпӑр.

Ялан аса илетпӗр
Хасан кӳллине,
шухӑшсемпе вӗҫетпӗр
унти тусем ҫине.



Совет Союзĕн Геройĕ
В. П. Винокуров.

Хасан кӳлли патĕнче самурайсемпе паттăр çапăçнăшăн ăна Совет правительстви Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Хасан патне капланнă
тискер самурайсем,
Совет çĕрне шутланă
илмешкĕн ирсĕрсем.

Çарĕсене каçарнă
ку еннелле тăшман.
Анчах ирсĕр тăшманăн
тискер ĕçĕ тухман.

Пит лайăх „хăналарĕç“
чĕнмен хăнасене,
нумайĕш каяймарĕç
хăйсен килĕсене.

Герой, эс чыслă пултăн,
çĕршывшăн кĕрешсе
Ахальтен мар çут орден
тăрать санра çиçсе.

## Хасан кӳлли патĕнче пулнă çапăçусенчен.

Япони самурайĕсем тахçантанпах пирĕн Инçетри Хĕвелтухăçне туртса илме ĕмĕтленеççĕ. 1938-мĕш çулта вĕсем çав шухăшпа Хасан кӳлли çывăхĕнче пирĕн çĕршыв çине тапăнса пăхрĕç. Пирĕн çĕршывпа вăрçă пуçарма пикенчĕç. Анчах пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар вĕсене çапса çĕмĕрчĕ.

Çав çапăçусенче пирĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăйсен калама çук пысăк паттăрлăхне кăтартрĕç.

* * *

Заозерная ятлă сăрт пĕтĕмпех хура тĕтĕмпе хупланнă. Бомбăсем çурăлнипе çĕр чĕтренсе тăрать. Хĕрлĕ çăлтăрлă самолётсем японецсем çине атака тăваççĕ.

Бомбăсем пăрахма чарăниччен танксем сăрт çинелле шурĕç.

— Малалла!—илтĕнет команда.

Японецсем çинелле тапăнса пыракан хĕрлĕ боецсем хушшинче Кравцов çамрăк красноармеец чупать. Малта Хасан кўлли. Ун еннелле 500 метр чупмалла. Тăшман тупăсемпе пулемётсенчен пеме тытăнать. Вилнисемпе аманнисем ўкеççĕ. Тăшмана хаяррăн курайманнипе чĕре тата вăйлăрах тапма тытăнать. Хăвăртрах тăшман окопĕсем патне çитесчĕ. Аркатасчĕ, çĕмĕресчĕ çĕлен-калтасене.

Командир хушнă тăрăх Кравцов, кўллĕн тепĕр енне ансăртарах вырăнтан ишсе каçать те, çыран тăрăх шума тытăнать.

Сулахайра тăшман пулемĕчĕ янăрама тытăнать. Кравцов пулемётчика тĕллесе перет. Пулемётчик пĕтрĕ, пулемёт чарăнчĕ. Унтан Кравцов японец снайпера йĕрлеме тытăнать. Часах ăна та вĕлерет.

Пирĕн боецсем тăшман окопĕсене йышăнаççĕ.

## Чикĕре.



Штаб приказне ĕçе кĕртсе, Михайлов хăйĕн чаçне тавăрăнать. Тĕттĕм пулчĕ. Тўпене çăлтăрсем шăтарса тухрĕç. Вăрман шăппăн тĕлĕрет. Михайлов малалла утать. Анчах унран инçех те мар типнĕ туратсем хуçăлкалани илтĕнсе кайрĕ. Михайлов йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ—нимĕн те курăнмасть. Кайăксем чăштăртаттарни ун пек илтĕнмелле мар, такам ури сасси пулчĕ пулĕ тесе, тунката хыçне выртрĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ. Сулахай енчен çывăх рах пĕр çын утса пырать. Шăпах вăл тунката тĕлне çитсе пынă чух, Михайлов ура çине тăчĕ. Палламан çын ун çине пăхса илчĕ те нимĕн тума пĕлмесĕр чарăнчĕ. Старик вăл. Унăн хура куçĕсем пĕр вăхăта хĕмленнĕ пек пулчĕç.

— Сывлăх сунатăп, юлташăм. Табак туртасшăн та шăрпăк пулмĕ-ши санăн?—терĕ старик.

— Туртмастăп эпĕ,—хирĕç чĕнчĕ Михайлов. Ют çын, илтмĕш пулса, малалла кайма шут тытрĕ.

Михайлов чĕринчи вĕри юн тапса тухас пек вĕреме пуçларĕ. „Аçта тата мĕн тума кайтăр вăл каçа хирĕç?"—ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй.

— Ан кай-ха, старик, кăтарт документсене,—терĕ вăл уçă сасăпа.

— Акă... документсем,—терĕ те старик Михайлова питĕнчен шăршламалли табакпа сапрĕ. Хăй çав вăхăтра тарма пуçларĕ.

Михайлов ăна хăвалама тытăнчĕ. Вăрмантан тухсан, старик, çырма тăрăх чупса, пытанма ĕмĕтленнĕччĕ пулас, епле майпа колхоз итемĕ патне çывхарнине те сисмерĕ.

Итем çине çитсен, Михайлов сикрĕ те старике ĕнсинчен ярса илчĕ. Ывăнса çитнипе иккĕшĕ те çĕре тăлпанса ӳкрĕç. Çĕре хăвăрт ӳкнĕ пекех, ура çине те час тăчĕç.

Шăпах çак вăхăтра итем хуралçи те персе çитрĕ. Малтанах вăл, красноармеецпа старик хулран хула тытăçнине курсан, нимĕн те ăнланса илеймерĕ. Старик аллинче çап-çутă кинжал йăлтăртатсан çеç, ĕç мĕнлине туйса илчĕ те, красноармееца пулăшма пычĕ. Вăл старикĕн кинжал тытнă аллине хыçалалла пăрса хирĕнтерчĕ. Ирсĕр старик, тинех парăнса, çĕре çаврăнса ӳкрĕ.

Михайлов, ик-виç сăмахпа çак палламан çын çинчен каласа, хуралçа тĕлĕнтерчĕ. Хуралçă, çилпине шăнараймасăр, старике сухалĕнчен ярса тытрĕ çеç, — кĕреçе пек илемлĕ кăтра сухал хăйпăнса ӳкрĕ.

— Ма́ска!—терӗ хуралҫӑ, ҫак чее „старик“ ҫине пӑхса. Вӗсен умӗнче 30—35 ҫулхи ҫамрӑк ҫын пулса тӑчӗ хайхи старик. Иккӗшӗ те, пиҫиххийӗсене салтса, тӑшманӑн аллисене хыҫалалла ҫавӑрса ҫыхрӗҫ. Михайлов ӑна ҫывӑхри заставӑна илсе кайрӗ. Ҫак старикле тумланнӑ ҫын пысӑк шпион пулнӑ.

---

Михайлов пограничник кама тытнӑ?
Мӗнле тумланнӑ пулнӑ ку шпион?

## Социализм ҫӗнтерчӗ.

Совет Союзӗнчи рабочисемпе ӗҫхресченӗсем, Ленин вӗрентнине пурӑнӑҫа кӗртсе пырса, ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тӑваҫҫӗ.

Российӑри пусмӑрта пурӑннӑ халӑхсем ирӗке тухса ҫӗнӗ ҫул ҫине тӑчӗҫ.

Вак хресчен хуҫалӑхӗсем колхозсене пӗрлешрӗҫ. Халь ӗнтӗ колхозсӑр ял та ҫук. Колхоза кӗмен хресченсем ҫукпа пӗрех. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене шултӑра машинӑсемпе, тракторсемпе, комбайнсемпе ӗҫлетпӗр.

Совет Союзӗнче эксплоататорла классене пурне те тӗппипех пӗтерсе хунӑ, ҫынна ҫын эксплоатацилессине тата общество эксплоататорсемпе эксплоатациленекенсем ҫине пайланса тӑрассине ҫуратакан сӑлтавсене пӗтӗмпех пӗтернӗ.

Икӗ пятилетка тӑршшӗнче калама ҫук пысӑк фабрикӑсем, заводсем, электростанцисем, чугун ҫулсем турӑмӑр. Темӗн чухлӗ машинӑсем туса кӑлартӑмӑр. Пирӗн ҫӗршывра, тӗпрен илсен, коммунизмӑн пӗрремӗш сыпӑкӗ—социализм пурӑнӑҫа кӗрсе ҫитнӗ. Виҫҫӗмӗш пятилеткӑра пирӗн ҫӗршыв классӑр социализмлӑ обществӑна туса ҫитерес тата майӗпенех социализмран коммунизм патне куҫса пырас тапхӑра кӗчӗ.

Иккӗмӗш пятилеткӑра Совет Союзӗ производствӑн техники енӗпе малта пыракан капитализмлӑ ҫӗршывсене хуса ҫитсе иртсе кайрӗ. Малашне пирӗн

экономика тӗлӗшпе те вӑйлӑрах аталаннӑ капитализмлӑ ҫӗршывсене хуса ҫитсе иртсе каймалла.

Пирӗн ҫӗршыв паллӑран та паллӑ ҫитӗнӳсем туса пынине тӑшмансем кураймаҫҫӗ. Класс тӑшманӗсен юлашкийӗсем социализм ҫӗнтерӗвӗсене чӑрмантарма мӗнпур вӑйпа тӑрӑшаҫҫӗ. Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, пирӗн ҫӗршыври ӗҫхалӑхӗ хӑйӗн тӑшманӗсемпе татӑклӑн кӗрешсе пырать, вӗсене ҫӗмӗрет.

## Стахановла ӗҫлекенсен канашлӑвӗ.

1935-мӗш ҫулхи ноябрӗн 14-мӗш кунӗнче Мускав хулине Совет Союзӗн тӗрлӗ вырӑнӗсенчен виҫӗ пин ҫын пухӑннӑ. Унта чи лайӑх шахтӗрсем, тимӗрҫӗсем, паровоз машинисчӗсем, ҫӗнӗлле, стахановла ӗҫлекенсем пуҫтарӑннӑ.

Вӗсем партипе правительствӑна ертсе пыракансене хӑйсен ӗҫӗ ҫинчен кала-кала панӑ. Вӗсем ӗҫ тухӑҫне мӗнле майсемпе хӑпартса пыни ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Канашлура Сталин, Молотов, Калинин, Каганович, Ворошилов, Орджоникидзе тата ыттисем те пулнӑ.

Канашлура чи пирвайхи сӑмаха калама стахановла ӗҫлессине пуҫарса яракан Алексей Григорьевич Стаханова панӑ.

## Стаханов хӑй ҫинчен мӗн каласа панӑ.

Эпӗ хам Орёл хули патӗнчисем. Пирӗн ял ӗлӗк чухӑн пулнӑ. Пирӗн ҫемье аран-аран пурӑнкаланӑ. Манӑн асатте те, атте те хулана ӗҫлеме кайса пурӑннӑ. Эпӗ 12 ҫултанпа хам тӗллӗн пурӑнма пуҫларӑм, кулак патне армана ӗҫлеме кӗтӗм. Иртен пуҫласа каҫченех михӗсем ҫӗклеттӗм. Каҫсенче лашасем пӑхаттӑм, манӑн хуҫан 40 лашаччӗ.

Унтан вара эпӗ, ялти хут пӗлмен ҫамрӑк, шахтӑ-

на лекрӗм. Ӗҫлессе малтан чавнӑ кӑмрӑка аяккалла хырса купаланӑ ҫӗрте ӗҫлеттӗм.

Тӳррипех калатӑп: шахтӑран эпӗ хӑраттӑм. Хам асатте сӑмахӗсене асра тытсах ҫӳреттӗм. Асатте ҫапла калатчӗ:

— Шахта вӑл каторга. Вӑйна усӑсӑр пӗтерӗн, ахалех пӗтӗн,—тетчӗ.

Анчах совет шахти ӗлӗк ман асатте ӗҫленӗ шахта мар. Шахтӑра нумайранпа ӗҫлекен рабочисем манпала пит аван килӗштерчӗҫ, мана хавхалантарса, ӗҫлеме вӗренме пулӑшса пычӗҫ. Ҫапла, майӗпе, эпӗ лайӑх забойщик пулса тӑтӑм.



Унтан эпӗ шахтӑри ӗҫе епле майпа лайӑхлатасси ҫинчен шухӑшлама тытӑнтӑм. Вара хам участокра ҫӗркӑмрӑк кӑларас ӗҫе ҫӗнӗлле майлаштарма шут тытрӑм.

Нимӗнрен малтан эпӗ ҫӗркӑмрӑк кӑларас ӗҫе икӗ пая уйӑртӑм. Забойщик кӑмрӑк чавса кӑна тӑмалла. Вара унӑн отбойнӑй мӑлатукӗ 6 сехет хушши пӗрмаях ӗҫре пулать. Шахта мастисене тӗкӗ парса пырассине тӗкӗ паракансем туччӑр. Вара ӗҫ чылай лайӑхрах пулса пымалла.

Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен кунӗ ыран тенӗ чух, каҫхине, эпӗ шахтӑна антӑм та ҫӗнӗлле ӗҫлеме пуҫларӑм. Эпӗ малтан шухӑшласа хуни тӗрӗс пулчӗ. Ҫав каҫхине эпӗ 102 тонна кӑмрӑк чавса кӑлартӑм. Кун пекки унччен пулман, эпӗ унченхи нормӑран вунӑ хут ытларах чавса кӑлартӑм.

Эпӗ пуҫласа янӑ мелпе ытти шахтӗрсем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Ҫӗркӑмрӑкне кӑларасси кунсерен ӳссе пычӗ. Сменӑра 115, 125, 175, 227, 240 тоннӑшар чавса кӑларма тытӑнчӗҫ.

Унтан вара пирӗн мелпе шахтӑсенчи, фабрикӑсенчи, заводсенчи пиншер рабочисем ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Телейлĕ пурăнăçшăн пирĕн аслă Сталина тав тумалла. Уншăн, большевиксен партишĕн, юратнă тăван çĕршывшăн эпир хамăр пурăнăçа пама хатĕр.

## Чăваш республики—орденлă республика.

Коммунистсен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн совет çĕршывĕ улăшăнса çĕнелчĕ.

Эпир, тĕпрен илсен, социализмлă общество туса хутăмăр. Совет Союзĕ малта пыракан техникăллă, хăватлă промышленноçлă тата тĕнчери социализмлă чи шултăра ялхуçалăхлă çĕршыв пулса тăчĕ. Эпир хамăр çитĕнӳсене Сталинла Конституци çине çырса хунă.

Чăваш республики, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, халăхсен аслă çемьинче ӳссе пыракан çĕршыв. Пирĕн республикăра çĕнĕ промышленноçлă предприятисем ӳссе çитĕнчĕç, çĕнĕ хуласем пулса тăчĕç. Канашпа Шупашкар хушшинче чугун çул тунă. Колхозсен уй-хирĕсенче тракторсем, комбайнсем ĕçлеççĕ. Ялсенче, хуласенче çĕнĕ техникăна вĕреннĕ кадрсем ӳссе пыраççĕ. Пирĕн республика ялхуçалăх ĕçĕсене çулсерен лайăх ирттерсе пырать. Çулйĕр тăвас ĕçре çулран çул паллă çитĕнӳсем туса пырать. Патшалăх умĕнчи тĕрлĕ обязательствăсене яланах вăхăтра тултарать. Шкулсем, вуламалли çуртсем, ликпунктсем нумай уçса, вĕсен ĕçĕсен пахалăхне хăпартса пырать. Эпир социализмлă обществăра пуян та культурăллă, телейлĕ пурăнăçпа пурăнатпăр, хаваслăн ĕçлетпĕр.

Совет правительстви 1935 çулти июнĕн 27-мĕшĕнче, Чăваш республики 15 çул тултарнă майĕпе, ăна лайăх ĕçлесе пынăшăн чи пысăк та чаплă парне—

Ленин орденӗ парсапарнелерӗ. Халӗ пирӗн республика—орденлӑ республика.

Ҫак хаклӑ парнене илнӗшӗн пирӗн чӗресем пысӑк савӑнӑҫпа тулаҫҫӗ. Кашниннех пирӗн ҫӗнӗ вӑй, ҫӗнӗ хӑват, ҫӗнӗ хаваслӑх ӳссе пырать.

Пирӗн ҫӗршыв хӑватне тӑшмансем хавшатаймӗҫ.

## Пионерсем.

Пионерсене Ленин ачисем теҫҫӗ. Вӗсем Ленин каласа хӑварнисене туса пыраҫҫӗ. Ленин ҫулӗпе утаҫҫӗ. Ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тунӑ ҫӗрте хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Пионерсем питӗ тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ. Вӗреннӗ чухне кая юлаканнисене пулӑшаҫҫӗ. Пионерсем вӗренӳре—ударниксем.

Пионерсем халӑх хушшинче те ӗҫлеҫҫӗ.

Пионер халӑх тӑшманӗсене ҫӗмӗрсе пыма пулӑшать.

Пионер пур ӗҫхалӑх ачисемпе килӗшӳллӗ пурӑнать.

Пионер коммунистсен партийӗпе комсомола пулӑшать, комсомола кӗме хатӗрленет.

Пионер мӑйне хӗрлӗ галстук ҫыхса ҫӳрет. Пионер ӗҫхалӑх ӗҫӗшӗн кӗрешме яланах хатӗр.

— Пионер! Ӗҫхалӑх ӗҫӗшӗн кӗрешме хатӗр пул!

— Яланах хатӗр!

---

Пионерсене мӗншӗн Ленин ачисем теҫҫӗ?
Пионерсем камсене пулӑшаҫҫӗ?
Пионерсем мӑя мӗн ҫыхса ҫӳреҫҫӗ?
— Хатӗр пул!—тесен, пионерсем хирӗҫ мӗн калаҫҫӗ?

## Аннесен уявӗ.

Паян пире учитель Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен коммунистла кунӗ ҫинчен каласа пачӗ.

Ӗлӗк, революциччен, хӗрарӑмсене ҫын вырӑнне шутламан. Вӗсене ҫӗр те паман. Хӗрарӑмсем хут пӗлмен. Пупсен, юмӑҫсен суйине итлесе пурӑннӑ.

Пирӗн государствӑра халь хӗрарӑмсем арҫынпа

тан. Вĕсем çĕнĕ пурăнăç тунă çĕрте арçынпа танах ĕçлеççĕ. Хут вĕренеççĕ. Халь хĕрарăм докторсем, агрономсем, инженерсем, лётчиксем, учительсем нумай. Хĕрарăмсем ялсоветĕнче те, колхозра та, тĕрлĕ учрежденисенче те ĕçлеççĕ.

Ют çĕршывсенче капиталистсем ĕçхĕрарăмĕсене халь те çын вырăнне хумаççĕ. Унги ĕçхĕрарăмĕсем çак кун демонстрацие „Эпир Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем пекех ирĕклĕ те савăнăçлă пурăнăçшăн" текен лозунгпа тухаççĕ.

Эпир аннесен уявне лайăх ирттерес тесе йышăнтăмăр. Мартăн 8-мĕш кунĕнче савăнăçлă каç тăвас терĕмĕр. Вăл каç эпир хамăр мĕн вĕреннисене, мĕн ĕçленисене каласа парăпăр. Аннесене хăйсен ĕçĕсем çинчен, халăх хушшинче мĕн ĕçлени çинчен каласа пама ыйтăпăр. Унтан спектакль лартса парăпăр. Тĕрлĕ вăййăсем выльăпăр. Юрăсем юрлăпăр.

**Март уйăхĕн 8-мĕшĕ—Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен коммунистла кунĕ.**

## Паранджана çунтарни.

— Ниаз[1], чуста çăр!
— Ниаз, вут чĕртсе яр!
— Ниаз, Ахмет йĕрет!

Çапла Ниаз амăшĕ, узбек хĕрарăмĕ, хăйĕн хĕрне тĕрлĕ ĕç хушнă. Паян вĕсем патне хăнасем пухăнмалла.

Ниаз пур ĕçе те туса çитерчĕ. Пӳрте те тасатса пуçтарчĕ. Урайне ковĕрсем сарса хучĕ. Кил хушшине шăлма тытăнчĕ.

Акă хăнасем килсе кĕчĕç. Пурте арçынсем. Ниаз

[1] Ниаз—узбек хĕрачи ячĕ.

хăвăртрах амăшĕ хыçне пытанчĕ. Хĕрарăмсен арçынсене хăйсен питне кăтартма юрамасть. Çавăн пек тĕшмĕш пулнă узбексен. Пите хупласа çӳремешкĕн вĕсен хура пĕркенчĕк пекскер пур, ăна паранджа теççĕ. Ниаз хăнасем çине вăрттăн пăхса илет. Анчах амăшĕ ăна асăрхать те ятласа пăрахать.

Ниаз, кăмăлсăр пулса, амăшĕнчен ăна хăйĕн юлташĕ—Хамра ятлă хĕрача патне яма ыйтать.



Ниаз Хамрана урамра тĕл пулчĕ.

— Атя, Ниаз, клуба кайăпăр,—тет Хамра.

Ниаз кайма хавасах. Иккĕшĕ пĕрле клубалла утрĕç.

Вĕсем клуб патне çитнĕ çĕре клубран хĕрарăмсем хĕрлĕ ялавсемпе тухаççĕ. Пĕр хĕрарăмĕ ертсе пырать.

Урамра иртсе пыракансем пурте хĕрарăмсем çине тĕлĕнсе пăхаççĕ. Хĕрарăмсем площаде çитрĕç те чарăнчĕç.

Унтан вĕсем вут чĕртсе ячĕç.

Хĕрарăмсене ертсе пыраканни варрине тухса тăчĕ те:

— Пур узбек хĕрарăмĕсен те паранджана хывса пăрахмалла. Паранджа пире пурăнăçра та, ĕçре те кансĕрлет. Çунтарса ямалла ăна,—терĕ.

Вара хĕрарăмсенчен нумайĕшĕ питне хупласа тăракан паранджана сӳсе илсе вутта пăрахрĕç. Вут вăйлă çулăмпа çунма тытнăчĕ.

Ниаз, килне пырсан, хăй урамра мĕн курнине амăшне каласа пачĕ. Çавăнтан вара хăй те паранджине хывса печĕ.

## Сăпка юрри.

Ҫывăр, манăн савнă хěрěм,
Ҫывăр канлě ыйхăпа.
Эс ӳсетěн пит телейлěн,
чи хаваслă кунҫулпа.
Сан ҫине ӳкет хěвелěн
ăшă, ҫутă пайăрки,
сан аннӳ—Совет ҫěршывěн
паттăр, ирěклě ҫынни.
Эс халех юрласшăн юрă,
эс кулатăн хаваспа.
Пěчěклех ытла хăюллă,
ӳссен вěҫěн сывлăшра.
Пысăк сывлăхпа ӳсетěн,
ак эс пуҫлăн вěренме.
Эпě лётчик пулăп,—тетěн,
вěҫме кайăн пěлěте.
Ун чухне асилěн, хěрěм,
эсě паттăр ятсене.
Вěсем пек вара, хěвелěм,
вěҫěн инҫете, ҫӳле...
Ҫывăр, хěрěм, пěчěк хěрěм,
ҫывăр канлě ыйхăпа.
Эс ӳсетěн пит телейлěн,
чи хавлслă кунҫулпа.

## Таня—революционерка.

Ку патша вăхăтěнчех пулнă. Эпě ун чух вуниккěре анчахчě.

Манăн атте наборщик пулнă, анне ҫěвě ҫěленě. Атте революционер пулнă.

Хальхи пек астăватăп ҫав каҫа.

Пěрре ыйăх тěлěшпе илтетěп: атте савăнăҫлăн килсе кěчě те аннене калать:

— Тупрăм... Ыран пин листовка ҫапса кăларатпăр. Ăна юлташсем заводсем тăрăх салатса тухěҫ.

Вăл сěтел ҫине шрифт кăларса тăкрě.

Эпě ҫавăнтах ěҫ мěн ҫинчен пынине ăнланса илтěм. Аттепе анне ҫак саспаллисемпе патшапа пуянсене хирěҫ листовкăсем ҫапса кăларма пуҫлаҫҫě.

Эпě каллех ҫывăрса кайрăм. Сасартăк ыйăх витěр такăшě ман минтере йăшăлтаттарнине сисетěп.

Куҫа уҫатăп та куратăп: ман тěле анне пěшкěнně те ман минтер айне темěн чикет, хăй шап-шурă шурса кайнă. Юнашар пӳлěмре йывăррăн утни илтěнет.

— Анне, кам унта?—тесе пăшăлтатса илтěм.

— Обыскпа килнě, ачам, эсě ҫывăр, тен, сана тивмěҫ.

Алла минтер айне чиксе ятăм та—тутăрпа чĕркенĕ шрифт выртать. Тупсан—хуйхă пулать. Пытарас пулать. Часрах. Анчах ăçта пытарас? Кăмакана хурас-и? Шкафа-и? Тупаççĕ.

Сасартăк чухларăм. Чӳрече çинче кăкшăм тăрать. Унта çур кăкшăм сĕт.

Эпĕ ерипен чӳрече патне чупса пытăм та шрифта кăкшăма шăмпăлт тутартăм. Хам каллех кровать çине кĕрсе выртрăм.

Кĕчĕç. Шырама тытăнчĕç. Пĕтĕмпех шыраса пĕтерчĕç. Мана та кровать çинчен тăратрĕç.

Атте тăрать, шап-шурă шурса кайнă. Анне кĕтессе кайса хĕсĕннĕ.

Пăтратрĕç, пăтратрĕç, нимĕн те тупаймарĕç.

Пурте тухса кайсан, атте калать:

— Тĕлĕнмелле, шрифт шыва путнă, тейĕн.

Эпĕ кулса ятăм та кăшкăратăп:

— Шыва мар, атте, сĕте путнă,—тетĕп.

Атте ăнланса илчĕ. Кăкшăм патне ыткăнчĕ.

— Танюш, эсĕ-и ăна кунта янă?—тет.

Ман пата пычĕ те, мана хăй çумне çупăрласа тытса:

— Ну, хĕр те манăн. Санран чăн-чăн революционерка пулать,—терĕ.

## Челюскинецсем.

„Челюскин" парохода питĕ аякка, Çурçĕрти Аслă тинĕс çулне тĕпчеме янă. Тĕпчев ĕçĕн начальникĕ—Отто Юльевич Шмидт, пароход капитанĕ—Воронин пулнă.

„Челюскин" аякран аякка кайса пырать. Ишнĕ май ун çулне пысăк пăрсем ытларах та ытларах картласа пыраççĕ.

Пăрсем парохода ишме чăрмантараççĕ. „Челюскина" ишмешкĕн кунсерен йывăрланса пырать.

Февралĕн 13-мĕш кунĕнче пысăк пăрсем тискеррĕн шавласа, шăтăртатса, парохода хĕссе хунă. „Челюски-

нăн“ сулахай аякки шăтса кайнă. Пароход ăшне шыв, ванчăк пăр кĕре пуçланă. Вара Воронин капитан команда панă:

— Пăр çине тухмалла!

Челюскинецсем пароход çинчен пăр çине апат-çимĕç, палаткăсем, мамăк, тиртен тунă утиялсем йăтма тытăннă, нефть пичкисене кустарса тухнă.

Пароход путнă. Çынсем пысăк пăр çинче, çара çĕре, юрсем хушшине тăрса юлнă Кунта хĕрарăмсем те, пĕчĕк ачасем те пулнă.



В. С. Молоков.



М. В. Водопьянов.

Анчах челюскинецсем хуйăха ӳксе ларман. Вĕсем пăр çинче хӳтлĕхсем тума тытăннă. Палаткăсем карнă, радиоприёмник, радиопередатчик лартнă.

„Челюскин“ начальникĕ Шмидт радио тăрăх „Челюскин“ тинĕсе путни çинчен пĕлтернĕ.

Пĕренесемпе хăмасенчен челюскинецсем хĕрарăмсемпе ачасем валли йывăç барак туса лартнă. Ыттисем палаткăсене вырăнаçнă.

Васкаса аэроплансем лармалли вырăн—аэродром тума тытăннă. Пăра касса якатнă. Унта çӳллĕ юпа лартса, хĕрлĕ ялав çакнă. Февралĕн 27-мĕшĕнче че-

люскинецсен пысăк савăнăç пулнă. Вĕсем Сталин юлташран тата правительствăран саламлă телеграмма илнĕ.

Пăр çинче пурăнма питĕ йывăр пулнă. Çанталăк тĕттĕм пулнă, хаяр сивĕсем шăнтса тăнă. Челюскинецсем вырăнаçнă пăр океана шаларах та шаларах кайса пынă.

Çав вăхăтра челюскинецсем патне пур енчен те лётчиксем вĕçнĕ. Лётчиксене çил-тăмансем, тĕтресем, хаяр сивĕсем чăрмантарнă. Анчах лётчиксем парăнман. Çил-тăмансем, тĕтресем витĕр аэроплансем челюскинецсем патнелле вĕçнĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнче челюскинецсен лагерĕ тĕлĕнче аэроплан курăннă. Пурте аэродром çине васкаса чупнă. Сасартăк пĕри кăшкăрса янă.

— Çамолёт! Ур-р-ра!..—Пурте хĕпĕртесе ӳкнĕ. Нумайĕшĕ пĕрне-пĕри чуптунă. Хăшĕ йĕрсе янă...

Çав вăхăтра самолёт, моторĕсемпе шавласа, аэродром çине анса ларнă.

Шмидт хушнипе самолёт чи малтан хĕрарăмсемпе ачасене илсе кайнă.

---

Апрелĕн 10-мĕшчен лётчиксем челюскинецсен лагерне çитме пултарайман. Вĕсене çил-тăмансем, тĕтресем, шартлама сивĕсем чăрмантарнă. Самолётсем вĕçнине пĕтĕм тĕнче асăрхаса тăнă. Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕççыннисен шухăшĕ лётчиксемпе челюскинецсем çинче пулнă.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче, ирхине, лагерĕн аэродромĕ тĕлĕнче каллех аэроплансем курăннă. Пилĕк самолёт тăватă кун хушшинче пăр çинчен мĕнпур челюскинецсене илсе тухнă. Челюскинецсен сакăр йытă пулнă, лётчиксем вĕсене те илнĕ. Челюскинецсен лагерĕ пулнă пăр çинче совет çĕршывĕн пысăк хĕрлĕ ялавĕ кăна вĕлкĕшсе тăрса юлнă.

Пĕтĕм çĕршыв челюскинецсене хăтарнă хыпара питĕ хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ. Челюскинецсене хăтарнă

лётчиксене, 7 çынна Совет правительстви Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Вĕсем çаксем: Водопьянов, Доронин, Каманин, Леваневский, Ляпидевский, Молоков, Слепнев.

## Виçĕ паттăр.

Пирĕн çĕршыври лётчиксем мĕнпур ытти çĕршывсенчи лётчиксенчен инçерех, çÿлерех, хăвăртрах вĕçеççĕ. Вĕсем, чаплă вĕçевсем туса, пирĕн çĕршыв сыхлăх тĕрекне çирĕплетеççĕ.

1938-мĕш çулта, сентябрĕн 24-мĕшĕнче, виçĕ паттăр лётчик—Гризодубова, Осипенко тата Раскова Мускавран пĕр чарăнмасăр Инçетри Хĕвелтухăçне çитме „Родина" ятлă самолётпа вĕçсе кайнă.

Çак виçĕ паттăр пĕр лармасăр 6450 километр вĕçнĕ. Сывлăшра 26 сехет те 29 минута пулнă. Бензин пĕтнипе вĕсем никам пурăнман шурлăхла вырăна анса ларнă.

Çак чаплă вĕçевшĕн правительство вĕсене виççĕшне те Ленин орденĕ тата Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

## Ĕмĕр манми лётчик.

Пирĕн çĕршывра Валерий Павлович Чкалов ятне пĕлмен çын çук. Валерий Павлович пирĕн çĕршыври чи паттăр та аслă лётчиксенчен пĕри, Совет Союзĕн Геройĕ пулнă.

Вăл 1904-мĕш çулта Горький облаçĕнчи Васильево-Слобода ялĕнче çуралнă. Ашшĕ унăн рабочи пулнă. Валерий ача чухнех питĕ хăюллă пулнă. Юлташĕсем хушшинче вăл яланах паттăр пулса çÿренĕ. Анчах унăн ача чухнехи пурăнăçĕ савăнăçлă пулман. Хаяр та йывăр 1919-мĕш çул иртсе пынă. 15 çулхи Чкалов хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне кĕнĕ. Вăл самолётсене юсакан мастер пулса ĕçленĕ. Чкалов лайăх ĕçленине кура

ăна лётчиксен шкулне вĕренме янă. Унтан вăл Мускаври высший пилотаж шкулне кĕнĕ.

Вĕренсе тухсан, вăл çар лётчикĕ пулса ĕçленĕ, çĕнĕ самолётсене сăнас тĕлĕшпе ĕçленĕ.

Çĕнĕ самолётсене сăнанă чухне тĕлĕнмелле хăюллăхне тата паттăрлăхне кăтартнăшăн ăна 1935-мĕш çулта правительство Ленин орденĕ панă.



1936-мĕш çулта Чкалов хăйĕн юлташĕсемпе, Байдуковпа тата Беляковпа пĕрле, Мускавран Амур çинчи Удд утравĕ çине пĕр анса лармасăр вĕçсе тухнă. Çакăн хыççăн вĕсене виççĕшне те правительство Совет Союзĕн Геройĕ ятне тата Ленин орденĕ панă. Удд утравне Чкалов ятне панă.

1937-мĕш çулта Валерий Павловичпа унăн юлташĕсем, пĕр анса лармасăр, Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна вĕçсе тухнă.

1937-мĕш çулта Совет ĕçхалăхĕ Чкалов юлташа СССР Верховный Совечĕн депутатне суйланă.

1938-мĕш çулта, декабрĕн 15-мĕшĕнче, çĕнĕ самолёта сăнанă чухне, Валерий Павлович вăхăтсăр вилĕмпе вилнĕ. Валерий Павлович чи хăюллисенчен те хăюллăраххи пулнă. Пĕтĕм совет халăхĕ унăн ятне хисеплесе аса илет. Унăн ячĕ ĕмĕрне те пирĕн асран каймĕ.

## Нимĕçсен аэродромне çĕмĕрсе тăкни.

Кăнтăр фрончĕн сывлăшри разведки Таганрог хули çывăхĕнче тăшманăн аэродромĕ пуррине пĕлнĕ.

Фашистсен йăвине çĕмĕрсе тăкма Красовский юлташăн лётчик-истребителĕсене хушнă пулнă. Аэро-

дрома çĕмĕрсе тăкас ĕçе ертсе пыма Картузов капитана хушнă.

Çăмăл çунатлă совет машинисем çутăличчен нумай малтан вĕçсе тухма хатĕр тăнă. Лётчиксем сигнала чунтан хумханса кĕтнĕ. Акă çутăлас умĕнхи шуплакарах тĕттĕмре моторсем кĕрлесе кайнă. 12 истребитель сывлăша вĕçсе хăпарнă та нимĕçсен аэродромĕ еннелле çул тытнă. Картузовпа юлташĕсем тăшман çине вăл кĕтмен енчен пырса тухнă.

Акă ĕнтĕ аэродром та курăнать. Йывăр „Юнкерссем" патĕнче нимĕç лётчикĕсем кĕшĕлтетеççĕ. Вĕсем вĕçсе тухма хатĕрленеççĕ курăнать. Картузов капитан, хăйĕн самолёчĕн çунаттисемпе сулласа илсе, атака пуçлама сигнал панă. Унтан вăл 400 метр çӳллĕшĕнчен хăйĕн тупписемпе пулемĕчĕсенчен тăшманăн машинисем çине вут тăкма тытăннă.

Çав тери хăвăрт пырса çапнипе, фашистсем ăнакăна тавçăрса та илеймен. Вĕсен вĕçсе тухма хатĕр тăракан тăватă бомбардировщикне вут хыпса та илнĕ.

Нимĕçсем зенитнăй пулемётсенчен урса кайсах пеме тытăннă. Анчах нимĕнрен хăраман Картузов хăйĕн ăмăрткайăкĕсене иккĕмĕш хут атакăна ертсе кайнă. Нимĕçсен пуçĕсем çине вутлă çумăр чашлаттарнă. Вут хыпса илнипе тата икĕ „Юнкерс" сирпĕнсе кайнă. Фашистла çăхансен йăвине пĕтерсе тăкнине хăй куçĕпе хăй курса, капитан каялла таврăнма сигнал панă. Вара 12 истребителĕ те пĕр сиенленмесĕрех каялла таврăннă.

## Çурçĕр полюсне кĕрешсе илни.

Юлашки çĕр çул хушшинче тĕрлĕ государство çыннисем Çурçĕр полюсне çитсе унта мĕн пуррине пĕлме тăрăшнă. Çурçĕр полюсне Англи çынни Керс, Австри ученăйĕ Парьер, Норвеги ученăйĕ Фритиоф Нансен тата ыттисем те çитме пикеннĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри, унта çитнĕ пулин те, наукăна усăллă паллă ĕçсем тăвайман.

1909-мĕш çулта Америкăри паллă поляр тĕпчевçи Роберт Пири Çурçĕр полюсĕ патне çитнĕ. Анчах вăл унта темиçе сехет хушши кăна пулнă.

1926-мĕш çулта Америка лётчикĕ Берд самолётпа полюс тĕлĕнче ик-виçĕ хут вĕççе çавăрăннă.

Çурçĕр полюсне чăннипех тĕпчесе пĕлес задачăна пирĕн тăван çĕршыв кăна пурăнăçа кĕртме пултарчĕ. Пирĕн çĕршывăн хастарлă та паттăр лётчикĕсем 1937-мĕш çулта Çурçĕр полюсне çитнĕ. Унта вĕсем хĕл каçмашкăн тăватă чаплă çынна хăварнă. Çав çынсем—Папанин, Ширшов, Федоров тата Кренкель пулнă. Вĕсем çак полюс тĕлĕнчи куçса çӳрекен пăр çинче 9



уйăх пурăннă. Кашни кунах вĕсем полюс çинче мĕн пуррине, унта шыв мĕнле юхнине тата ыттине те сăнанă. Хăйсен сăнавĕсене радиопа пĕлтерсе тăнă.

Халиччен Çурçĕр полюсĕнче чĕрчунсем çук пуль тесе шутланă. Папанинецсем кунта чĕрчунсем пуррине палăртрĕç.

Çак хастарлă тăватă çын пурăннă пăр хĕвеланăçнелле юхса пынă, çуркуннеле çурăлса вакланма тытăннă. Юлашкинчен вăл пĕчĕк çеç катăк пулса юлнă. Совет лётчикĕсем тата совет морякĕсем çак хастарлă тăватă çынна пăр çинчен илме пултарчĕç.

Пирĕн çĕршыв çак хастарлă çынсене пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ.

Наукăшăн питĕ паха ĕççем тунăшăн пирĕн правительство Папанина, Федорова, Ширшова тата Кренкеле Ленин орденĕсем парса парнелерĕ тата Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕ.

# Магнитогорск.

Темиçе çул ĕлĕкрех Урал шывĕ хĕрринче вĕçĕ-хĕррисĕр çеçенхир сарăлса выртнă, кăлкан чаштăр-татса ларнă. Сайра-хутра кĕтӳçĕ выльăхсене хăваласа кăшкăрнă сасă илтĕннĕ.

1929-мĕш çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче, Магнитту тăвĕсем патне халь кăна хурса тухнă рельсăсем тăрăх пирвайхи поезд пырса тăнă. Халиччен курман машинăна хирĕç тухса илме аякри ялсенчен хресченсем пынă.

Паровоза курсанах, лашасем çеçенхирелле сиккипе тарнă. Тĕвесем те хăрăлтатакан сасăпа çухăрса тарнă.

Казахсем, киргизсем, цыгансем паровоза сырса илсе алăпа хыпашласа пăхнă.

Çак пĕрремĕш поезд Магнитогорск заводне тума килекен рабочисене илсе пынă. Кӳршĕри станицăсен-чен хресченсем завод тума килнĕ рабочисене валли тырă илсе пынă.

Унтанпа темиçе çул кăна иртнĕ. Урал çеçенхирĕнче пысăк завод—металл завочĕ ӳссе ларчĕ. Вăл пысăкă-шĕпе пĕтĕм тĕнчере иккĕмĕш вырăнта тăрать. Заводпа пĕрлех пысăк хула пулса тăчĕ. Унта халь 200 пин çын ытла пурăнать. Ку хула—Магнитогорск. Каçхине вăл электричество çутипе йăлтăртатса ларать. Ун урамĕсем тăрăх автобуссем çӳреççĕ, автомобильсемпе мотоциклсем чупаççĕ. Урам тăваткăлĕсенче громкого-ворительсем Магнитогорск театрĕнчи спектакле е концерта парса тăраççĕ.

Кашни кунах аэропланcем Мускава вĕçсе кайса килеççĕ. Никам та тĕлĕнсе пуçне çĕклесе пăхакан çук.

Кăнтăрла та, каç та тупă сасси пек кĕмсĕртетни илтĕнет. Кунтан та тĕлĕнекенни çук, тимĕр рудана динамитпа çĕмĕрнине пурте пĕлеççĕ.

Темиçе вунă квадратла километр талкăшĕнче ме-таллурги комбиначĕн çурчĕсем ларса тухнă. Кунта домна кăмакисем, хурçă шăратакан цехсем, электро-станцисем. Çапла 5—6 çул хушшинче çĕнĕ пысăк завод тата çĕнĕ пысăк хула пулса тăчĕç.

# Пирĕн тăван çĕршыв.

Пирĕн тăван çĕршыв—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ. 1917-мĕш çултанпа пирĕн çĕршывра пĕтĕм власть, пĕтĕм ирĕк рабочисемпе хресченсен аллинче, пĕтĕм ĕçхалăхĕ аллинче.

Рабочисемпе хресченсем, пĕтĕм ĕçхалăхĕ, тĕпрен илсен, çĕнĕ пурăнăç—социализмлă пурăнăç, турĕç. Пĕтĕм ĕçхалăхне хаваслă çĕнĕ пурăнăç тăвас ĕçре коммунистсен партийĕпе унăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыраççĕ.

Пирĕн аслă та чаплă çĕршыври ĕçхалăхĕн пурăнăçĕ çултан çул вăйланса, тĕрекленсе пырать. Колхозсене пĕрлешнĕ хресченсем пуян та культурăллă пурăнаççĕ. Рабочисем, стахановла ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынипе, пуян пурăнмашкăн май илчĕç. Пурăнма çăмăлтарах та хаваcрах пулса тăчĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче пурăнăç йăлтах урăхла. Унта рабочисем ĕç тупаймасăр аптăраççĕ. Ĕç тупайманнипе темĕн чухлĕ рабочи, çемьисемпе пĕрле, выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ.

Фабрикăсенче, заводсенче ĕçлекен рабочисен те унта пурăнăç калама çук йывăр. Ĕçкунĕ вăрăм, ĕçукçи выçăллă-тутăллă пурăнмашкăн кăна çитсе пырать.

Рабочисене, ĕçхалăхне капиталистсемпе помещиксем калама çук хытă хĕсĕрлесе усраççĕ. Хăйсен пурăнăçне лайăхлатма тăрăшса капиталистсене хирĕç тухакан рабочисене персе пăрахаççĕ, тĕрмесене лартаççĕ.

Ют çĕршывсенчи революциллĕ рабочисем пирĕн тăван çĕршыври пурăнăç епле юсанса пынине асăрхаса тăраççĕ. Пирĕн Совет Союзне тĕнчери рабочисем хăйсен тăван çĕршывĕ тесе хисеплеççĕ.

Хамăрăн тăван çĕршывăмăра Совет Союзне вăрăхурахла тапăнса кĕнĕ фашистсене эпир тĕпĕ-йĕрĕпе çапса аркататпăр.

„Пире ют çĕр пĕр пусăм та кирлĕ мар. Анчах хамăрăн çĕре те, хамăрăн пĕр вершук çĕре те никама та памастпăр". (Сталин).

# Аслă уяв.

Декабрь уйăхĕ. Çанталăк сивĕ, пур çĕрте те юр. Анчах Совет çĕршывĕн кашни гражданинĕн чĕринче çуркунне,—декабрĕн 5-мĕшĕнче Сталинла Конституцие çирĕплетнĕ. Халăх çĕнĕ Конституцие çирĕплетнĕ, социализмлă государствăн тĕп законĕ пурăнăçа кĕнĕ.

Çавăнпа та 1936-мĕш çулхи декабрĕн 5-мĕш кунĕ питĕ пысăк савăнăçлă уяв пулса тăрать.

Тĕнчен улттăмĕш пайĕнче капитализм пусмăрĕнчен хăтăлнă çынсем социализм туса çитернĕ. Социализмлă пурăнăçăн тĕп законне тунă. Çав законри кашни статья—халăх телейне пĕлтерсе тăрать. Пирĕн Конституцин кашни статьинче—пирĕн тăван çĕршывăн никам çĕнтерейми тĕрекĕ, аслă вăйĕ курăнса тăрать. Хĕвел тĕнчере яланах ялтăртатса тăнă пек, Конституцине тунă аслă Сталин ячĕ пирĕншĕн ялан ялтăртатса тăрĕ.

Пирĕн çĕршыв халь социализм йĕркипе, социализм законĕпе пурăнать. Ку закон—хаваслă, телейлĕ, вĕçĕмсĕр ырă пурăнăçăн законĕ. Пирĕн çĕр çинче çынна çын пусмăрламасть. Пирĕн çĕр çинче пусмăр айĕнче пурăнакан халăхсем çук. Пирĕн çĕр çинче ĕç шыраса асапланса çӳрекен çук. Пирĕн çĕршывра кашниех ыран паянхинчен лайăх пулассине пĕлсе тăрать.

Пирĕн тăван çĕршыв—социализмлă пурăнăçăн тăван çĕршывĕ. Çав çĕршывшăн кашни ĕççынниех, кирлĕ пулсан, хăйĕн пурăнăçне, хăйĕн юнне пама хатĕр.

Сталинла Конституцие çирĕплетнĕ куна, декабрĕн 5-мĕш кунне, Пĕтĕм Союзри советсен чрезвычайный 8-мĕш съезчĕ, пĕтĕм халăх праçникĕ туса, çулсерен уявласа пыма йышăнчĕ.

# Пирĕн тав.

Сана, юратнă аслă Сталин,
тăван атте, пирĕн çулпуç,
çĕршывăн пур хулийĕ, ялĕ
калаççĕ ăшшăн: тавтапуç.

Пире эс ыра пурнăç патăн,
телейлĕ ÿстерен пире.
Çĕршыв ÿсет илемлĕ сад пек,
янăраççĕ юрăсем хитре.

Епле чечен пирĕн ачалăх,
епле телейлĕ ачасем.
Халь пур çĕре те уçă алăк,
пур шкулсене те, пур ĕçе.

Вĕрен, ĕçле, пул çивĕч, паттăр,
ĕçре, кĕрешÿре çĕнтер.
Çĕршыв тав тутăр, орден патăр,
халăх: Герой тесе чĕнтĕр.

## Паттăр пионер.

— Ну, Павлик, эпир каятпăр. Пăлтăр алăкне питĕрсе çывăр,—терĕ амăшĕ.

— Атте, мĕнле сасăлани çинчен каласа парăн вара мана.

— Каласа парăп, ывăлăм, каласа парăп.

— Суйлав мĕнле пуçланнине манăн та курас килет çав...

— Эпир таврăнсан кайса курăн эс.

Ашшĕпе амăшĕ тухса кайрĕç. Павлик пăлтăр алăкне питĕрсе кĕчĕ. Хăй вырăнĕ умĕнчи будильник çине пăхса илчĕ. Ултă сехет çитет. Ытла та ир. Анчах ыйхă килмест. Ăçтан ыйхă килтĕр-ха? Пĕтĕм çĕршыв Верховный Совета депутатсем суйлать паян. Паллах, Верховный Совет мĕн иккенне, депутатсене мĕнле суйлассине лайăх пĕлет Павлик. Ку тĕлĕшпе вăл хăй те колхоза нумай пулăшнă. Хăйĕн звенинчи пионерсемпе пĕрле ватă колхозниксене Конституципе суйлав положенийĕ çинчен ăнлантарнă. Ак, паян та, суйлава пынă çынсене савăнăçлăрах пултăр тесе, тĕрлĕрен выступленисем туса памалла-ха вĕсен. Павликăн та сăвă каламалла. Акă вăл сĕтел умне тăчĕ те

лăпкă сасăпа сăввине калама пуçларĕ. Лайăх вĕренн иккен, пĕр такăнмасăр каларĕ вăл. Унтан, сĕте хушшине ларса, пограничниксем çинчен çырнă кĕне кене вулама тытăнчĕ. Кун пек кĕнекесене вулам пит юрататъ Павлик. Вĕсем хăйсем те чикĕ çывăхĕн чех пурăнаççĕ. Сасартăк пăлтăр алăкне шак-шак! тутар ни илтĕнсе кайрĕ. Павлик татах шаккасса кĕтсе тăч Анчах урăх сасă пулмарĕ. Вăл урине çăматă тăхăнч те кусар тытса пăлтăра тухрĕ. Тулта такам юра чăкăр чакăр тутарса утни илтĕнчĕ. Мĕн пулсан та пулать тесе, Павлик алăк уçрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Такам красноармеецла тумланнăскер, мунчаран лăпчăнс тухать.

— Мĕн тăватăн унта!—кăшкăрса ячĕ Павлик.

— Пăртак ăшăнас терĕм-ха—ответлерĕ лешĕ те шикленнĕ пек сасăпа. Вара, урăх калаçса тăмасăрах анкарти хыçнелле утса кайрĕ.

— Ырă çын мар ку. Пограничниксем кун пе çÿремеççĕ,—шухăшларĕ Павлик. Часрах пÿрте кĕч те, пальтопа çĕлĕк тăхăнса, каялла чупса тухрĕ Шинельлĕ çын анкарти хыçĕнчи çулпа вăрман еннелл васкаса утнине курсан, Павлик шкулалла çил пе вĕçтерчĕ. Çав вăхăтра тăкăрлăкран икĕ юлану персе тухрĕç. Павлик савăннипе чутах кăшкăрс яратчĕ.

— Иванов юлташ!—терĕ вăл чупма чарăнса,—шан чăксăр çын... вăрман еннелле кайрĕ...

— Çавă-и?—терĕ Иванов.

Пограничниксем Павлик каласа пĕтерессе те кĕт мерĕç, лашисене çавăрчĕç те урам тăрăх ял вĕçнелл ыткăнчĕç. Вĕçем хыççăн Павлик та килне чупса килч пÿрт çумĕнчен вăрман еннелле пăхса тăрать. Леш çы вăрманалла çывхарса пырать.

— Часрах, часрах—тет Павлик, хăй ăшĕнче погра ничниксене васкатса. Ака хайхи этем чупма пуçларĕ Анчах ăна пограничниксем хуса çитрĕç. Çав вăхăтр пăшал сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Шпион! Шпион! А-а, тытрĕç!—терĕ Павлик, хавассăн кăшкăрса.

Çапла Пĕтĕм Совет Союзĕнчи халăхсем Верховный Совета депутатсем суйланă кун пĕчĕк пионер пограничниксене пысăк шпиона тытма пулăшрĕ.

## Алла Ивановăпа Аня Костюкова.

Хабаровскри 5-мĕш номерлĕ шкулти отряд вожатăйĕ Алла Иванова Посьетре хăйсен тăванĕсем патĕнче хăнара пулнă.

Çав вăхăтра чикĕрен: японецсем пирĕн çĕршыв çине тапăнчĕç, текен хыпар çитнĕ. Япони захватчикĕсене хирĕç пирĕн боецсем паттăр çапăçнă.

Çапăçусем Посьетрен инçех те мар пулнă. Часах унта суранланнă боецсене илсе пыра пуçланă.

Çак вăхăтра нимĕн тумасăр ларма юраманнине Алла лайăх ăнланнă. Çĕршыва паттăр сыхлакан тăван боецсене кашнинех мĕнле те пулсан пулăшмалла. Чумай шухăшласа тăмасăрах, Алла командованин çаçне каять.

— Эсир эпĕ шкулта вĕренекен çеç-ха тесе ан иккĕленĕр, эпĕ госпитальре ĕçлесе усă тума пултарапăп,—тенĕ вăл начальнике.

Алла çав тери хĕрӳллĕн каланипе начальник килĕшнĕ. Пионеркăна госпитале ĕçлеме янă. Вăл хăйне шанса панă ĕçе лайăх тунă. Алла кунĕн-çĕрĕн суранланнисем патĕнче пулнă, суранĕсене салтса çыхнă, апат çитернĕ, вĕсене хаçат-журналсем вуласа панă.

Тепĕр госпитальре Сучан хулинчи шкулта вĕренекен 16 çулхи Аня Костюкова сестра пулса ĕçленĕ. Шкулта вăл „Санитари оборонине хатĕр пул“ значок нормине „отлично“ панă. Хăйĕн значокне тивĕçлипех акса çӳренине Аня кирлĕ вăхăтра чăннипех кăтартрĕ. Госпитальре Аня питĕ лайăх ĕçленĕ, унта ăна пурте— суранланнисем те, госпитальре ĕçлекенсем те юратнă.

Хăюллă пулса, суранланнă боецсене пулăшнăшăн правительство çамрăк патриоткăсене—Алла Ивановăпа Аня Костюковăна „За боевые заслуги“ медальпе награды наградăланă.

## Пĕччен.

Турхан ялĕнче Хветут ятлă единоличник пурăнать. Пĕрре çак Хветута пухăва чĕнчĕç. Пухура колхоз усси çинчен каласа пачĕç. „Хветут мучи, колхоза кĕр“,—теççĕ.

— Ак, тупнă тата,—тет Хветут.—Пит кирлĕ мана сирĕн колхозăр. Хам килте эпĕ хам пĕлнĕ пек ĕçлетĕп: мĕн тăвас тенĕ çавна тăватăп. Ĕçлес тесен—ĕçлетĕп, канас тесен—канатăп,—терĕ те Хветут колхоза кĕмерĕ.

Çуркунне пулчĕ. Юр ирĕлсе пĕтрĕ. Çĕр хуралса кайрĕ. Ака тума вăхăт çитрĕ. Хветут хăйĕн хăла лашине сухапуç кўлсе ячĕ те хăйĕн çĕрне сухалама кайрĕ. Çĕрĕ унăн татăк-татăк, анисем вак-тĕвек. Пĕр ани кунта, тепри таçта—пĕр-икĕ километр аякра.

Хветут сухалать, сухапуçĕ çине пусса пырать. Ялан пĕшкĕнсе пынипе пилĕкĕ ыратать унăн. Кăнтăрлара ăна ывăлĕ, Миша, апат илсе килсе парать.

Хăла лаши аран уткалать. Сухалассине те тарăн сухалаймасть, шăйăрттарса кăна пырать. Вăл хĕлле апат начар çинĕ. Утă сахал панă ăна.

Хветут апат çиет те каллех ĕçе тытăнать. Анчах ĕçĕ пĕрре те ўсĕнмест. Пĕччен нумаях сухалаймăн.

## Колхозра.

Турхан ялĕнчи колхозра ĕç вĕресе тăрать. Каçалапа колхоза тракторсем килчĕç. Ирхине ирех трактористсем тракторсем çумне пысăк плугсем кăкарса ячĕç те ака тума тухса кайрĕç.

Тракторсем хирте вĕçе-вĕçĕн кĕрлесе пыраççĕ, çĕре тарăн сухаласа пыраççĕ.

Кăнтăрла тĕлĕнче ака тăвакансем аш яшкипе пăта

çирĕç; колхозран вĕсем патне вĕри апат илсе пычĕç. Апатлансан, трактористсем каллех кĕрлеттерсе сухалама тытăнчĕç. Тăвată касăллă плугсем кашни тăватшар суха касси чĕрсе пыраççĕ. Каç пуличчен тракторсемпе темĕн чухлĕ çĕре сухаласа тăкрĕç.

Ушкăнпа ĕç ăнса пырать. Ушкăнпа ĕçлеме те çăмăл, савăнăçлă. Пĕр çын тăвайманнине ушкăнпа тума пулать.

Колхозăн ĕçĕ ăнса пынипе колхозниксем пуян та савăнăçлă пурăннине курса, Хветут та колхоза кĕчĕ.



## Колхоз лашисем

Кил хушшинче лашасем
уçăлса çӳреççĕ.
Мăнтăр, çутă кĕлеткисем
куçа илĕртеççĕ.

Хури, кăвакки, туррисем—
пур темле тĕсли те.
Çамрăккисем, ваттисем,—
пур юпах тихи те.

Кил хушшинче мăн вите,
темĕн чухлĕ пӳлĕм.
Кантăксем пур, труби те,
ав, маччи те çӳллĕ.

Лашисене тăр шывпа
иккĕн шăвараççĕ.
Шăварсассăн, хырчăкпа
тасатса яраççĕ.

Хӳрисемпе çилхисем
лашисен тип-тикĕс.
Таканланă урисем
пĕр курмаççĕ тирĕс.

*Лашуна чăпăрккапа мар,*
*сĕлĕпе хăвала!*

# Ěне вити утта перекетлени.

Ваçук ашшĕ колхоз ферминче ĕнесене апат парса пăхса тăрать. Кăçалччен колхозăн ĕнесем валли уйрăм вите пулман. Ěнесене сивĕ картана хупкаласа усранă. Апатне те çĕрех тăкса панă.

Ěнисем апатне çурри çиеççĕ, çуррине тислĕк ăшне таптаса кĕртеççĕ. Ваçук ашшĕ кăна курать те колхоз правленине каять. „Ěне вити кăçалах тумалла. Вите çук пирки тата апат памалли кормушкăсем çук пирки колхоз ути сая каять",—тет.

Правленире Ваçук ашшĕ каланине сўтсе-яваççĕ те вите тума йышăнаççĕ.

Колхозра ĕçе нумая ямаççĕ. Платниксем те тупăнчĕç, йывăç та тупăнчĕ. Пĕр уйăх та иртмерĕ, витене туса та пĕтерчĕç. Витере уйрăм пўлĕмсем турĕç. Кашни пўлĕмне апат памалли кормушкăсем лартрĕç. Ěнесем апатне пĕр тăкмасăр çиеççĕ. Ěнесем ăшă витере тăнипе апачĕ те сахалтарах пĕте пуçларĕ.

Ваçук ашшĕ савăнать. Утă сахал пĕтнине курса, вăл кашни ĕне пуçне кунне мĕн чухлĕ утă перекетленине шутласа пăхать. Ěлĕкхинчен шутласан, кашни ĕнене халь кунне утă икĕ килограмм сахалтарах каять. Колхозра 30 ĕне. Хайхи ăшă витепе кормушкăсем кашни кун 60 килограмм утă перекетлеççĕ.

Колхозăн ĕне витине курма пыракансене кашнинех Ваçук ашшĕ çакна ăнлантарса парать. Вăл колхозниксене вĕрентет. „Ěнене ăшă витере усрăр, кормушка туса парăр", — тесе канаш парать.

# Икĕ сысна.

Петясемпе Михалясен пĕрер сысна пур. Петясен ăратлă сысна: шап-шурă, пуклак сăмсаллă, кĕске ураллă, тăрăхласкер. Михалясен ăратсăр сысна: шĕпшĕвĕр сăмсаллă, вăрăм ураллă, хура, вăрăм шăртлă, çинçе кĕлеткеллĕ.

Петясем колхозра тăраççĕ. Сыснине те вĕсем колхозран илнĕ. Михалясем колхоза кĕмен.

Петясем сыснине лайăх пăхаççĕ. Ăна хĕллехи сивĕсенче ăшă витене хупаççĕ. Апатне вăхăтра парса тăраççĕ. Çĕрулми пĕçерсе, çăнăхпа пăтратса параççĕ. Ыраш пĕçерсе параççĕ. Яшка юлашкисем параççĕ. Петясен сысни выляса кăна çӳрет.

Михалясен сысна валли ăшă вите çук. Сысни хăех улăм айне йăва çавăрнă. Апатне Михалясем йĕркеллĕ парса тăмаççĕ. Хăш кун лайăх çитереççĕ, тепĕр кун нимĕн те памаççĕ. Сысни кунĕ-кунĕпе ыраш улăмĕ çинче чакаланса, пучахсене суйласа çӳрет. Хĕллехи сивĕсенче хутланса тăрать те, сивĕпе тăр-тăр-тăр! чĕтрет.

Петясен сысни февраль уйăхĕнчех 10 çăвăр туса пачĕ. Пурте шултăра, шап-шурă; ăшă витере вĕсем амăшне ĕмсе выртаççĕ. Ĕмсе тăрансан, витере чупса выляса çӳреççĕ. Çанталăк ăшăтсан, Петясем вĕсене уçăлма тула кăларма тытăнчĕç.

Михалясен сысни çăва тухсан тин çăвăрласа пачĕ. Виçĕ çăвăр анчах турĕ. Çăвăрĕсем пĕчĕк çеç.

Хĕле кĕрсен, Петясен те, Михалясен те ват сыснисене пусрĕç. Петясен сыснин таса ашĕ 160 килограмм туртрĕ. Михалясен 50 килограмм анчах туртрĕ.

Çакна курсан, Михаля ашшĕ ăратлă сысна çури туянса ячĕ.

---

Камăн ăратлă сысна пулнă?
Камăн ăратлă мар сысна пулнă?
Сыснисене кам мĕнле пăхнă?
Пуссан, ашĕ камăн ытларах пулнă?

## Туппине пĕл.

*Çĕр çинче пурăнать, çӳлелле пăхмасть, нимĕн ыратмасть-тумасть, йынăшса выртать.*

# Йытă-санитар.

Каç пулса çитнĕ. Çынсем носилкăсем йăтнă, кĕсъене чикмелли фонарьсемпе çутатса, вилнисем хушшинче аманнă салтаксене шыраççĕ. Тăшман пăшалсемпе, пулемётсемпе перет. Вăл пенĕ вăхăтра аманнă, суранланнă çынсене шырама питĕ хăрушă.

Çынсене санитар-йытăсем пулăшаççĕ. Кашни йытă çумне сурансене çыхмалли хатĕрсем майлаштарса çыхнă.



Вилмен çынна йытăсем часах шыраса тупаççĕ. Акă аякра пĕр суранланнă салтак шыв ĕçме ыйтса выртать. Юн нумай юхса пĕтнĕ пирки тăраймасть. Куçне хупса выртать. Йытă пĕр самантра ун патне чупса пычĕ. Хăр-р туса сас пачĕ. Йытă сассине илтсе, суранланнă салтак куçне уçрĕ. Йытă çумĕнче пĕр савăт шыв пур. Суранланнă салтак шыв ĕçрĕ те, пĕчĕккĕн ăна вăй кĕре пуçларĕ.

Суранĕ йывăрах мар пирки ку салтак, йытă çумĕнчи хатĕрсене илсе, хăй суранне хăех çыхса хучĕ.

Йытă малалла чупрĕ. Акă вăл йывăр суранланнă салтака шыраса тупрĕ. Салтак, йытă сассине илтсен, кăшт куçне уçрĕ те каллех хупрĕ. Вăл шыва хăй аллипе илсе ĕçеймест. Çавăнпа та йытă, санитарсем патне чупса кайса, вĕсене суранланнă салтак патне илсе пычĕ. Аманнă салтака санитарсем шыв ĕçтерчĕç, суранĕсене çыхса ячĕç, унтан носилка çине хучĕç те йăтса кайрĕç.

# Чăн тус.

Пĕр çыннăн пысăк йытă пулнă. Çамрăк чухне йытти питĕ çивĕч пулнă. Пĕрмаях кил сыхланă. Каш-кăртан та хăраман. Анчах кайран йытă ватăлса çитнĕ те кил сыхлайми пулнă. Çын пырса кĕрсен те вĕр-мен. Хуçине ватă йытта тăрантарни вырăнсăр пек туйăннă.

Акă ку пĕрре кантрапа чул илет те йыттине шыв хĕррине ертсе каять. Йытти-мĕнĕпех кимĕ çине кĕрсе ларать. Шаларах ишсе кĕрсен, чулне кантăра вĕçне çыхать. Хуçи мĕн шухăш тытнине пĕлнĕ пекех, йытти ăслă куçĕсемпе тилмĕрсе пăхса ларать. Хай çын кантăрине йытă мăйĕнчен çыхать те, урипе тапса, йыттине шыва яра парать. Йытă курăнми анса каять. Анчах йыттине пăрахнă майĕпе унăн кимми йăванса каять те, вăл хăй те шыва ӳке парать, хум çапнипе вăл пута пуçлать.

Вилме патне çитнĕ çĕртенех кăна тахăшĕ сĕтĕрсе тухать. Пăхать — хăй йыттиех иккен. Унăн мăйĕнчи чулĕ салтăнса ӳкнĕ те, вăл тӳрех хăй хуçине пулăш-ма тытăннă: кĕпинчен çыртса, вăл шыв хĕррине ишсе тухнă. Халран кайнипе хăй лăштăрах тăсăлса выртнă.

Акă хайхи çын уласа йĕрсе янă, йыттине ыталаса ачашлама пуçланă. Çакăнтан вара вăл хăйĕн чăн тусне мĕн виличченех ачашласа пăхса пурăннă.

# Кушак.

Мăр-мăр кушак. Унăн çамки хăмăр мар-и?

Кушакăн хăлхисем çивĕч, сухалĕ вăрăм, кĕрĕкĕ пурçăн. Куçĕсем çунаççĕ, чĕрнисем кĕреççĕ те тухаç-çĕ, лапписем мамăк пек çемçе те, хурçă пек хытă тытаççĕ.

Кушак йăпăлти те питĕ чее: авкаланать те карăн-калать, хӳрине вылятать, куçне-пуçне хупкалать,

хĕвелте выртма юрататъ. Каç пулсан, кайăка каять: шăшисем сыхласа çӳрет.

---

Кушак утнă е чупнă чухне мĕншĕн унăн ури сасси нимĕн те илтĕнмест?

Кушакăн шăлĕсем епле, чĕлхи мĕнле?

Кушак мĕнле çиет, ĕçет?

Мĕнле чĕрчунсене тытать?

## Кушакпа шăшисем.

Пĕр кушак шăшисене йăлтах аптăратса çитернĕ: куллен вăл вĕсенчен пĕр ик-виççĕшне тытса çинĕ.



Шăшисем, аптăранă майĕпе, пуçтарăнса пысăк пуху тунă. Унта вĕсем: „Ку усал кушакран мĕнле хăтăлма пулатьши“? — тесе шутла пуçланă. Калаçнă, калаçнă,—анчах ним тума та пĕлмен.

Вара пĕр пĕчĕк шăши çури каланă: „Итлĕр, сире кушакран епле хăтăлмаллине калам. Эпир мĕншĕн пĕтетпĕр? Кушак хăш вăхăтра хамăр пата килнине сисейместпĕр. Унăн майне шăнкăрав çакса ярас пулать. Вара, вăл шăнкăртатса пынине илтсенех, эпир тарма пултарăттăмăр“, — тенĕ.

Çавна хирĕç ватти каланă: ,,Ах, ачам, эсĕ калани лайăхчĕ те, анчах шăнкăравне малтан камăн та пулин кайса кушак майне çакса ярас пулать вĕт. Эсĕ калама пĕлтĕн, тума та пĕл-ха: кайса кушак майне шăнкăрав çакса яр. Вара эпир сана пурте тем пекех тав тăвăпăр“ — тенĕ.

## Урине инкен чăххисем.

Чăхха ялта пурте усраççĕ. Анчах хĕл варринче ялĕпе шырасан та çăмарта тăвакан чăх тупас çук.

Пĕр Урине инке анчах хĕл каçичченех çăмартаран таталмасть. Чăххисем унăн канма та пĕлмеççĕ, çăмарта тăваççĕ. Тĕк тăкнă чухне анчах, пĕр-ик уйăх хушши çăмарта тума пăрахаççĕ.

Урине инкен ĕç лайăх ăнса пыни — вăл пĕлсе, тăрăшса ĕçленинчен килет. Урине инке хута лайăх пĕлет. Каç-каç вăл, ачисене çывратсан, кирлĕ кĕнекесене вулама юратать. Кĕнекесем ăна темĕн те пĕр каласа параççĕ, теме те вĕрентеççĕ. Чăххисене пăхма та вăл кĕнекесем вуласа вĕреннĕ.

Урине инке чăххисене ăшă, çутă вите туса панă. Чăхсене ларма урайĕнчен пĕр метр çӳллĕшĕнче лутра каштасем туса панă. Ăшăрах пултăр тесе, витине тултан улăмпа чĕркенĕ. Чăх пыйтисем ĕрчесе каясран шалтан шурă тăмпа шуратнă.

Урине инке чăххисене чаваланма витине ещĕксемпе вĕтĕ хăйăр, кĕл лартса парать. „Кĕлпе, хăйăрпа, чăхсен пыйтисем тата ытти хурт-кăпшанкăсем те пĕтеççĕ", — тет вăл. Ещĕксем ăшне çĕнĕ улăм сарса, йăвасем туса, тĕттĕмрех кĕтессе лартса парать. Чăххисене ĕçме çулла кашни кунах тăрă шыв, хĕлле — таса юр лартса парать. Урине инкен чăх вити типĕ, аслă, таса. Чăх вăлашкисене вăл кашни кунах çăвать.

Чăх витине вăл кулленех уçăлтарать, чăххисене те уçăлма кăларать, ытла сивĕ кун анчах кăлармасть. „Чăхсем те чĕрчунсем, вĕсене те уçă сывлăш кирлĕ", — тет.

Хĕлле пулсан, Урине инке чăххисене кунне 3 хут тăрантарать. Ирпе пăтратса парать, кăнтăрлапа каçпа тырă сапса парать. Хăш чух Урине инке чăххисене чĕрĕ аш — выльăх пырши-пакартийĕ, ӳпке-пĕвер тураса вĕтетсе парать, чăхсем вара çăмарта аван тăваççĕ.

Çулла пулсан, Урине инкен чăххисем кунĕпех чупса çӳреççĕ, тĕрлĕ апат тупса çиеççĕ. Çавăнпа та вăл çулла чăххисене кунне пĕр хут анчах, каçпа, ларас умĕн, тырă сапса парать.

Ăххисем, хăйсене аван пăхнăшăн, Урине инкене çăмарта туса савăнтараççĕ. Çăмарти унăн хăй валли те, сутлăх та пулать. Çапла Урине инке чăх усраса аван усă курать.

## Чăхă чĕп кăларни.

Урине инкен пĕр чăххи кăлăклама пуçларĕ, çав тери пусма ларасшăн. Урине инке пĕр корзинка ăшне, çемçе утă сарса, халь тин тунă 15 çăмарта хучĕ. Корзинкине тĕттĕмрех вырăна лартрĕ. Çăмартисене вăл çамрăк чăхсем тунине анчах суйласа илчĕ: çавăн пек çăмартасенчен çирĕп, тăсĕмлĕ чăхсем пулаççĕ. Чăххи умне тăрă шыв тата чавалама ещĕкпе кĕл лартса пачĕ. Чăххи шăпах ларать, хутранситрен анчах апат çиме, шыв ĕçме тухса кĕрет. Ăна кансĕрлекен çук. Пĕр Урине инке анчах ун патне пыркаласа каять: шыв улăштарать, апат лартса парать.

Виçĕ эрнерен чĕпписем тухрĕç. Урине инке вĕсене хĕвел çине кăларса ячĕ. Чĕпписене ытла та юратмалла, амăшĕ патĕнче чупса çӳреççĕ, шинклетеççĕ.

Урине инке чĕпсене чăмăрла пĕçерне çăмартана тураса вĕтетсе парать. Виçĕ кунтан вир пăтти çитерме пуçларĕ. Унтан вĕсене кĕрпепе тăрантарма пуçларĕ.

Урине инке малтан чĕпписене час-часах, 2 сехетренех тăрантаратчĕ, унтан сайрарах, кунне 3 хут анчах апат пама пуçларĕ.

## Электричествăпа чĕп кăларни.

Ачасем Макçăм пиччепе калаçма юратаççĕ. Макçăм пичче кайăк-кĕшĕк ферминче ĕçлет. Унта чăх-чĕп, хур-кăвакал усраса ĕрчетеççĕ.

Ачасем пĕрре Макçăм пиччене сăрса илчĕç.

— Пире электричествăпа чĕп кăларни çинчен каласа пар-ха? — теççĕ.

— Юрĕ, — тет Макçăм пичче, — каласа парăп. Анчах эсир хăвăр мана калăр-ха, пĕр чăх айне миçе çăмарта хума пулать?

— Вунпиллĕк, çирĕм! — кăшкăрчĕ Митя.

— Çапла çав. Ман электричество чăххи айне тăруках 150 — 200 çăмарта хума пулать.



Ачасем тĕлĕнсех кайрĕç. Макçăм пичче каллех ыйтать.

— Сирĕн чăхсем хăçан чĕп кăлараççĕ? — тет.

— Çулла.

— Сирĕн çулла, ман çулталăкĕпех кăларать. Ну, кам чăххи лайăхрах, манăн-и, сирĕн-и?

— Санăн, санăн! Эсĕ пире электричество чăххине мĕнле туни çинчен каласа пар, — теççĕ ачасем.

— Итлĕр, эппин. Пирĕн фермăна пралук тăрăх электричество пырать. Электричество, ещĕке кĕрсе, электричество ламписене çутса ярать. Çав ещĕк ĕнтĕ ман электричество чăххи пулать. Ун урисем те, çунаттисем те çук. Лампăсем ещĕкри сывлăша ăшăтаççĕ, вара унта хунă çăмартасем те ăшăнаççĕ.

— Митя чăтаймарĕ:

— Ещĕкри çăмартасем ăшăпа пиçсе кайсан? — тесе ыйтать.

Макçăм пичче кулса кăна тăрать.

— Эсир те ăслă та, ку ещĕке тăваканни те ухмах пулман. Ещĕке питĕ пĕлсе тунă. Ещĕк ытлашши ăшăнса кайма пуçласанах, пĕр лампи сӳнсе ларать, ещĕк сивĕнме тытăнсан, каллех хăй тĕллĕнех тивсе çунма тытăнать.

— Апла пулсан, ещĕк чĕпсене этемсĕрех кăларма пултарать-и?

— Çук, кунта мана валли те ĕç нумай. Эпĕ кашни кунах çăмартасене пĕр аяккинчен тепĕр аяккине çавăра-çавăра хуратăп, вара çăмарта пĕр пек

ăшăнса тăрать. Чĕпсем тухсанах, эпĕ вĕсене типмелли вырăна илсе каятăп. Унта чĕпсене электричество ăшăтать, типĕтет. Типсе çитсен, эпĕ чĕпсене „матка“ ятлă вырăна куçаратăп. Матка текенни виçĕ пӳлĕмлĕ. Пĕр пӳлĕмĕ — çывăрмалли, унта электричествăпа ăшăтакан кăмака пур. Тепĕр пӳлĕмĕ — чĕпĕсене уçăлса çӳремелли, унăн тăррине кĕленчерен тунă. Виççĕмĕш пӳлĕмĕ пĕчĕк килкарти евĕрлĕ, ун тăррине пралукран карса тунă. Ку виççĕмĕш пӳлĕмре кăштах пысăкланнă чĕпсем çӳреççĕ. Маткăран ирĕк çĕре чĕпсене 6—8 эрнерен анчах кăларатăп.

Çак чĕп кăлармалли ещĕке инкубатор теççĕ.

## Тĕлĕнмелле чăх чĕппи.

Чăх чĕпĕ кăларнă. Унăн чĕпписем чупса çӳреме, пĕчĕк урисемпе чакаланса хуртсем шырама тытăнчĕç. Анчах пĕр чĕппи темле, ыттисем пек мар, пулнă. Вăл çăмха пек çаврака, çărах тĕклĕ, сап-сарă тĕслĕ, кĕскеураллă, сарлака лапчăк сăмсаллă.



Чăх ку чĕпĕрен тĕлĕннĕ, çапах та хăй кăларнă пирки ăна та юратнă. Ыттисемпе танах чăх ăна юрататъ. Хурчăкана курсан, чĕпĕсене пурне те çунаттисем айне туса пытарса ларать.

Кăшт пурăнсан, чăх хăйĕн чĕпписене çĕртен хуртсем шыраса тупма вĕренте пуçларĕ. Пĕрре вăл хăйĕн чĕппйсемпе пĕве хĕрринче çӳрет. Унăн кĕске ураллă чĕппи, шыва курсанах, тӳрех шыва кĕрсе кайрĕ. Чăх кăт-кăтик! тет, çунаттисене сарса, пĕве хĕррипе чупкаласа çӳрет, кĕç шыва сикес пек. Хăйĕн чĕппи шывра путса вилесрен хăрать.

Чĕпписем те çинçе сассисемпе çуйăхма тытăнчĕç.

Анчах кĕске уралла чĕпĕ путса вилме шутламасть те. Вăл, шыв çинче мамăк ишнĕ пек, савăнăçлăн каллĕ-маллĕ ишсе çӳрет.

Чăх çуйăхнине илтсе, пӳртрен ватă карчăк Тарье чупса тухрĕ. Мĕн пулнине курчĕ те хăйне хăй вăрçма тытăнчĕ: „Ара, асăрхамасăр, чăх айне кăвакал çăмарти хунă-çке эпĕ“, — тет.

## Выçă кашкăр.

Сивĕ çил шавлать, кашлать. Вăрман уçланкипе пĕр выçă кашкăр шăлĕсене шаклаттарса пырать. Ун хыççăн çемçе юр çине ура йĕррисем умлă-хыçлă выртса



юлаççĕ. Акă вăл çӳллĕрех вырăна хăпарать. Хăравçă, выçă куçĕсемпе унталла-кунталла пăхкалать, хыçран такам темскерпе çапнă пек, хӳрине пăчăртать. Куçĕсем, вут пек çунса, йăлтăртатса тăраççĕ.

Кашкăр каçхи вăхăта кĕтет. Вăл çынсем çывăрса каясса, ял лăпланасса кĕтет. Хăлхисене чăнк тăратса итлет.

Каç пулчĕ. Кашкăрăн кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Кантăксенче хăйă çуттисем сӳнчĕç. Пур çĕрте те шăп.

Кашкăр, вăштах сиксе, хăй вырăнĕнчен тапранчĕ те ялалла çил-тăман пек вĕçтерчĕ.

Вăл карта патне çитсенех, хăруша хăна яла килнине сиссе, килкартисенчен йытăсем вĕрсе, уласа та ячĕç. Ку сасăсем выçă кашкăра шиклентереççĕ, çилентереççĕ.

Кашкăр карта урлă сикрĕ те, пĕр йытта мăйĕнчен пăвса илсе, йыттипе пĕрлех карта урлă каялла каçса тарчĕ. Пур килкартисенче те йытăсем улаççĕ, вĕреççĕ. Такам пўртрен тухса кашкăра пăшалпа печĕ. Анчах тĕттĕм пирки персе тивретеймерĕ. Кашкăр тарса хăтăлчĕ. Йытта çисе ярсан, кашкăр вăрманти чăтлăха, çын пыман çĕре, йывăç кутне нырса выртрĕ.

Тепĕр çĕрне кашкăр каллех выçă. Вăл, хăлхисене чăнк тăратса итлесе, сивĕпе тăр-тăр чĕтресе выртать. Авă çулпа пĕр çуна пырать. Сивĕпе çуна тупанĕ айĕнчи юр чăкăртатса пырать. Пĕкĕ çумĕнчи ункă чăнкăртатать. Кĕсре çивĕччĕн, уçă юртать. Кашкăр итлет, сăмсипе унталла-кунталла шăршлать. Икĕ ура тăрне тăрса, йĕри-тавра пăхкалать. Çуна çинче пуçĕ çинчен тăлăппа пĕркеннĕ хĕрарăм тĕлĕрсе ларса пырать. Лаша çула хăех пĕлет тесе, тилхепине те тытмасть.

Выçă кашкăр вырăнĕнчен сирпĕнсе тухрĕ те çул хĕррине вĕтлĕх айне кĕрсе ларчĕ. Çуна еннелле йăпшăнса пăхать.

Кĕсре, кашкăр тĕлне çите пуçласанах, хăрт-харт! туса илчĕ, кашкăр пуррине сисрĕ курăнать. Унтан кĕсре хытă кĕçенсе ячĕ те тата хытăрах чупма тытăнчĕ. Кĕсре кĕçеннĕ сасăпа, тĕлĕрсе ларса пыракан арăм та куçне уçрĕ. Унталла-кунталла пăхкалать: çултан инçе те мар, кăвак кашкăр лара парать, куçĕсем вут пек çунаççĕ.

Тилхепе вĕçĕпе кĕсрене шарт! тутарчĕ те, кĕсре сиккипе чупма пуçларĕ, кашкăр тĕлĕнчен çаврăçил пек иртсе кайрĕ. Кашкăр выçă куçĕсемпе пăхкаласа юлчĕ. Юлашки вăйне пухса, кашкăр кĕсре хыççăн

чупма тытăнчĕ. Кĕсре тĕлне çитсе, ун çине сиксе, мăйран пăвса илме тăчĕ. Анчах хирĕç инçе те мар виçĕ тулли лав килеççĕ. Çынсем кашкăра курчĕç те кăшкăрма пуçларĕç. Пĕри, пăшалне кашкăр çине тĕллерĕ те кĕрс! персе ячĕ. Кашкăр тӳпех кайса ӳкрĕ. Çынсем ăна çуна çине хурса кайрĕç.

## Чĕрĕп пурăнăçĕ.

Сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсем иртеççĕ. Сарăхса кайнă йывăç çулçисем йăлтах тăкăнса пĕтнĕ. Вĕсем вăрманти çулсене, сукмаксене палăрми витсе лартнă.



Каç пуласпа икĕ чĕрĕп вăрмантан тухрĕç те калча пуссипе пысăк йывăç пахчи еннелле пыраççĕ. Вăрманпа пахча хушши ытла инçех те мар, анчах чĕрĕпсемшĕн вăл—вăрăм çул. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри мĕшĕлтетсе пыраççĕ. Йĕри-таврари сас-чĕвве чарăна-чарăна итлеççĕ. Сывлăш тăрăх йытă-качка е тилĕ шăршине пĕлесшĕн.

Тĕттĕм пулса ларчĕ. Кусем пыракан çул çинче сасартăк урапа шакăртаттарни илтĕнчĕ. Чĕрĕпсем хăранипе иккĕш те йăпăр-япăр çăмха пек чăмăртанса выртрĕç. Урапа çитсе иртсе кайрĕ. Йĕри-тавра каллех пĕр сас-чĕвĕ те çук. Шăп... Хăравçă кайăксем çаплах пĕр сикмесĕр пашкаса выртаççĕ.

Чылай вăхăт иртсен, пĕри пуçне кăларчĕ, йĕри-тавра пăхкаларĕ, шăршларĕ те сасă пачĕ. Вара тепри те тăсăлчĕ те, тӳрех малалла утрĕç. Пахчана çитрĕç те тĕмсем хушшине кĕрсе çухалчĕç.

Кунта вĕсем чăтлăх тĕмсем хушшинчи çемçе çулçăсем çине хăйсем валли йăва турĕç. Чĕрĕпсем валли кунтан лайăх вырăн шухăшласа та кăларас çук!

Тĕмсем пĕр-пĕринпе яванса ӳссе ларнă та, шала этем те, йытă тавраш ĕ те кĕрес çук.

Çанталăк кунран кунах сивĕтет, хăш чух юр та çукалать. Пирĕн чĕрĕпсем те хĕлле валли ăшă йăва çавăрма тытăнчĕç. Пĕр çара йывăç тĕмĕ айне пĕрер шăтăк аран-аран чавкаларĕç. Хĕррисене çапă купаларĕç те ăшне улăм, мăк тата типĕ çулçăсем йăтса тултарчĕç.

Вĕсем ĕçлени питĕ кулăшла. Чĕрĕп çурăмĕ çине выртать те тек типĕ çулçăсем çинче йăваланса çӳрет. Йĕпписем çине çулçăсем тăрăнса тулаççĕ те, хăй палăрмасть вара. Çулçăсем нумай пухăнсан, вĕсене йăви патне илсе пырса, йĕпписенчен кăларса пăрахать.

Чĕрĕпсем хăйсем валли йăва тăвасшăн нумай асапланчĕç. Тăрăшмасан — ĕç тухмасть. Çамрăк, айван чĕрĕпсем, хăйсен йăвисене лайăхрах тӳрлетсе хăварманнипе, хĕллехи шартлама сивĕсенче нумайĕшĕ шăнса вилеççĕ.

Малтанхи сивĕсем çитсенех, пирĕн чĕрĕпсем шăтăкĕсене кĕрсе вырнаçрĕç. Çулçăсем ăшне чаваланса выртрĕç те хĕллехи вăрăм ыйăха кайрĕç.

## Пăланпа пăрушĕ.

Вăрманта Емел виçĕ кун хушши ахалех утса çӳренĕ. Вăйĕ пĕтсе çитнине сиснĕ старик, çапах та вăл пушă алăпах киле таврăнасшăн пулман. Кайăкçă та, унăн Лиска ятлă йытти те вăйран кайнă. Тăваттăмĕш кунне тин вĕсем кĕтмен çĕртенех пăланпа пăрушĕн йĕррисене тĕл пулнă.

— Пăрушĕпе амăшĕ, — тенĕ Емел, курăк çинче пысăк чĕрнепе пĕчĕк чĕрне йĕррисене курсан.

— Лиска, шыра-ха, тусăм! — тенĕ вăл.

Кунĕ питĕ шăрăх пулнă. Хĕвел хытă пĕçертнĕ. Йытă, чĕлхине кăларса, йывăç тункатисене, курăк тĕмĕсене шăршланă. Емелĕн уринчен ури аран иртнĕ. Акă шатăртатни, чăшăлтатни илтĕнсе кайнă. Часах

пăлан та курăннă. Ку тĕлĕнмелле хитре пысăк пăлан ами пулнă. Вăл хăраса Емел çине пăхса тăнă. Пăлан тĕлĕнчех шăна-пăвансем сĕрлесе çавăраннă, пăлана çилентернĕ.

— Эсĕ мана улталайман-ха,— тенĕ Емел, хăй тăракан вырăнĕнчен ерипен шуса тухса.

Пăлан, кайăкçа тахçанах сиснĕ пулсан та, вăл мĕн хăтланни çине тапранмасăр пăхса тăнă.



— Ку пăлан ами мана пăрушĕнчен пăрса ярасшăн пулĕ-ха,— тенĕ Емел. Хăй упаленсе çывăхран çывăха пынă.

Старик, пăлана перес тесе, пăшалне тĕллеме пуçласанах, пăлан сыхланса пăртак чупса тарнă та каллех чарăнса тăнă. Емел татах малалла шунă. Пăлан татах ерипен чупса кайса тăнă. Емел пеме хатĕрленсенех, вăл тарса пытаннă.

— Пăрăвăнтан тараймăн-ха,— тенĕ Емел.

Хитре пăлан вунă хутчен, хăй пуçне шеллемесĕр, Емеле хăйĕн пĕчĕк пăрушĕ патĕнчен пăрса яма хăтланнă. Ватă Емел пăлан çавăн пек хăюллинчен тĕлĕннĕ те, çиленнĕ те.

— Мĕнле пулсан та, хăй пăрушне пăрахса каяс çук-ха вăл,— тенĕ Емел.

Кĕç старик, çавăрăнса пăхса, кукленсе ларнă. Унтан пĕр вунă чалăшра кăна, кăпчанкă тĕмми çумĕнче, сап-сарă тĕслĕ пăлан пăрушĕ тăнă. Ку темиçе эрнери анчах, питĕ хитре, сарă, мамăк пек çăмлă, çинçе ураллăскер пулнă. Хăйĕн хитре пуçне вăл каялла каçăртнă, çӳллĕрех тăракан йывăç турачĕсене сыртнă чух анчах мăйне малалла тăснă. Емел пăшалне çĕкленĕ те çамрăк пăлан пăрушне пуçĕнченех тĕлленĕ.

Пăртак тăнă пулсанах, пăлан пăрушĕ, курăк çине çăмха пек йăваланса ӳксе, вилес умĕн хурлăхлă кăшкăрнă пулĕччĕ, анчах çак вăхăтра старике амăшĕ хăй пурăнăçне шеллемесĕр пăрушне паттăрăн хӳтĕлени аса килнĕ. Унăн кăкăрĕнче темскер татăлса аннă пек туйăннă, пăшалĕ усăнса аннă. Пăлан пăрушĕ малтанхи пекех йывăç айĕнче çулçăсем çисе çӳренĕ. Емел хыпаланса тăнă та ши-ик! шăхăрса янă. Пĕчĕк пăру вăрманалла çиçĕм пекех хăвăрт кĕрсе кайса çухалнă.

— Ав мĕнле чупать вăл. Лиска, тарса хăтăлчĕçке пирĕн пăлан пăрушĕ. Ну, унăн, чупкăнăн, ӳсмелле-ха халĕ, — тесе кулса янă старик.

Тарнă пăлан пăрушне аса илсе, Емел нумайччен пĕр вырăнта шухăшласа, кулкаласа тăнă.

## Чĕнмен хăнасем.

Çулла мулкачсем пахчана кĕмеççĕ. Хĕлле вара час-часах пырса каяççĕ.

Хĕлле вĕсене апат тупса çиме хĕн. Акă мулкачсем апат шыраса сиксе çӳреççĕ. Пахчана пырса кĕреççĕ. Пахчара çамрăк улмуççисем ӳсеççĕ. Мулкачсем улмуççисем патне сиксе пыраççĕ те хăшĕн хуппине тавраллах кăшласа çавăрăнаççĕ.

Çуркунне пулсан, улмуççи тымарĕсем ĕçлеме тапратаççĕ. Çĕртен сĕткен ĕмсе, ăна вулли тăрăх çӳлелле, çулçăсем патне улăхтарма пуçлаççĕ.

Турачĕсем те, сывлăшран апат илсе, ăна хуппи тăрăх аялалла тымарсем патне ăсатма тапратаççĕ. Анчах çав апат мулкачсем кăшланă тĕле çитсен чарăнса ларать. Малалла кайма унăн çулĕ çук. Тымарсем çулçăсенчен апат кĕтеççĕ, анчах апачĕ анмасть. Вара тымарсем типсе хăрса каяççĕ, йывăçĕ те хăрса каять.



Мулкачсенчен мĕнле сыхланмалла-ха?

Колхозниксем улмуççи вуллисене улăмпа чĕркесе çыхса пăхрĕç. Анчах мулкачсем улăма часах кăшласа татаççĕ тата улăм ăшне шăшисем йăва çавăрма пуçларĕç. Улмуççи хуппине мулкачсем те шăшисем те кăшлаççĕ.

Унтан улмуççисене чăрăш турачĕсемпе çыхса хучĕç.

Ку вара пулăшрĕ. Мулкачсем чăрăш йĕппясем тăрăнасран хăраççĕ, улмуççисем патне пымаççĕ.

Тепĕр колхозра пахча тавра çӳллĕ хӳме тытрĕç. Мулкачсем пахча тавра сиккелесе çӳреççĕ те пахчана кĕреймеççĕ, йывăççене тивеймеççĕ.

## Уйăп.

Ваçукпа Петя хĕлле пĕр ирхине пахчана тухнă. Пахчара вĕсен пилеш йывăççи пур. Пилешсене йăлтах татса пĕтермен, кăшт кайăксем валли хăварнă.

Ачасем пилеш йывăççи айне пычĕç те пилеш йывăççи айĕнче, шурă юр çинче, пилешсем выртнине курчĕç. Пилешĕн çемçине тивмен, варринчи вăррисене такам çисе янă.

— Мĕнле кайăк-ши ку, варрине анчах çиекенскер? — тесе ыйтать Ваçук.

— Эпĕ пĕлетĕп те каламастăп, ху пĕл; халь шкула кайма вăхăт çитнĕ, — тет Петя.

Хайхисем шкула чупса кайрĕç.

Тепĕр ирхине Ваçук пилеш çинчен аса илчĕ. „Ку пилешсене мĕн çиет-ши?“ — тесе шухăшласа пырать. Йывăç çине пăхрĕ те тĕлĕнсе хытсах кайрĕ. Пилеш йывăçне темле халиччен курман кайăксем сăрса илнĕ. Пĕсехисем хĕп-хĕрлĕ, çуначĕсем хура, хўрисемпе пуçĕсем кăвакрах тĕслĕ, йăлтăртатса тăраççĕ. Кайăксем хулăм сăмсисемпе пилешсене татса илеççĕ те, вăррине суйласа илсе, çемçине юр çине пăрахаççĕ.

Ваçук киле чупса кайма тесе çавăрăнчĕ те, Петяна перĕнсе, кăштах çапăнса ўкетчĕ. Петя хыçалтах кулса пăхса тăнă иккен.

— Куртăн-и, Ваçук? — тет Петя. — Хĕлле те кайăксем килеççĕ. Кусем уйăп ятлă кайăксем. Вĕсем çулла сивĕ енчи вăрмансенче пурăнаççĕ, хĕлле пирĕн пата, яла, çуртсем çывăхне килеççĕ.

## Арăслан.

Пирĕнтен питĕ инçетре, ăшă енче, çеçенхирте пĕр ял ларать. Каçхине кĕтўç кĕтĕве пысăк картана хупрĕ. Картине йĕплĕ йывăç турачĕсенчен тунă. Карти 3 метр çўллĕш, пĕр метр ытларах хулăмăшĕ.

Çĕрле пулса çитрĕ. Ял лăпланчĕ, пурте çывăраççĕ.

Сасартăк çĕр варринче темскер хăрушшăн, хаяррăн кăшкăрса ячĕ. Сынсем хăраса вăранса кайрĕç. Анчах пўрчĕсенчен тухма хăраççĕ. Вĕсем арăслан сассине палласа илнĕ.

Кĕтӳ картара пăлханма тытăнчĕ. Сурăхсем йĕплĕ карта çумне хĕсĕнеççĕ. Качакасем хăраса макăраççĕ. Ĕнесем пĕр-пĕрин çумне хĕсĕнсе тăчĕç. Йытăсем çуртсем айне пытанчĕç.



Арăслан карта патне çывăхарсах пырать. Куçĕсем кăвар пек йăлкăшаççĕ. Карта патне çитсен, арăслан пĕрре сикрĕ те карта урлă каçрĕ. Малти урипе пĕр çамрăк вăкăра пĕрех çапса ӳкерчĕ те вĕлерсе пăрахрĕ. Унтан ăна шăлĕпе çыртса йăтрĕ те вăкăрĕ-мĕнĕпех карта урлă каялла сиксе каçса кайрĕ. Вырьăхсем нумайччен хăраса пăлханчĕç.

Ирхине кĕтӳç кĕтĕве, каллех картаран кăларса, курăк çиме илсе тухрĕ. Анчах кĕтӳрен пĕр вăкăр катăлнă.

## Арăсланпа тилĕ.

Пĕр арăслан ватăлса çитнĕ те хăйне валли апат тупайми пулнă. Тĕрлĕ тискер кайăксене хăвалаcа тытма ун вăйĕ çитейми пулнă. Хайхи арăслан, юри чирлĕ пек пулса, пĕр пысăк шăтăка кĕрсе выртнă.

Тискер кайăксем, тискер кайăксен патшине — арăслана виличчен курса юлас тесе, ун патне пынă. Вилес пек чирлĕ выртакан арăслантан вĕсем хăраман. Арăслан патне шăтăках кĕнĕ. Арăслан вĕсене кĕнĕ пеккине тытса çинĕ.

Пĕрре арăслан патне тилĕ пынă. Тилĕ — чее тискер кайăк. Вăл шăтăка кĕмен. Шăтăк умне пынă та: „Мĕнле пурăнкалатăн-ха, арăслан?“ — тенĕ. Арăслан тилле курнă та: „Япăх пурăнатăп. Ма шаларах кĕрсе курмастăн ара? Малалла ирт!“ — тенĕ.

Тилĕ арăслан шухăшне сиссе илнĕ те:

— „Сан пата кĕрекенсем нумай пулнă курăнать те, каялла тухаканни пĕрре те пулман, çавăнпа кĕместĕп ĕнтĕ“, — тенĕ.

---

Арăслан тилле мĕнле улталама шутланă?
Хăшĕ чеерех пулнă: арăслан-и, тилĕ-и?

## Тилĕпе çури.

Тилĕ яла пырса чăхсене вăрттăн тытма пуçланă. Чăхсем ларнă çĕре çĕрле пырать те, кашни каç пĕр-пĕр чăхха пăвса, хăйĕн йăвине илсе каять. Çапла тилĕ ялти чăхсене тытса пĕтерме тытăнчĕ.



Йăвине вăл вăрман çумĕнчи пĕр пĕчĕк вара тунă. Унта ун тăватă çăвăр пулнă. Çав чăхсене вăл хăйĕн çурисем валли иле-иле пынă. Çурисене вăл пит юратнă.

Чи лайăх апата вĕсене панă. Хăй мĕн килнĕ унпа тăранса пурăннă.

Йăвине çынсем тата тискер кайăксем курасран тилĕ пӥтĕ хăранă. Вăл нихăçан та йăви патнелле тӳрех чупман. Йăвине кĕриччен малтан, нумай çавăрăнса, йĕрне çухатса çӳренĕ.

Чăхсене тытса пĕтерме пуçласан, кайăкçăсем тилĕ йăвине шыра пуçланă. Чылай шырасан, вĕсем çак тилĕ йăвине тупнă. Вӥçĕ çăвăрне вĕсем вĕлернĕ, пĕрине чĕррĕн тытнă. Чĕррĕн тытнине пĕр кайăкçă хăй килкартине сăнчăрпа кăкарса хунă. Кайăкçă ăна темле апат та парса пăхнă, анчах тилĕ çури питĕ хурланса ларнă, апатне çимен, ерипен йынăшса ларнă.

Каç пулсан, кайăкçă кил хушшинче темле сасă пуррине илтнĕ, тата вăл карта урлă темскерле йытă пекскер каçса кĕнине курнă. Çав вăхăтрах тилĕ çури савăнăçлăн йынăшса янă. Кайăкçă кăшт патнерех пынă та тилĕ çури çумĕнче амăшĕ выртнине курах кайнă. Çури амăшне савăнăçлăн ĕмсе выртнă, амăшĕ çурине кăкарнă сăнчăрне кăшласа татма пикеннĕ.

Ирхине кайăкçă тилĕ çури патне пырса пăхнă. Тилĕ çури пушшех хурланчăклăрах ларнă. Ун умĕнче пăвса пăрахнă вĕçен кайăксем выртнă. Кусене ăна амăшĕ илсе килсе панă.

## Этем выльăхсене алла вĕрентни.

Выльăх-чĕрлĕхсем яланах килте, çын аллинче пурăнман. Тахçан авал вĕсем пурте тискер кайăк пулнă. Çын вĕсене майĕ-майĕпе алла вĕрентнĕ.

Сирĕнтен кам та пулин кайăк-кăвакала курнă пулĕ. Хăш чухне килти кăвакалсем хушшинче хăйĕн тĕсĕ-пуçĕпе кайăк-кăвакал майлисемех тĕл пулаççĕ. Вăл килти кăвакал çав кайăк-кăвакалпа пĕр ăруранах тухнине пĕлтерет. Пирĕн выльăх-чĕрлĕхсен шăмшаккисене тата вĕсен авалтан юлнă йăлисене пăхсан, вĕсем тискер кайăксен ăрăвĕнчен тухни курăнса тăрать.

Ĕнен майракисене сăнаса пăхăр-ха. Ĕнене авал майракасем питĕ кирлĕ пулнă. Вĕсемпе вăл хăйне хăй ытти тискер кайăксенчен сыхланă. Тискер кайăксемшĕн майрака питĕ хăрушă япала пулнă. Халĕ çав майракасем ĕнене мĕн тума та пулин кирлĕ-ши? Паллах, кирлĕ мар. Хăш çĕрте ĕнесем çулталăкĕпех витере тăраççĕ. Çак майракасем ĕнесем авал тискер кайăксем еверлĕ пурăннине анчах пĕлтереççĕ.

Тата килкартинчи йытă мĕнле майланса выртнине сăнаса пăхăр. Эсир курнă пулĕ, — йытă выртас умĕн пĕр вырăнтах ик-виçĕ хут çаврăнса илет. Çав вăл йыттăн авалхи, хăй тискер пулнă чухнехи йăли. Çавăн пек вĕсем выртас умĕн ĕлĕк йĕри-таврашĕнчи курăка таптаса, е типĕ çулçăсене ватса, е айĕнчи урăх мĕн те пулин япаласене майласа, хăйсем валли вырăн хатĕрленĕ. Халĕ йытă, хăма сарнă хӳтлĕхре пурăнсан та, авалтан юлнă йăлине пăрахмасть, выртас умĕн çаврăнкаласа илет. Çав йăла йытă чăнахах та тискер йытăсен ăрăвĕнчен тухнине кăтартать.

Тахăçан авал çын хăй те вăрмансенче тискер кайăксем еверлĕ пурăннă. Вăл ун чухне вут-кăвар кăларма та, хăй валли пӳрт тума та пĕлмен.

Малтанхи çынсен ушкăнĕсем тискер кайăк кĕтĕвĕсем пек çӳренĕ. Çын хăй хырăмне кайăка çӳресе тăрантарнă. Мĕн тытнă, çавна çинĕ. Анчах, çара аллипе е чулпа перкелесе, е патакпа çапкаласа, вăл нумай кайăк тытнă-ши? Тытсан та, вак-тĕвексене анчах тыткаланă. Нумай аш тухакан пысăк тискер кайăксене тытма питĕ йывăр пулнă. Çын çав вăхăтра, питĕ хытă чупма пултарнă пулсан та, тата хытăрах чупакан тискер кайăк кĕтĕвĕсене чупса çитме пултарайман. Этем апат юлашкисене хăй хӳтлĕхĕ таврашне пăрахкаланă, йытă ăна пырса çинĕ. Ăна уншăн никам та нимĕн усал туманнине курса, вăл ерипен çынна явăçнă. Унтан хăюлланнăçемĕн хăюлланса пынă, çынтан хăрами те пулнă. Çын кайăка кайсан, йытă та унпа çыпăçса пынă. Çын тискер кайăк хыççăн чупсан, йытти унтан малтан чупса хăваласа пынă.

Çакăнтан вара çыннăн ĕçĕ ăнарах пыра пуçланă. Йытти тискер кайăксене хăваласа йăлтах ывăнтарнă та, ăна пытанма памасăр хуçине кĕтсе илнĕ. Çын вара тискер кайăка çитсе тытнă, кайăкне çинĕ чух йыттине те пайсăр хăварман. Малтанхи пĕчĕкçĕ килĕшӳ пыра-киле ӳссе пынă. Вĕсем, çапла майласа, шултăра тискер кайăксене те, лашасене, ĕнесене, пăлансене тата ытти пысăк тискер кайăксене те тыткала пуçланă. Вĕсен тихисене, пăрушĕсене вĕлермесĕр çын хăй хӳтлĕхĕ патне илсе кайса алла вĕрентнĕ. Çавăнтан выльăх ĕрчетесси пуçланса кайнă.

## Хĕвел хăнара.

Ненец ятлă халăх аякри çурçĕрте, сивĕ енче пурăнать. Хĕлле вĕсем пурăннă çĕрте хĕвел пĕр виçĕ уйăх хушши пĕрре те тухмасть. Хĕвел тухас вăхăт çитсен, вара ненецсем пурте ачи-пăчипех хăйсен юртан тунă пӳрчĕсем умне тухса тăраççĕ. Хĕвел хă-



çан курăнассине темскер пек кĕтеççĕ. Кашниех хĕвеле пуринчен малтан курасшăн.

Акă тĕттĕм çанталăка темскерле çутă йĕр çурса çутатса ярать. Кĕçех хĕвел те курăнать. Хĕвел курăнсанах, вара ненецсем хĕпĕртесе кăшкăрма, сикме,

ташлама тапратаççĕ. Пурте савăнса: „Хĕвел, хĕвел!“ — тесе кăшкăраççĕ.

Хĕвел малтанхи кунсенчех нумай çутатса тăмасть. Кăшт тухса курăнать те каллех анса ларать. Сивĕ енче пурăнакансем вара ăна тăраничченех пăхса юлма тăрăшаççĕ. Хĕвеле малтанхи кун тухса курман çын юлмасть. Сивĕ енче хĕвеле ытти çĕрти пек те мар хытă хисеплеççĕ. Унта хĕвел нумай вăхăт кĕтнĕ хаклă хăнапа пĕрех.

## Çуркунне килет.

Хĕвел хĕртет, пĕçертет,
хулăм юра çӳхетет.
Кăнтăрларан çил вĕрет,
хаяр сивве çемçетет.

Сивĕ, хулăм шурă юр
сар хĕвелтен пытанать:
унта-кунта çырма пур,
унта тарма тытăнать.

Çуна тупань йĕррипе
шăнкăртатса шыв юхать:
хуллен-хуллен, майĕпе
мăн пĕвене пухăнать.

Чăхă аслăк тăрринче
çăмарта тăвать, кăтиклет.
Çӳлте тăри юр юрлать,
хăй сассипе савăнать.

Пионерсем, çамрăксем
йăва туса çакаççĕ.
Хĕпĕртеççĕ шăнкăрчсем,
юр юрласа параççĕ.

## Курак.

„Кураксем килес вăхăт çитрĕ“, — тет Ехрем мучи. Куракран унтан пит тĕлĕнмелле. Çуркунне пуласса таçтан пĕлет, пуринчен малтан вĕçсе килет. Акă чăнах та кураксем вĕçсе çӳрени курăнчĕ. Килсенех, хăш ушкăнĕ сăрт çине ларчĕ, теприсем, кивĕ йăвисене шыраса, урăх еннелле вĕçсе кайрĕç. Хăйсем темскер çинчен калаçнă пек краклатаççĕ. Кивĕ йăвисем хăшĕ-пĕри чиперех лараççĕ, хăшĕ-пĕри юхăнса ишĕлсе аннă, туратсем çинче кăшт çеç тытăнса тăраççĕ. Çамрăк куракçен кивĕ йăва тавраш çук.

Вĕсем пĕр турат ҫинчен тепĕр турат ҫине вĕҫсе ҫӳреҫҫĕ, йăва ҫавăрма майлăрах вырăн шыраҫҫĕ. Курак сассипе сывлăш янраса кăна тăрать.

Курак сассине ҫичĕ ҫулхи Мĕтри хытă тăнлать. Пĕр йăвара вĕсем какăлтатнине куҫне сиктермесĕр пăхса тăрать.



— Атте, атте, кураксем пĕр йăвара темскер пулнă пек какăлтатаҫҫĕ, — тет.

— Вĕсем, ачам, ăмăртса йăва йышăнасшăн.

— Вĕсем ăҫтан вĕҫсе килнĕ вара, атте?

— Ăшă енчен, ывăлăм, кăнтăрларан. Хĕлле кунта хăйсене валли апат ҫук пирки, кĕркунне вĕсем ăшă енне вĕҫсе каяҫҫĕ. Пăх-ха, епле вĕсем йăвисем патĕнче тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ.

Кураксем чăнах та ҫĕмĕрĕлнĕ йăвисене юсама е ҫĕнĕрен йăва ҫавăрма йывăҫ тăрне ҫатрака, тĕк, ҫăм йăтаҫҫĕ.

Акă вĕсен йăвисем хатĕр ĕнтĕ. Курак ами шупкасимĕсрех, пăч-пăч хура ула тĕслĕ 4 — 5 ҫăмарта тăвать те чĕпĕ кăларма йăвине кĕрсе ларать.

# Кӗтнӗ ҫуркунне ҫитрӗ.

Кӑвак-пӗлӗт тап-таса, тӑп-тӑрӑ. Ҫуркуннехи шыв шӑнкӑртатса, шавласа юхать. Тӑвайккисенче, хӗвел питӗнче кураӑк симӗсленме тытӑнчӗ.

Ав вӑрманта та юр ирӗлсе пӗтме пуҫларӗ. Юр ирӗлсе пӗтнӗ вырӑнта кӑвак чечексем ӳссе ларчӗҫ. Вӑрманта кашни кунах ҫӗнӗ улшӑну. Аякран кӗтнӗ хӑнасем—вӗҫен кайӑксем—юрла-юрла килеҫҫӗ. Сассисем вӗсен уҫӑ, хаваслӑ. Юрла-юрлах йӑва ҫавӑрма тытӑнаҫҫӗ.

Хӗлле начар апатпа хӑрса кайнӑ мулкач халь вӑрманта, уҫланкӑра, хӗвел ӑшшинче чӑсӑлкаласа, ачашланса выртать. Кӗске хӳре вӑл хӗллехи хаяр сивӗсене, выҫӑ кунсене манса кайнӑ.

Хура курак хирте, юр ирӗлнӗ ҫӗрте, суха касси тӑрӑх мӑннӑн утса ҫӳрет. Хӑй валли апат шырать.

Пысӑк ушкӑнпа шавласа, юрласа, пирӗн туссем—шӑнкӑрчсем—вӗҫсе килчӗҫ. Хире сӑрса илчӗҫ. Хуртсене, пӗчӗк нӑрӑсене шыраса ҫӳреҫҫӗ. Чӑрӑш тӑррисем ҫинче вакша ҫивӗччӗн утса сиккелесе ҫӳрет, пӗр йывӑҫ ҫинчен тепри ҫине сикет. Унӑн апачӗ пӗтнӗ.

Акӑ упа та, хӗллехи ыйхинчен вӑранса, хӑйӗн пысӑк шӑтӑкӗнчен йӑраланса тухрӗ.

Уҫланкӑна утса пычӗ. Хӗвел ҫуттине хӑнӑхман пирки куҫне хӗссе пӑхать.

Улакайӑксем, платниксем пек, йывӑҫсене шак-шак! шаккаса, вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Шак! шаккаҫҫӗ те, ҫурӑксенчен пӗчӗк хуртсем, шӗкӗсем тухаҫҫӗ. Улакайӑксем вӗсене йӑпӑр-япӑр хыпса ҫӑтаҫҫӗ.

Пур чӗрчун та вӑранчӗ. Пур кӗтесре те тӗрлӗ сасӑ илтӗнет.

Ҫуркунне ҫитрӗ. Каллех ҫанталӑк чӗрӗлчӗ!

---

Юр мӗнле вырӑнсенче малтан кайса пӗтет?

Ҫуркунне ҫитсе килнине пире пуринчен малтан мӗнле кайӑк пӗлтерет? Мӗнле кайӑк йывӑҫ хурчӗсене ҫисе тӑрансa пурӑнать?

Ҫуркуннехи ҫанталӑка сӑнаса ҫырӑр.

## Çуркунне çитрĕ.

Акă çитрĕ çуркунне,
савăнăçлă çуркунне.
Хăйĕн чаплă илемпе
çутăлтарчĕ тĕнчене.

Хĕвел пăхса йăл кулать,
пур чĕрчуна ăшăтать.
Хыпаланса юр каять,
шăнкăртатса шыв юхать.

Йывăç çинче шăнкăрчсем
çунат çапса юрлаççĕ.
Хĕпĕртенĕ ачасем
вăй выляççĕ, шавлаççĕ.

Ĕнтĕркенĕ йывăçсем
куçĕсене уçаççĕ.
Вĕсен çамрăк кăчкисем
ырă шăршă сараççĕ.

Урам тăрăх ачасем
Хĕпĕртесе чупаççĕ.
Аллисенче кĕреçесем—
шывсем уçса яраççĕ.

Илемлĕ çав çуркунне,
ăна пурте саваççĕ.
Ларас килмест ман пӳртре
çак илемлĕ кунсенче.

## Вăрман усси.

Пит аван-çке вăрманта. Çуллахи шăрăх кун симĕс йывăçсен сулхăнĕсенче кам канса курман пулĕ?

Сывлăш уçă, таса, сывлама çăмăл, кăкăра уçăлтарсах ярать. Епле юратас мар вăрмана!

Йывăç этеме мĕн чухлĕ усă панине шутласа та пĕтерес çук. Пур çĕрте те йывăç этеме пулăшать. Йĕри-тавра çавăрăнса пăхăр-ха. Акă çуртсем лараççĕ— вĕсене йывăçран тунă. Чул çуртсенче те маччисене, урайсене, каштисене йывăçран тунă.

Çуртри тĕрлĕ япаласене—пукансене, сĕтелсене, шкафсене йывăçранах тунă.

Пысăк шывсем çинче йывăç пароходсем, баржăсем ишсе çӳреççĕ. Телеграф пралукĕсем йывăç юпасем çинче тытăнса тăраççĕ. Чугун çул рельсĕсене йывăç шпалсем çине сараççĕ.

Хĕллехи сивĕ çанталăкра çынсем пӳртсене вутă хутса ăшăтаççĕ. Апат та вутăпах пĕçереççĕ.

Колхозниксем урапана тикĕт сĕреççĕ. Тикĕте те йывăçранах кăлараççĕ.

Сирӗн ҫырас килет. Эсир алла йывӑҫ ручка тытатӑр. Унтан хут илетӗр. Эсир ҫыракан хута та йывӑҫранах тунӑ.

Йывӑҫ фабрикӑсем, заводсем тунӑ ҫӗре те каять. Йывӑҫ ҫук пулсан, пире хамӑр пурӑнӑҫа юсама, ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тума питех те йывӑр пулӗччӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, йывӑҫ пире чи кирлӗ япала. Ҫавӑнпа та ӳсекен йывӑҫа мӗн пур майсемпе сыхлас пулать. Ӑна кирлӗ таран анчах касас пулать.

Кайӑксем — йывӑҫсен тусӗсем. Вӗсем йывӑҫсене сиен тӑвакан тӗрлӗ хурт-кӑпшанкӑсене пӗтереҫҫӗ. Усӑллӑ кайӑксене тытса пӗтерме кирлӗ мар.

## Шыв тумламӗ.

### I.

Вӗҫӗ-хӗррисӗр сарлака тинӗсре, хӗвел ҫинче йӑлтӑртатса, шыв тумламӗсем питӗ нумайӑн ишсе ҫӳренӗ. Ҫавӑн пек пӗр шыв тумламӗ тинӗсре хумсем хушшинче нумайччен ярӑнса ҫӳренӗ.

Акӑ пӗрре хӗвел ҫутӑлса тухнӑ та шыв тумламӗ ҫине ӑшшӑн пӑхнӑ. Шыв тумламӗ ӑшӑнса пӑс пулнӑ та ҫӳлелле улӑхса кайнӑ. Унпа пӗрле ҫӳлте урӑх шыв тумламӗсем те питӗ нумай вӗҫсе ҫӳренӗ. Ҫӳлтен вӗсем хӑйсен тинӗсӗ тем пысӑкӑш сарӑлса выртнине курнӑ; тӗрлӗрен хуласем, ялсем, уйсем, вӑрмансем тӗлӗнчен иртсе кайнӑ вӗсем.

### II.

Пӗрре вӗсем, ҫавӑн пек вӗҫсе ҫӳренӗ чух, шӑннӑ та, пӑсран каллех шыв пулса, ҫӗрелле анма пуҫланӑ. Акӑ вӗсем анса ҫитнӗ те курӑксем ҫине, йывӑҫсем ҫине ларнӑ. Пирӗн шыв тумламӗ пӗр чечек ҫине лекнӗ. Кӑваккӑн-симӗссӗн йӑлкӑшса, вӑл ҫӗрӗпех чечеке илӗртсе ларнӑ. Ҫынсем вара ирпе тӑрсан: кӗҫӗр сывлӑм ӳкнӗ, тенӗ.

Ирпе хěвел тухса хăпарсан, каллех вăл пăс пулса çěкленнě те малалла вěçсе кайнă. Çул çинче вăл, урăх шыв тумламěсене хуса çитсе, вěсемпе пěрлешнě. Вěçнěçемěн вěсем йышланса пынă. Кайран вěсенчен пăхма хăрушă çумăр пěлěчě пулса кайнă. Унтан çиçěмě, темиçе хуçăк пулса, куç хупса иличчен йалт-ялт çиçсе илнě. Пирěн шыв тумламěнчен пулнă пăс, каллех шыв пулса, васкаса çěр çине татăлса аннă. Ун хыççăн ытти шыв тумламěсем те çěр çине пăт-пат! пăт-пат! татăлса ана пуçланă, унтан йăвăран йăвă ўксе пынă, вара çўпçерен янă пек çумăр çунă. Çынсем çакна курсан: ай-ай! çумăр вăйлă çăвать, тенě. Шыв тумламě чул çине персе аннă. Ыратнипе ним тума пěлмесěр пăлтăр-палтăр кусса аннă, ытти шыв тумламěсемпе пěрлешсе, лакăм тăрăх кěрлесе çырмана юхса аннă. Кайнăçемěн лăпланнă, çырма тăрăх хуллентен хуллен шуса пынă. Шыв тумламě пěр ял тěлне çитсен, пěр хěрарăм çырмана шыв ăсма аннă. Хайхи пирěн шыв тумламě арăм витрине лекнě. Килне çитнě те арăм шывěпе пир йěпетсе, симěс курăк çине шуратма сарса пăрахнă. Шыв тумламě хěвелпе ăшăннă та, каллех пăс пулса, çиле майлă вăшкăртнă. Çил ăна хыçалтан хăваласа пынă.

Вěçсен-вěçсен, пěр сарлака тўрем вырăн шуррăн курăнса выртнă тěле çитнě. Ун чухне кунта хěл пулнă, пěтěм çěре юр витсе лартнă. Кунта çитсен, шыв тумламě шăнса ларма пуçланă; кăштах тăрсан, тěлěнмелле кěмěл пек йăлкăшакан çăлтăр пулса тăнă. Çавăн пек çăлтăрсем пинě-пинěпе, миллионě-миллионěпе çěр çине тăкăна пуçланă. Çакна курсан, çынсем: юр çума тапратрě-ха, тенě. Пирěн тумламран пулнă çăлтăр та çуталса çěр çине анса выртнă, хăйěн юлташěсемпе пěрле çывăрса кайнă. Кăнтăрла вěсем, хěвел пăхнă чух, вутăн-хěмěн йăлкăшнă, каçпа уйăхăн сивě çутти çинче хаклă йышши чул пек йăл-йăл çунса выртнă. Шыв тумламě унта çур çул патнелле выртнă.

Ерипенех хěвел çўлелле улăхса пынă. Çурхи

çил ăшшăн вĕрнĕ. Шыв тумламĕ ыйăхĕнчен вăраннă та, шыв пулса, варсем тăрăх вĕçтернĕ.

Юханшывсем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе кайнăçемĕн пысăкланса пынă. Акă вĕсен умĕнче пысăк çырма курăннă. Çакă Атăл пулнă. Хайхи пирĕн шыв тумламĕ Атăла юхса кĕнĕ. Вăрмансем, уйсем, улăхсем хушшипе Каспий тинĕсĕ патнелле юхса кайнă. Хыçалта темле хуласем те, ялсем те ларса юлнă. Кайсан-кайсан, тинĕс хумĕсем тĕл пулнă. Шывĕ тинĕсĕн йӳçĕ тăварлă пулнă. Çапла пирĕн шыв тумламĕ, çавăрăнсан-çавăрăнсан, каллех тăван çĕршыва çитнĕ.

**Туппине пĕл:**

*Чупса-чупса пынă чух*
*кĕмĕл çĕрĕ тухрĕ ӳкрĕ,*
*ăна уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.*

## Шăнкăрч килни.

Матви мучи кĕлет умĕнче хăма татăкĕсене майла-майла шаклаттарса ларать; вăл шăнкăрч валли йăва хатĕрлет. Ачасем ун патĕнче, вăл ĕçленине ытараймасăр, пăхса тăраççĕ.



— Мĕн тăватăн эсĕ, мучи?

— Пĕчĕк тусăмсем валли çурт тăвас тетĕп.

— Мĕнле пĕчĕк туссем валли, мучи?

— Савнă тусăмсем валли — шăнкăрчсем валли эппин.

Март уйăхĕнче ирпеле сивĕ пулкалать. Çавăн пек кунсенче уяр ирхине ăшăнса шăннă юр пĕрчисем вутăн та хĕмĕн йăлкăшаççĕ. Илюш вылямa тесе ура-

малла чупса тухать. Унта вăл йăмра çинче шăнкăрч ларнине курать те хĕпĕртесе каять: „Асатте, асанне, пăх-ха, шăнкăрч килнĕ!“ — тесе кăшкăрма тапратать. Унăн аслашшĕ — Матви мучи урама тухать. Ачасем те унта чылай пухăннă. Матви мучи туса лартнă шăнкăрч вĕлли патĕнче, турат çинче, пĕр шăнкăрч, çунаттисене çапса, юрласа ларать. Çакна курсан, Матви старик: „Акă, ачасем, эпĕ ĕçлени сая каймарĕ, куратăр-и, — хай шăнкăрч тус çитсе те ларнă“, — терĕ.

## Шăнкăрч усă кӳни.

Шăнкăрч пек усă кӳрекен кайăк çук та: вăл пахча-çимĕçсене, тырпула сĕтăр тăвакан хурт-кăпшанкăсене пит нумай пĕтерет Шăнкăрч çулла тĕрлĕ кăпшанкăсене, лĕпĕшсене, пуринчен ытла тачка та йăпăлкка хуртсене тытса тăранса пурăнать. Пĕр вĕреннĕ çын, шăнкăрчсем мĕнле пурăннине темиçе çул сăнаса, пĕр шăнкăрч çемьи пĕр кунта мĕн чухлĕ хурт-кăпшанкă пĕтернине шутласа кăларнă. Вăл шутланă тăрăх, пĕр шăнкăрч çемьи (2 шăнкăрч та 5 чĕпĕ) кашни кунах çулла 360 хурта яхăн пĕтерет.

Акă сухаласа пăрахнă ана тăрăх шăнкăрч йăпăр-йăпăр утса пырать, пуçне чиксе йăпăрт сăхса илет, пĕр еннелле пăхать, тепĕр еннелле пăхать. Пур лакăм-тĕкĕмсене, шăтăк-çурăксене, курăк айĕсене — пур çĕре те сăмсипе тăк-тăк сăхса ухтарать. Куç тĕлне пулманнине сăмсипе шыраса тупать.

Шăнкăрч тепĕр чух пулса çитнĕ тутлă сĕткенлĕ çырласене тапăнать. Çапах та пахчаçăсем шăнкăрчсене сивĕтме тăрăшмаççĕ, ытла аптăратса çитерсен анчах хăратса яраççĕ.

---

Шăнкăрч мĕн çисе пурăнать? Ами çăмартисене хăçан тăвать? Шăнкăрч хăçан юрлама пăрахать? Хăçан кăнтăр енне вĕçсе каять?

# Тăри.

Тăри пирĕн пата ăшă енчен юр ирĕле пуçласан вĕççе килет. Вăл, вĕççе килсенех, юрлама тытăнать те ыраш пулса çитме пуçланă вăхăталла тин юрлама пăрахать. Шурăмпуç кăшт палăрсанах, тăри хăйĕн уçă юррине янратса ярать, çуначĕсене сарса, çӳлĕрен çӳле улăхать. Юлашкинчен ирхи пĕлĕт ăшĕнче куçа кӳрăнми пулать. Вăл шăрантарса юрлани унтан та питĕ лайăх илтĕнет. Хăш чух тата, сарса пăрахнă çуначĕсене чĕтретсе, вăл пĕр вырăнта тăр-тăр-тăр тă-ăр! юрласа тăрать. Кайран хăй хăпарнă вырăн тĕлне çавăрăнса çитет те ерипен анма пуçлать. Унтан, çуначĕсене пăчăртаса, çĕрелле чул пек персе анать. Çĕре çитеспе çуначĕсене каллех сарса, хăйĕн йăви патнех анса ларать.

Йăвине тăри, юр ирĕлсе пĕтсен, анасем çине е улăха лачакасем хĕррине, тĕмескесем çине тăвать. Йăва тума пĕчĕк лакăмсем шыраса тупать, е хăех тĕмескесем çине чавать, ăшне пуш пучахсем, курăк тымарĕсем, ут хĕлĕхĕсем сарать, йăвине тĕплех тумасть. Йăвине туса çитерсен, тăри ами 5—6 çăмарта туса хурать. Çăмартисем шупка-хĕрлĕ е симĕсрех сарă, пăч-пăч ула. Аçипе ами, пĕр-пĕринпе ылмашăнса, икĕ эрне лараççĕ. Икĕ эрнерен чĕпписем тухаççĕ. Тăри уйри хурт-кăпшанкăсене пуçтарса тăранса пурăнать, тата çуркунне, хурт-кăпшанкăсене тупайман вăхăтра, курăк е калча хунавне çиет.

# Кайăк ĕçĕ.

Кайăк пирĕн пӳрт çумне
йăва тума тытăнать.
Улăм пĕрчи, мамăк, тĕк
сăмсипеле вăл йăтать,
хăйĕн чĕпписем валли
ăшă йăва çавăрать.
Тул çутăлнă вăхăтра
кайăк ĕçе тытăнать.
Кунĕпеле вăл ĕçлет,
юрă юрлать, савăнать.
Хĕвел ансан, сивĕтсен,
шывран шур пăс хăпарсан,
кайăк тусăм ывăнать,
юрлама та чарăнать.
Тепĕр кунне ирхине
каллех пуçлать юррине.
Савăнăçлă юрласа,
пӳртне туса çитерет.




## Май уявĕ.

Уçă саслăн,
пит хаваслăн
комсомол юрри янрать.
Ялан хатĕр,
пит те паттăр
пионер хыçран пырать.
Эх, ялавĕ,
Май уявĕ,
рупор тытнă ман аппа.

Пăнтăр-пăнтăр!
пăнтăртатрĕ,
тăнкăртатрĕ параппан.
Вĕçĕ-хĕррисĕр,
ним таттисĕр
пур ĕçхалăх урамра.
Пит те чаплă
Май хаваслă—
эпир пурте уявра.

**Пĕтĕм тĕнчери рабочисен праçникĕ—**
**Май уявĕ сывă пултăр!**

## Май уявĕ патша вăхăтĕнче.

Урам кĕтессинчен пăрăннă çĕрте, пĕчĕк тăкăрлăкра, пĕр çĕр çын пухăнса тăнă. Халăх умĕнче Весовщиков сасси янраса тăрать.

— Пирĕн юна, кĕтмел шывне чăмăртаса юхтарса кăларнă пекех, ĕмсе тăраççĕ!

— Тĕрĕс! — тесе янраса кайрĕ темиçе сасă харăс.

— Тăрăшать, маттур, — терĕ Андрей. — Ну-ка, эпĕ те кайса пулăшам ăна!

Вăл сăмах пуçласа ячĕ:

— Юлташсем! Çĕр çинче тĕрлĕ халăхсем пурăнаççĕ теççĕ: еврейсем, нимĕçсем, англичансем, тутарсем... Эпĕ ăна ĕненместĕп. Икĕ халăх, икĕ пĕр-пĕринпе килĕштерейменн йăх анчах пур — пуянсем тата чухăнсем! Çынсем тĕрлĕ тумланаççĕ, тĕрлĕ калаçаççĕ! Анчах, пăхăр-ха: çав пуян французсем, нимĕçсем,



англичансем рабочи халăха мĕн вырăнне хураççĕ? Пурте вĕсем рабочишĕн — тăшмансем, шăмă ларасчĕ пырĕсене!

Халăх хушшинче тахăшĕ кулса ячĕ.

— Тепĕр енчен пырса пăхсан, француз рабочи те, тутар та, турок та, çав пирĕн вырăс рабочи халăхĕ пекех, йытă пурăнăçĕпе пурăннине куратпăр!

Урам енчен халăх нумайран нумай пыра-пыра тăра пуçларĕ, çынсем пĕрин хыççăн тепри шарламасăр, майĕсене тăсса, чĕрне вĕççĕн тăрса, калакан еннелле туртăнаççĕ, тăкăрлăкалла хĕсĕнсе кĕреççĕ.

— Полици! тесе кăшкăрса ячĕ тахăшĕ.

Урамран тăкăрлăкалла, çынсем çине, тӳрех тăватă утлă полици, саламачĕсемпе сулкаласа, вĕçтерсе пыраççĕ.

— Саланăр! — кăшкăраççĕ вĕсем.

Çынсем тарăхса, пăрăнас килмесĕрех, лашасене çул уçса параççĕ. Хăшĕсем хўме çине хăпара-хăпара каяççĕ, мăшкăласа тăрăхлани илтĕнет.

— Сыснасене лашасем çине лартнă та, нăриклетеççĕ: эпир те çар пуçлăхĕсем, теççĕ пуль! — тесе янрать тахăшĕн уçă сасси.

Андрей урам варрине пĕчченех тăрса юлчĕ, ун çинелле икĕ лаша вăркăнса пыраççĕ.

## Тухăр, тухăр уява.

Хĕвел тухрĕ хĕрелсе,
ылттăн хĕмне сирпĕтсе.
Вăрмансенче, садсенче,
тĕрлĕ чечек хушшинче,
саркайăксем; шăпчăксем
шăрataççĕ юрăсем.
Ай-ай кунĕ пит аван! —
Тухăр, тухăр уява!
Тухăр чаплă тумланса.
Хĕрлĕ ялавсем йăтса,
урамсем тăрăх каяр,
савăк юрăсем юрлар;
юрă кайтăр ян та ян,
Майăн 1-мĕш паян.
Юрă çиттĕр Мускава
илсе пирĕн салама.
Мухтав — аслă Сталина
ачасене савнăшăн.
Мухтав аслă Сталина
пире телей панăшăн.

## Пĕчĕк чурасем.

Пĕчĕк Гуйчи-сан çичĕ çулхи ача. Хăйĕн кĕске пурăнăçĕнче вăл нумай хĕн-хур курнă. Выçă ларни, вĕçĕмсĕр куççуль юхтарни ача чĕрине сахал мар ыраттарнă.

Ашшĕ, япони хресченĕ, кăвак шуçăм килсенех ĕçлеме тытăнса, тĕттĕм каç пуличченех ĕçленĕ. Анчах, çапла нумай тар юхтарса ĕçлесен те, киле пĕр чĕптĕм рис çеç илсе килме пултарнă.

Халĕ тата пĕчĕк те лапчăк пўртре пысăк хуйхă пулнă. Гуйчи-сан ашшĕ чирленĕ. Вăл темиçе кун ĕнтĕ вырăн çинче выртать. Килте пĕр рис пĕрчи те юлман.

Куççулĕсене шăлса, Гуйчи-сана пуçĕнчен ачашласа, амăшĕ çапла каланă:

— Юратнӑ хӗрӗм. Пире тӑрантарса усрама эсӗ анчах пултаратӑн, санӑн ӗнтӗ ӗҫлеме кайма вӑхӑт.

...Тепӗр кунне Гуйчи-сан амӑшӗ, завод хуҫи умӗнче йӑваланса, хӑйӗн ҫичӗ ҫулхи хӗрне завода ӗҫлеме илме йӑлӑннӑ.

* * *

Йывӑр сывлӑшпа пӑчӑхса, Гуйчи-сан пурҫӑн заводӗнче ӗҫленӗ. Ӗҫлеме вӑй нумай кирлӗ пулнӑ.

Вуникӗ сехет ӗҫленӗ хыҫҫӑн, Гуйчи-сан, питӗ вӑйран кайса, ури ҫинче аран-аран тӑма пултарнӑ. Выртса тӑма, пӗр ытам улӑм куписӗр пуҫне, нимӗн те пулман.

Вӑй ҫитмен ӗҫе куҫҫулӗпе, халран кайса ӗҫлесе, японец ачисем питӗ сахал ӗҫлесе илеҫҫӗ. Вӗсем, хӑйсен пӗчӗк йӑмӑкӗсемпе шӑлнӗсем выҫӑ ан вилчӗр тесе, тӑрӑшаҫҫӗ.

## Пӗчӗк Хозе.

### I.

Хозе хӑй ашшӗ патне, отряда кайма хатӗрленнӗ. Вӑл амӑшӗнчен хӗрлӗ тутӑр илнӗ те ун ӑшне табак тата ҫӑкӑр хурса ҫыхма тытӑннӑ.

— Табакне ытларах илсе каймалла, — тенӗ вӑл. — Эсӗ анне фронтра мӗнлине пӗртте пӗлместӗн. Унта, пӗрин пулсан, пурне те валеҫсе памалла! Пурне те пӗр пек тивтӗр.

Амӑшӗ ывӑлне ыталанӑ та ачашшӑн чуптуса илнӗ.

— Асту, ывӑлӑм, хӑвна сыхла.

— Юрӗ.

Хозе амӑшӗ аллинчен вӗҫерӗннӗ те урамалла чупнӑ. Таҫта пӑшалпа харӑссӑн пенӗ сасӑсем янӑранӑ. Пысӑк шурӑ ҫурт ҫумӗн решеткепе тытнӑ темӗн пысӑкӑш сад тӑсӑлса ларнӑ. Хозе чарӑннӑ. Садра пӗр сас-чӗвӗ те илтӗнмен. Йывӑҫсем ҫинче, вӗсем айӗнче те, сарӑрах хӗрлӗ апельсинсем курӑннӑ. Хозе хапха

витĕр сада кĕнĕ: „хуралçăран ыйтам-ха, апельсинсене боецсем валли пуçтарса кайма юрать-ши?“ тенĕ вăл.

Йывăççем хушшинче пахчаçă кĕлетки курăнса кайнă. Хозе ун патне пынă та ыйтнă.

— Ил, ил, апельсинсем пурпĕрех сая каяççĕ,— тенĕ ăна пахчаçă.

Хозе хавасланса кайнă, апельсинсене васкаса пухма тытăннă.

— Хуçисем ăçта вара?

— Тăшмансем патне тарнă,—тенĕ старик, аллине сулса. Ил, халь ку йăлтах пирĕн!

Хозе тутăр ăшне апельсинсене туллиех тултарнă та, хуралçăпа сывпуллашса, садран тухнă.

II.

Отряда çитмешкĕн унăн чылай утма тивнĕ.

Пысăк чулсем хыçĕнчен ăна хирĕç икĕ дружинник сиксе тухнă.

— Кам унта?—хаяррăн кăшкăрнă дружинниксем.

Хозе хăйĕн хĕрлĕ çыххине çĕкленĕ.

— Эпĕ вăл, Хозе, сирĕн боецăн Фердинандăн ывăлĕ. Эпĕ сирĕн валли çимĕççем... тата табак илсе килтĕм!

— Табак?!—хавасланса кăшкăрнă дружинниксем.—Маттур, Хозе! Пăшалсем пемен вăхăтра аçу патне часрах чуп.

Отрядра пĕчĕк Хозене лайăх пĕлнĕ. Дружинниксем цепь тăрăх пĕрне-пĕри калама пуçланă.

— Фердинандо? Ăçта Фердинандо? Унăн ывăлĕ килнĕ.

Фердинандо винтовкине хунă та, ывăлне ыталаса илсе, хăй çумне лартнă.

— Мĕнле хыпарсем пур?

— Акă çăкăр тата апельсинсем. Тата табак!—хавасланса каланă Хозе.—Атте, эпĕ вăрманта тăшмансем икĕ самолётне куртăм. Тата унта бензин пит нумай, склачĕпех.

— Чим-ха! — тенĕ ашшĕ. — Кун çинчен мĕншĕн халиччен каласа пĕлтермерĕн? Хăвах куртăн-и?

— Хамах. Вăрманта.

Ашшĕ ывăлне аллинчен тытнă:

— Командир патне каяр-ха.

— Мĕн каласа пĕлтермелли пур? — ыйтнă ачаран командир.

Хозе хăй вăрманта мĕн курнине каласа панă.

Командир картă илнĕ те ун тăрăх пӳрнипе шутарма пуçланă.

— Акă вăрман, акă пĕчĕк шыв. Эсĕ курнă вырăн ăçтарах, кăтарт-ха.

Хозе картă çинчи симĕс, сарă вырăнсем çине, кĕске йĕрсемпе çаврашкасем çине пăхса илнĕ. Унтан, пуçне усса:

— Эпĕ картă çинче кăтартма пĕлейместĕп, ахаль кăтартса парăп. Лётчикпа юнашар ларăп та кăтартăп, — тенĕ.

— Хăрамастăн-и? — ыйтнă командир.

— Эсир уншăн ан шикленĕр, командир юлташ, — сăмах хушнă Фердинандо. Ывăлне вăл ырхан çурăмĕнчен мăнаçлăн лăпкаса илнĕ.

III.

Хăйĕн ĕмĕрĕнче Хозе пирвайхи хут самолёт çине ларса вĕçнĕ. Вăл лётчикпа юнашар ларса пынă, аялалла тинкерсе пăхнă. Лётчик унтан ыйтнă:

— Çырма пĕлетĕн-и? (Хозе, пуçне сулса, çырма пĕлнине пĕлтернĕ.) Акă сана хутпа карандаш. Эсĕ мана ăçталла вĕçмеллине çырса пĕлтерсе пыр.

Аялта пĕчĕк çуртсем, сарă лентă пек курăнакан çул, кăвак çип пек курăнса выртакан шыв каялла юлса пынă. Акă тата симĕс тĕслĕ, шăрт пекскер курăннă — ку вăрман. Хозе çырса панă: „Сылтăмалла тыт“, самолёт сылтăмалла кăшт тайăлнă та пысăк шур çурт еннелле çаврăннă. Каллех вăрман çийĕпе вĕçнĕ. „Халь

сулахаялларах“,—çырса панă Хозе. Самолёт сулахаялла пăраннă. Юлашкинчен малта, симĕс вăрман хушшинче, темĕн шурăскер курăнса кайнă. „Тӳрех, тӳрех пыр“,—çырса панă Хозе. Часах лётчик та тăшмансен самолёчĕсене, бензин тиенĕ грузовикĕсене асăрханă.

Самолёт хытăрах кĕрлеме тытăннă, аяларах аннă, унтан вăрман çийĕпе çавăрăнма тытăннă. Тăшмансем, кăткăсем пек, чупкалама пуçланă. Лётчик бомба пăрахмалли ручкăна туртнă, тепĕр секундăран аялта кĕрĕслетнĕ сасă илтĕннĕ. Вăрман уçланки çинчен çӳлелле хура тĕтĕм тем пысăкăш юпасем пулса улăхнă. Грузовиксемпе самолётсене хĕрлĕ çулăм хыпса илнĕ. Хозе шăп пулса ларнă. Лётчик ун еннелле пуçне сулса илнĕ те йăл кулнă.

Самолёт пит хăвăрттăн каялла вĕçнĕ. Часах аялта, ту çурăкĕсемпе чечеклĕ ращасем хушшинче, штабăн шурă çурчĕ курăнса кайнă.

— Салют, Хозе, салют!—кăшкăрнă дружинниксем, ачана самолётран тухма пулăшса.

## Саша Жуков.

Лăпкă та именекентерехскер, вăл пирĕн патăмăра пычĕ те:

— Мана илĕр хăвăрпа пĕрле,—терĕ. Унтан, нимĕн чĕнмесĕр кăштах тăчĕ те, кĕлетке йывăрăшне пĕр ура çинчен теприне куçарнă хыççăн, лăпкăн, анчах та хăюллăраххăн çине тăрса:—илĕр, нимĕçсене шаккама пулăшăп,—терĕ.

Пирĕн капитан Новиков юлташ ун çине пăхса илчĕ те:

— Эсĕ халĕ пĕчĕккĕ-ха,—терĕ иккĕленерех. Анчах ача каймасть. Темĕн каласассăн та вăл кунтан каяс çукки паллах. Хăйне йышăнасса шансах тăрать. Çавăнпа та капитан кăмăлĕ çаврăнчĕ.—Ну, юрĕ, юл пирĕн пата халлĕхе,—терĕ вăл йăвашшăн.

Саша Жуков юлчĕ вара пирĕн пата. Кайран эпир вăл кам иккенне тата кунта епле лекнине пĕлтĕмĕр.

Саша çуралса ӳснĕ яла нимĕçсем туртса илнĕ. Ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскерсем вĕсем унта тискер выльăхсем пек пырса кĕнĕ те халăха сарайне хăваласа хупнă. Унта Саша тата унăн ашшĕпе пиччĕшĕ пулнă. Амă-



шĕпе йăмăкĕ унччenex ялтан тухса тарнă. Вĕсем кӳршĕри вăрманта партизансен отрячĕпе пĕрлешнĕ, тетчĕç.

Саша нимĕçсем çавăрса илнĕ ялтан темле пулсассăн та вĕçерĕнсе тухма шут тытать.

Каçпа, часовойсем сисмен хушăра, вăл ялĕнчен йăпшăнса тухать те пытанкаласа тарать. Нумайччен вăл вăрманта çӳренĕ, амăшĕпе йăмăкне, партизансене шыранă. Анчах вĕсене ниепле те тупайман та пирĕн пата пынă. Çавăнтан вара вăл пирĕнпе пĕрле çӳрет. Питĕ разведкăна каясшăнччĕ

вара. Пĕрре вăл командира çавăрчĕ-çавăрчех хăй шухăшĕ енне. Сашăна тата Маруся ятлă медсестрана пысăк ĕç хушса ячĕç. Вĕсем иккĕшĕ, ял çынни пек тумланчĕç те, инçе те хăрушă çула тухса кайрĕç. Вĕсене тăшман тылне, чылай инçене, нимĕçсен туппи-пулемĕчĕсем хăш вырăнтине сăнаса пĕлме хушнă. Фашистсен артиллерине чарса лартас тесен, вĕсен снарячĕсем ăçтан вĕçсе килнине, вĕсеногневой точкисене тĕплĕн палăртмалла пулнă.

Пĕр кун иртрĕ — пирĕн разведчиксем çук. Иккĕмĕш кун та иртрĕ. Дивизионра Сашапа Маруся пирки шикленме пуçларĕç. Тепĕр ирхине шуçăмлах таврăнчĕç вĕсем. Иккĕшĕ те ывăннă, анчах хăйсем питĕ кăмăллă. Нимĕç батарейĕсем хăш вырăнтине Саша тĕплĕн те тĕрĕс кăтартса пачĕ.

Часах акă пирĕн инçене перекен артиллери вăйлăн та тимлĕн кĕрĕслеттерме тытăнчĕ. Тăшманăн огневой точкисене аркатса тăкрĕç.

Саша тата пĕрре çакăн пек ĕç туса килчĕ.

Вăл кўршĕри ялта пĕр сарайра нимĕçсен тăвată танкĕ ларни çинчен пĕлнĕ. Никама нимĕн каламасăр вăл тухса каять. Хăйпе пĕрле вăл çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем тата темиçе граната илет.

Ялта Саша хăйпе пĕрле шкулта вĕреннĕ Ваньăна тĕл пулать. Саша ăна хăй мĕн тума шут тытни çинчен каласа парать те, вĕсем иккĕшĕ пĕрле ку ĕçе ăнăçуллă майлама план туса хатĕрлеççĕ. Ваня, тавралла кайса, сарай патне тепĕр енчен пырса тухма килĕшнĕ, Саша тўрех часовой патнелле утнă.

— Мучи, перус туртма пар-ха.

— Урус, пĕчĕк урус, пĕчĕк эс.

— Эпĕ пысăккă ĕнтĕ, мучи, туртар-ха пĕрре пĕрле, — тенĕ Саша, пĕр хăрамасăр салтака антăратса тăнă. Акă сигаретка илсе чĕртнĕ те Саша, йўçĕ тĕтĕмпе чыхăна-чыхăна, салтака темĕн те пĕр çинчен каласа пакăлтатса тăнă. Лешĕ Ваня шуса пынине ан асăрхатăр тесе, вăл аллисемпе хыттăн сула-сула калаçнă.

Сасартăк темĕн кĕрĕслетсе çурăлса кайнă. Ваня сарай çине вăркăнтарнă бутылка пулнă иккен вăл. Часовой сарай патнелле чупса пынă, анчах кая пулнă. Сарай ялкăшса çунма пуçланă. Нимĕç танкĕсене вут хыпса илнĕ.

Сашăпа Ваня вăшт кăна пăраннă аяккалла, çуйхашнă-тăрмашнă хушăра лешсем вĕсене асăрхаман та.

---

Редактор: *Н. Т. Васянка.*

Объем 9 печатных листов, НТ 00658. Подписано к печати 29/VIII—1944 г. Заказ № 686. Тираж 15000 экз.

Тип. № 1. Упр. полигр. пром. при СНК ЧАССР. г. Чебоксары. Дом печати

2
ОТК

Цена 75 коп.

А. С. ОТАЧКИН

# КНИГА ДЛЯ ЧТЕНИЯ
# по
# РОДНОМУ ЯЗЫКУ

часть II

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР 1944
ЧЕБОКСАРЫ